№ 3012
VI-107



Н. К. КРУПСКАЯ

# СОЦИАЛИЗМ ÇĔРШЫВĔНЧИ ХĔРАРĂМ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ

ШУПАШКАР ◆ 1941

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

Обязательные
экземпляры в количестве ___
экземпляров
получены
14 марта 1941 г.
Подпись Степанова.

Н. К. КРУПСКАЯ

# СОЦИАЛИЗМ ÇĔРШЫВĔНЧИ ХĔРАРĂМ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР • 1941

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен мартăн 8-мĕш кунне уявлассине çинчен калакан постановление 1910 çулта йышăннă. Пирĕн Российăра мартăн 8-мĕш кунне чи малтан 1913 çулта уявланă, 25 çул ĕлĕкрех, ун чухне, реакцин йывăр çулĕсем хыççăн, рабочисен движенийĕ каллех çӳлелле хăпарса пынă. Мартăн 8-мĕш кунĕ яланхи пек пирĕн рабочисен движенийĕ пĕтĕмĕшпе епле пынине тата унăн умĕнче тăракан задачăсене палăртса тăнă.

Çак сборнике юлашки вунă çул хушшинче мартăн 8-мĕш кунне уявланă май çырнă статьясем кĕнĕ. Вĕсем юлашки çулсенче совет демократизмĕ ӳснине, хĕрарăм рабочисемпе хресчен массисен ăстăнлăхĕ тата вĕсен активлăхĕ ӳснине палăртса тăраççĕ.

Кăçал мартăн 8-мĕшĕнче совет хĕрарăмĕсем, пĕтĕм халăх сӳтсе-явнă Сталинла Конституци права панипе пурте Верховный Совета суйланă çĕре хутшăннăскерсем, пирĕн аслă тăван çĕршывăн тулли правallă гражданĕсем пулнине ĕçре туйса тăраççĕ; çак права пĕртанлăхĕ пирĕн пĕтĕм совет стройĕ ӳссе пынипе тата вăл çирĕпленнипе уйрăлми çыхăнса тăнине лайăх пĕлсе тăраççĕ. Халь ĕнтĕ вĕсем хăйсен ывăлĕсемпе тата тăванĕсемпе пĕрле, Хĕрлĕ Çарпа тата Хĕрлĕ Флотпа пĕрле хамăрăн аслă тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе социализмлă çĕршыв пулса çитнĕскере, халăх тăшманĕсене пĕтерме пултарнă тăван çĕршыва, юлашки тумлам юн юлмиччен нихçанхинчен те ытларах сыхлама хатĕр тăраççĕ.

Кăçал мартăн 8-мĕш кунĕ пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен халăх хушшинчи пĕршухăшлăхĕ паллипе, пĕтĕм çĕршывсенчи халăх фронтне çирĕплетес лозунгпа уявланса иртет.

Испанире тата Китайра тискер ĕç тăвакан, пĕтĕм тĕнчипе вăрçă тапратма тăрăшакан, пĕтĕм ĕçхалăхне ĕмĕрлĕхех империализмла чуралăха сăнчăрлама тăрăшакан, хĕрарăмсене тата вĕсен ачисене ĕмĕрлĕхех чурасем тума тăрăшакан, коммунизм ялавне чĕрсе антарса, пылчăк ăшне таптаса кĕртме тăрăшакан тăшмана курайманлăх кăçал пирĕн хĕрарăмсене пĕтĕм тĕнчери ĕçхĕрарăмĕсемпе çыхăнтарать.

Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем Испанире Долорес Ибаррури ертсе пынипе империализма хирĕç геройла кĕрешекен хĕрарăмсене Китайри тата ытти çĕршывсенчи героинясене хĕрӳллĕ юратупа юратса асăнĕç.

Пирĕн, социализм çĕнтернĕ çĕршыври хĕрарăмсем, Ленин хушнипе тата Сталин юлташ кăтартăвĕсемпе пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен халăх хушшинчи пĕршухăшлăхĕн ялавне çӳлерех те çӳлерех çĕклес тесе, хăйсем мĕн тума пултарнине пурне те тăвĕç.

*Н. К. Крупская*

*1938 ç. февралĕн 19-мĕшĕ*

## СОЦИАЛИЗМ СТРОИТЕЛЬСТВИН ÇУЛĔСЕМ [1]

*„ССР Союзĕнче хĕрарăма пĕтĕм хуçалăх, государство, культура тата обществопа политика пурнăçĕнче арçынпа пĕртан правасем панă".*

***Сталинла Конституцин 122-ш ст.***

Ильич кирек хăçан та конкретлă условисене хисепе илме пĕлнипе, çывăхри задачăсене шыраса тупассипе уйрăлса тăратчĕ. 1921 çулхи август уйăхĕнче тата вăл çапла чĕнсе каланăччĕ: „Хальхи вăхăтăн хăйнеевĕрлĕхĕпе ун задачисене ăнланса илме пулăшакан практикăллă кирлĕ ĕçе тытăнар! Пуш сăмахсем мар, ĕç кирлĕ пире.

Çав хăйнеевĕрлĕхе тата чăнлăха лайăх учета илни кирлĕ, фантазилле класс вăйĕсем мар..." (*Ленин,* XXVII т., 10 стр.).

Ун чух Ильич пĕтĕм ĕç валли тата тарăнрах „никĕслĕх", çапла калама юрать пулсан, кирли çинчен каланă.

Вăл каланă: „Пролетариатăн вăрçă, администраци, пĕтĕмĕшлĕ политика творчестви облаçĕнче ку таранччен тĕнче курман çитĕнӳсен тапхăрĕ хыççăн ăнсăртран мар, пурпĕрех пулмалла, çынсене партисен айăпĕпе мар, об'ективлă сăлтавсем пирки, çĕнĕ вăйсен тата ытларах хуллен ӳссе пымалли тапхăрĕ çитрĕ". (*Ленин,* XXVII т., 10 стр.).

Çулталăк иртсен, 1922 çулхи апрельте, партин XI с'ездĕнче Ильич çапла каланă: „Мĕн пурĕ кирли те халĕ, калама çук сарлака тата вăйлă массăпа, хресченсемпе пĕрле, урăхла мар, малалла каяссинче; эпир хресченсене пулăшма, вĕсене малалла ертсе пыма вĕренсе пынине тата вĕренсе çитессине ĕçпе, практикăпа, опытпа кăтартса памалла. Çакăн пек задача, хальхи вăхăтра пĕтĕм тĕнчери мĕнле положение кура, Российăн хальхи вăхăтри производство вăйĕсем мĕнле тăнине кура, питĕ те ерипен, сыхланса, тĕплĕ туса, хамăрăн кашни утăма практика тĕлĕшĕнчен пин хут тĕрĕслесе пăхса кăна пурнăçа кĕртме пулать". (*Ленин,* XXVII т., 272 стр.).

---

[1] 1927 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнче тухнă „Правда" хаçатра пичетленнĕ.

XI с‘езд пулса иртнĕренпе пилĕк çул çурă иртрĕ. Çак çулсенче парти Ильич кăтартнă çулпа, Совет влаçĕн пĕтĕм ĕçне тата ытларах никĕслентерекен çулпа, массăсене социализм строительстви ĕçне тата ытларах хутшăнтаракан çулпа пычĕ.

Çак çула уççăн Ильич кăтартса панă.

Пăхар-ха, мĕнле çитĕнӳсем тунă эпир?

Нумай та пулмасть ялсовечĕсен, вулĕçтăвкомсен тата хула совечĕсен членĕсем пулса ĕçлекен работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсен Пĕтĕм Союзри с‘езчĕ пулса иртрĕ.

Акă çак с‘езд пирĕн ĕç мĕн чухлĕ никĕсленсе тăнине, сарлака массăсене çĕнĕ йĕрке тăвас ĕçре мĕн чухлĕ хутшăнтарма май килнине тĕрĕслекен с‘езд пулчĕ.

Чи малтанах с‘ездра паллă пулни вăл—тухса калаçакан делегаткăсемпе хресчен хĕрарăмĕсен чĕлхи улăшăнни. Ик-виç çул ĕлĕкрех работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсем çакăн пек чĕлхепе калаçман. Вăл хăйнеевĕрлĕхне кăшт та çухатман, анчах вăл чĕлхене нумай çĕнĕ ăнланусемпе çĕнĕ сăмах çаврăмĕсем кĕнĕ. Тĕрлĕ республикăсенчен пуçтарăннă хресчен хĕрарăмĕсем —чухăн пулнă çынсем тата батрачкăсем, работницăсем—шахтеркăсем, текстильщицăсем, рыбачкăсем пурин çинчен те хăюллă тата пĕр пытармасăр тӳрех—начарри çинчен те, лайăххи çинчен те тухса калаççĕ,—пуçĕсене тутăрсем çыхнă, аллисем хытса кушăркаса кайнă, хăйсем планлăх çинчен, план календарлăхĕ çинчен, мĕн-мĕн çине налог хурасси çинчен, практикăлла ĕç çинчен, президиума çӳресси çинчен, çĕрĕç инвентарĕ çинчен, выдвижени условийĕсем çинчен, бюрократизмпа тата волокитăпа кĕрешесси çинчен, пахалăха лайăхлатасси çинчен, контроль çинчен, дефицит çинчен тата ыттисем çинчен те туха-туха калаççĕ.

Ăçтан тупăннă ку чĕлхе? Эпĕ çак сăмах çаврăмĕсене çыра-çыра лартăм. Рыбачка хăй икĕ çул каярах „а“ саспаллине пĕлменни çинчен каласа кăтартать, халĕ вăл литература, совет чĕлхипе калаçать; 18 çул шахтăра ĕçлесе иртттернĕ хĕрарăм та, тата хăйне хăй „тĕксĕм бутылка“ теекен батрачка та ун пекех калаçаççĕ. Çакăн пек чĕлхепех калаçнине эпĕ нумай пулмасть Брянскпа Ленинград хулисенчи работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсем патĕнче илтрĕм.

Ăçтан тупăннă ку чĕлхе? Ку чĕлхепе собранисенче калаçаççĕ, хаçатсенче çыраççĕ, радио тăрăх калаççĕ. Культура тĕлĕшĕпчен ӳснине чĕлхе кирек мĕнле отчетран та ытларах кăтартса тăрать.

Работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсем мĕн çинчен каласа кăтартаççĕ? Малтан Ленинград çинчен каласа парам. Эпĕ пĕр ĕçлĕ заседанире çеç пултăм. Унта ĕçе епле лайăхлатасси çинчен калаçу пыратчĕ.

Делегатсен пĕр пайĕ çапла ӳпкелешрĕ: „хăйтĕллĕн ĕçлекенсене пулăшу çук“, тĕрĕс директивăсемпе тĕрĕс инструктаж çук, нумай чух аппарат хăй те вĕреитме пултараймасть, лите-

ратура кирлĕ, „аппарат хĕрарăм организаторĕ патне ярать, хĕрарăм организаторĕ пур ĕçпе те инструкцилеме пултараймасть", секретарьсем кама мĕнле ĕç çумне çыпăçтарма кирлине уйăрса илеймеççĕ т. ыт. „Капла пулсан, пиртен сахал усă пулать; правительство пирĕншĕн ахалех укçа тăкаклать, эпир „коллекци валли" суйланма килĕшместпĕр, пире чĕнччĕр кăна: эпир собранисене 20-шер çухрăма та çуран çÿреме хатĕр" т. ыт. Анчах „Треугольникрен" пынă пĕр работница хăйне вăхăтра повестка паманшăн тата ăна никам та инструкцилеменшĕн ÿпкелешме тытăнсан, çиленекен сасăсем хум пек çĕкленсе кайрĕç: „Намăс та мăшкăл, 17 пин çынлă заводра ĕçлетĕн, повестка кĕтсе тăратăн тата пĕлместĕн ăçта вĕçне тупмалла. Юлташсем, капла юрамасть", „нянькăсене кĕтес пулмасть", „фабрикăри тата заводри работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсене пулăшмалла",—„практикăллă ĕç тума ыйтмалла, хамăрăн кăна ĕçлемелле мар, ыттисене те хистемелле" т. ыт.

Юлашкинчен çаксене палăртса хучĕç: аялти органсем хресчен хĕрарăмĕсем çине пăхасси лайăхланчĕ, „Советра ĕçлеме кăмăл çĕкленет", „активлăх йĕркеленет".

Белоруссин ял хĕрарăмĕсем Пĕтĕм Союзри с'ездра ĕçпе кăтартасси çинчен, практикăллă ĕçре кăтартусем кирли çинчен, „упăшка юлташсен" ăстăнлăхсăрри çинчен, хресчен хĕрарăмĕсем работницăсем пек организациленменни çинчен, çавăнпа та вĕсем права пĕртанлăхне пурнăçа кĕртме пултарайманни çинчен, хресчен хĕрарăмĕсем, хăйсен ачисемпе суйлава пырса, „эпир государство строителĕсем пуласшăн" тени çинчен кала-кала кăтартрĕç.

Трибуна çинчен тухса калакансем, пурте чухăн хĕрарăмсемпе батрачкăсем. Вĕсен кĕрешмелли вăй çителĕклĕ. Витебск хулинчи батрачка тухса калать, вăл хăйне хăй „тĕксĕм бутылка" тесе ят парать, тата ăна хĕрарăмсем упăшкисене ÿпкелешнине илтес килми пулни тата йăлăхтарни çинчен калать. „Акă ĕнтĕ пирĕн ютçĕршыври юлташсем вăрттăн ĕçлеççĕ, эсир мĕн—упăшкăрсенчен хăратăр-им: мĕн вара, упăшкăр сире çакса вĕлерĕ-и е тĕрмене хупса лартĕ-и?" („Ĕлĕк аяк пĕрчисене çĕмĕрнĕ, халь хăяймасть",—тет ман кÿршĕ). „Унтан тата, çакна итлес килмест, —тет тухса калакан батрачка:—пар, пар! туса хур, туса хур! хамăр эпир вара мĕн?"

Делегаткăсем—пин çын ытла, хресчен хĕрарăмĕсенчен тухса калаканнисем чухăн хĕрарăмсемпе батрачкăсем анчах. Кулак хĕрарăмĕ тухса калаçма хăймасть—вăл Совет влаçĕ кулаксем майлă маррине пĕлсе тăрать тата ăна с'ездрисем пурте пĕлсе тăраççĕ,—вăл: „кулак тата чухăн" тенĕ сăмахсене пĕртте асăнма та кирлĕ марччĕ, вăл сăмахсенчен усал нумай тухать",—тесе алă пусмасăр хут анчах çырса парать.

Совет влаçĕ Октябрьте ĕççыннисен мĕнпур массине советсем тавра организацилеме, кашни çынна совещани урлă çĕнĕ

йӗркесем тăвас ӗçе хутшăнтарма палăртса хунă. Анчах кашни çынна советсен строительстви ӗçне хутшăнтарас ӗç патне тачах пырса тăма нумай çулсем кирлӗ пулчӗç.

Çакăн пек хутшăнтаракан органсем советсен секцийӗсем (комиссийӗсем) пулма тытăнни юлашки вăхăтра ытларах та ытларах палăра пуçларӗ. Сибирьтен килнӗ делегатка секцисенче ӗçлеме кулакла элементсем чăрмантараççӗ тесе каларӗ. Кулаксем: чухăн çынсемпе вăтам пурăнакансене секцисене ан пыччăр, секцисенче ан ӗçлеччӗр, тесе агитацилеççӗ. Ытти делегаткăсем чухăн çынсене секцисенче ӗçлеме хӗн, мӗншӗн тесен вăхăт нумай кирлӗ тесе каларӗç. Ку ӗç çинчен пӗтӗмпех тӗплӗн шухăшла малла-ха.

Делегаткăсен пӗтӗм масси партие кăмăллас тӗлӗшрен с'ездра пулнă юлташсенчен пӗри те иккӗленмест.

Тӗслӗхрен, самоедка тухса каларӗ, вăл никам ăнланман хăйӗн чӗлхипе калаçать, анчах ун чӗлхинче „коммунистсен партийӗ“, „пӗтӗм тӗнчери революци“ тенӗ сăмахсем уççăн янăраççӗ; вăл калаçнине ăнланмалла мар, анчах ун шухăшӗ уççăн палăрать, вăл шухăш с'езд кăмăлӗпе килӗшӳллӗ, çавăнпа та с'езд ăна алă çупать.

Эпӗ тата пӗр ыйту çинче—культура фронтӗнчи ӗçе хак парасси çинче—чарăнса тăрасшăн. Ку ыйтăва питӗ çивӗччӗн лартаççӗ. Работницăсемпе хресчен хӗрарăмӗсем политика тӗлӗшӗнчен çутта кăларакан учреждениссем сахаллипе, вулав çурчӗсене хупса лартнипе кăмăлсăрланнă; вӗсем малалла вӗренесшӗн çунса тăраççӗ, нумай учительсенчен кивӗ шăршă кӗрет, тесе ӳпкелешеççӗ, чăн-чăн революцишӗн тăрăшакан учительсем хатӗрлессишӗн тăраççӗ, шкулсем сахал пирки хумханаççӗ. Вӗсем тăлăхсемпе чухăн ачисене вӗрентес ӗçре чăн-чăн пулăшу çуккипе кăмăлсăрланса тăраççӗ, иккӗмӗш сыпăклă шкулта вӗреннӗшӗн тӳлеттерни, унта ачасене пурăнмалли çуртсем çукки вӗсене кӳрентерет.

Ман шухăшпа, çак малта каланисем пурте пирӗн строительство ӗлӗкхинчен ытларах никӗсленме пултарнă-и, массăсене çав строительствăна хутшăнтарма пултарайнă-и, вӗсене партипе советсем тавра организацилеме пултарайнă-и тесе ыйтнине хирӗç ответ парса тăраççӗ.

Çапла, пултарнă. Работницăсемпе хресчен хӗрарăмӗсен с'езчӗ çӗршывра мӗн пуррине палăртрӗ.

Лозунгсем массăсем патне çитрӗç; Октябрь çӗнтерсе илнисем вӗсен кăмăлӗсене çывăх пулса тăчӗç, вӗсен лозунгӗсем пулса тăчӗç.

Çакăнта ӗнтӗ Совет влаçӗн вăйӗ, çакăнта ӗнтӗ коммунистсен партийӗн вăйӗ.

# ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ХĔРАРĂМСЕН КУНĔ[1]

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕн калама çук пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен Партин центрти хаçачĕ çине каллех çĕнĕрен те çĕнĕрен çырма кирлĕ-ши вара. Вăл кун çинчен пурте пĕлсе тăраççĕ. Ĕçхĕрарăмне ирĕке кăларас ĕçри пирĕн çитĕнӳсем çинчен кирлĕ-и калама. Работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсен Октябрь вунă çул тултарнă кунĕ тĕлĕнче пулса иртнĕ с'ездĕнче çак ыйтăва çителĕклĕ таран çутатса панă.

Эпĕ паян урăххи çинчен каласшăн.

Кашни коммунист массăна астăнлă пурăнма вăратакан условисем тăвасшăн кĕрешет. Массăсем ĕмĕрсен тăршшĕнче çакăн пек условисенче пурăннă:

> „Унта çынсем
> Сыпăкран сыпăка пурăнса,
> Нимле йĕр хăвармасăрах,
> Ачисене астăн памасăрах
> Вилсе пĕтеççĕ".
>
> (*Некрасов*)

Унта ашшĕ ывăлĕсене мĕн каласа хăвармаллине пĕлмен, ывăлĕ те çаплах ашшĕ пекех хăйĕн пурăнăç çулне ним палăртмасăрах иртсе тухнă, вĕсен пурăнăçĕ çыран хĕрринче хăйăр шăлса лартнă пек пĕтсе ларнă.

Çапла пурăннă царизм вăхăтĕнче ĕмĕрсем хушши пирĕн масса. Анчах масса пирĕн кăна çапла пурăннă-ши? Капитализмлă çĕршывсенче масса урăхла пурăнать-ши? Тул енчен урăхла. Таса пурăнать, лайăхрах тумланать, вырсарникун уçăлма тухса çӳрет, анчах чăннипе унта та пирĕн царизм вăхăтĕнче пурăннă пекех массăсем... „нимле йĕр хăвармасăрах, ачисене астăн памасăрах вилсе пĕтеççĕ!"

Стачкăсем, восстанисем, революцисем, массăсем кивĕлле пурăнасшăн маррине палăртса тăраççĕ. Çаксем ĕнтĕ пурте „ачасем валли уроксем" пулса тăраççĕ. Анчах вĕсем, кулленхи пурăнăçа тивмесĕр, пĕтĕм идеологие тата пĕтĕм пурăнăç йĕркине революцилемесĕр, политикăллă тата экономикăллă кĕрешӳре кăна палăраççĕ пулсан,—çак уроксем ачасен астăнĕнче нумай чух пĕр кĕтмен çĕртенех улăшăнса каяççĕ.

Калас пулать, революциллĕ кĕрешӳ йăла никĕсĕсене, çынсен хушшинчи çыхăнусене мĕн таран улăштарать, кулленхи пурăнăç йĕркин кивĕ никĕсĕсене мĕн тарăнăшĕ чакалать, унăн (революциллĕ кĕрешĕвĕн—*Ред.*) пĕлтерĕшĕ те çавăн чухлех пысăк, ун результачĕсем те çавăн чухлех паллă пулаççĕ.

Совет стройĕн вăйĕ кивĕ йăлана ку таранччен пĕр общество йĕрки те тума пултарайман таран çĕнетессинче пулать. Паллах, çак улшăнусем массăн чи аялти сийне

---

[1] 1928 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче „Правда" хаçатра пичетленнĕ.

лекчĕр тесен, нумай вăхăт, нумай çулсем кирлĕ. Ильич калавĕ тăрăх, социализм кулленхи пурăнăçа кĕрес ĕç пĕрмаях тарăнланнăçемĕн тарăнланса пымалла. Массăсене вăратас ĕç час-часах пире кирлĕ хăвăртлăхпа мар пулса пырать. Массăн çиелти сийĕсем хăйсен активлăхне пысăккăн аталантараççĕ, анчах революци массăн сарлака сийĕсене кăшт кăна, пĕр енчен кăна лекнĕ. Ĕненме те хĕн. Октябрь праçникĕ иртнĕ хыççăн часах Тамбов кĕпĕрнинчен çыру килчĕ; çырăва кăмăлсăррăн çырнă: таврари ялсем пурте Октябрь 10 çул тултарнине уявланă, вăл ял Октябрь мĕн иккенне те илтмен. Октябрь мĕн иккенне те пĕлмен!.. Ĕненме те хĕн, анчах факт пур. Акă тата Орел кĕпĕрнинчен килнĕ çыру:

„Орел уездĕнчи, Баев вулăсĕнчи, Звегинцево ялĕнчи гражданка Анна Ефремовна Бирюковăн çырăвĕ.

Эпĕ хаçатсенче ытти ялсенче шкулсем, садсем, яслисем уçни çинчен темиçе хут та вуланă, пирĕн ялта ку тарана çитсе те нимĕн те туман; ялти хĕрарамăн кӳрентерӳллĕ те телейсĕр пурăнăçĕ халĕ те пĕтмен; вăл, телейсĕрскер, халĕ те ĕлĕк пирĕн асаттесем, асаннесем пурăннă пекех пурăнать; вуннă е ытларах ача çуратать; епле тĕл килет, çавăн чухлĕ пурăнаççĕ, виççĕшĕ е пиллĕкĕшĕ чĕрĕ юлаççĕ, е пĕри юлмичченех вилсе пĕтеççĕ. Сосков вулăсĕнче пурăнăç çакăн пек кӳрентерӳллĕ. Унта 18 пин çын пурăнать пулсан та, тухтăр çук. Эпир хамăра хамăр карчăксен сăмахĕсемпе анчах йăпататпăр: „Ан макăр, инке, сана турă юратать“. Пирĕн Звегинцево ялĕнче икĕ общество, ачасем мĕнпурĕ 800 чун пулсан та, шкул çук; ун çинчен шухăшламаççĕ те. Шкул кӳршĕ ялсенче пилĕк çухрăмра пур, анчах хĕллехи сивĕре ун пек инçетри шкула çӳреме ачасен вăйĕ çитет-и-ха зара?

Ĕççыннисемшĕн тăрăшнăшăн эпĕ халăхсен совет влаçне саламлатăп, тата Орел уездĕнчи, Баев вулăсĕнчи Звегинцево ялĕнче шкул уçса пама пулăшу ыйтатăп“.

Революцин вунпĕрмĕш çулĕнче çакăн пек çырусем вулама кичем, анчах вĕсем çинчен калаçмасан юрамасть. Культура революцийĕ çинчен вĕçĕмсĕр митингсем туса иртерсе, кӳрентерӳллĕ хаяр чăн пурăнăçа манма юрамасть. Унăн йĕрĕ те ан юлтăр тесе, питĕ хытă ĕçлемелле. Чи малтанах Звегинцево ялне пулăшас пулать. Эпĕ çакна пĕлместĕп: Орел кĕпĕрни шкул тума хăй бюджетĕнчен укçа уйăрса пама пултарĕ-ши. Орел кĕпĕрни Центрти хураçĕр облаçне кĕрет, унта çĕрĕçлекен халăх ытлашши çăра пурăнать, унта 1-мĕш сыпăклă шкулта вĕренме çул çитнĕ ачасем çурри кăна шкула çӳреççĕ, унта бюджет калама çук кару тăрать, анчах Звегинцево ялне пулăшма кирлех.

Ку çыру—питех хуйхăллă, ăна çыраканни—сахал вĕреннĕ пулин те, ăна вăл пысăк ăстăнпа çырнă, пурăнăçра вăл нумай йывăрлăхсем курнă, нумай шухăшланă, совет влаçне ăстăнпа саламлать. Ку çын ĕнтĕ усăсăрах вилмĕ—вăл хăйĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсене мĕн калаçа хăварманиллине пĕлсе тăрать. „Аннасем“ çапла хытăран хытă ыйтма тытăнни, вĕсем кивĕ йĕркесемпе килĕш-

мәнни кӳрентеруллӗ кивӗ пурӑнӑҫ, хальхи пурӑнӑҫ тем пек хаяр пулсан та, йӑлтах пӗтессине шантарса тӑрать. Сарлака массӑсен пӗр пайӗ ӗнтӗ ҫӗнӗ пурӑнӑҫ патне хӑпарса ҫитнӗ, тепӗр пайӗ ун патне хӗрӳллӗн туртӑнать, тата тепӗр пайӗ ҫӗнӗ пурӑнӑҫ патне ыран тин туртӑнма тытӑнӗ, анчах массӑсем йӑлтах улшӑнасси питӗ вӑйлӑ пырать. Буржуаллӑ ҫӗршывсенче те социализма куҫасси массӑсем улшӑнса пынипе пулӗҫ. Капитализмлӑ ҫӗршывсенче пирӗнни пек хутла пӗлменлӗх ахӑрнех ҫук пулӗ, анчах унта буржуази массӑсене пирӗннинчен нумай вӑйлӑрах идейлӑ влиянире тытса тӑрать. Промышленность тӗлӗшӗнчен малта пыракан ҫӗршывсен буржуазийӗ пирӗн ҫӗршыври пулнӑ буржуази пек ӗҫлемест, тата ытларах чее методсемпе ӗҫлет. Шкул, хаҫат-журнал, кино, радио, чиркӳ—унта ҫаксем пурте массӑсен ӑстӑнне тӗтрелентересшӗн ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак тӗтре ӑшӗнчен ирӗке тухма нумай ҫулталӑксем кирлӗ пулӗҫ. Капитализмла ҫӗршывсен ӗҫхӗрарӑмӗ ӑстӑнлӑ пурӑнма тытӑнсан, вӑл Анна Бирюкова пекех хаяр та ҫирӗп калаҫма тытӑнӗ.

Кивӗ пурӑнӑҫран юлнӑ тӗттӗмлӗхе, ҫуклӑха, ӗҫхӗрарӑмӗн пусмӑрлӑхне часрах пӗтермелле, вӗсене нумай миллионлӑ массӑсем ывӑна пӗлмесӗр пӗрле кӗрешнипе тата ҫав массӑсен пултаруллӑ ӗҫӗпе пӗтермелле; кашни коммунист, Совет республикин ӑстӑнлӑ пурӑнаҫпа пурӑнма тытӑннӑ кашни гражданинӗ ҫакна тума тӑрӑшмалла.

## МАРТӐН 8-МӖШ КУНӖ ТӖЛНЕ[1]

## ПӖЛӲ ВӐЛ — ВӐЙ

(Телеграф ҫакӑн пек хыпар илсе килчӗ: ҫӗнӗрен суйланӑ советсене (РСФСР-та) *хуласенче* 24,6% хӗрарӑм кӗнӗ (суйлавсен иртнӗ кампанийӗнче советсенче 20,8% хӗрарӑм пулнӑ), *ялсенче*—19,4% (суйлавсен иртнӗ кампанийӗнче советсенче 11,6% хӗрарӑм пулнӑ). Ку цифрсене февралӗн 2-мӗшӗнче пӗлтернӗ. Вӗсем хуласенче советсене суйланӑ чух хӗрарӑмсене иртнӗ суйлавран 3,8% ялсенче—7,8% ытларах суйлани ҫинчен калаҫҫӗ. Ку ӗнтӗ хӗрарӑмсем чӑнласах малалла кайнине пӗлтерет, анчах нормӑна ҫитесси инҫе-ха. Хӗрарӑм, закон умӗнче арҫынпа пӗртан праваллӑ пулнӑ пек, пурӑнӑҫра та унпа пӗртан праваллӑ пулас пулсан, советсене суйланӑ хӗрарӑмсен процентӗ хулара та, ялта та 50 енне ҫывӑхарнӑ пулӗччӗ. Халӗ унта ҫитесси инҫе-ха. Кивӗйӗн йӗрӗ халӗ пысӑккӑ. Хӗрарӑма совета суйлама чаракан тӗп сӑлтавсенчен пӗри вӑл—*хӗрарӑм культура фронтӗнче кайра тӑни пулать.*

Суйлавҫӑсен хутла пӗлӳлӗхпе активлӑхӗ хушшинче пуриншӗн те паллӑ шайлӑх пур. Кунта ирӗксӗрех Владимир Ильичӑн:

[1] 1929 ҫулта „Коммунистка" журналӑн 3-мӗш номерӗнче пичетленнӗ.

„хутла пĕлмен çын политикăн тулашĕнче тăрать“ тенĕ сăмахнĕ аса илетĕн.

Хутла пĕлес тĕлĕшрен хула ялтан малта тăрать, тата хулари суйлавçăсен активлăхĕ ялти суйлавçăсен активлăхĕнчен çӳлте тăрать. Суйлавсен иртнĕ кампанийĕнче суйлавçăсем суйлава хулара 50,7%, ялта—47,6% пынă. Унтанпа халăхăн хутла пĕлӳлĕхĕ ӳснĕ ĕнтĕ; хулари çынсем ялтисенчен ытларах вĕренесçĕ, ялсенче хут пĕлӳлĕх ӳсни пуринчен ытла хĕрарăмсен хушшинче палăрать. Хальхи суйлавсенче эпир активлăх ӳснине куратпăр, хулара вăл ялтинчен çӳлте тăрать, анчах ялта хĕрарăмсен активлăхĕпе авторитечĕ ытларах ӳснĕ. Суйлавсен хальхи кампанийĕнче суйлавçăсем хулара 64,3% суйлава хутшăннă (суйлавсен иртнĕ кампанийĕнчи суйлавçăсенчен 13,6% ытларах), ялсенче—58,2% (суйлавсен иртнĕ кампанири суйлавçăсенчен 10,6% ытларах). Эпир пĕлетпĕр,—культпоход ĕçĕ хулана ялтан ытларах тивнĕ. Кунта иккĕленмесĕрех паллă çыхăну пур.

Хĕрарăмсене ялсовечĕсене ĕлĕкхинчен чылай ытларах суйлаççĕ, тенĕ хыпарсем пур çĕртен те килеççĕ.

Суйлав умĕн туса урттерекен кампание суйлавçăсене 100%-чĕпех хутшăнтармалла. Анчах ку ĕçе, хутла пĕлменлĕхе пĕтерес ĕçре пысăк çитĕнӳсем пулсан çеç тума пулать.

Ĕççыннисем советсен суйлавĕсенчен нумай усă кĕтсе тăраççĕ. Хальхи советсене суйланă хĕрарăмсен, хăйсен умĕнче тăракан задачисене пурăнăçа кĕртме пултарас тесен, пурăнăçран курса тата кĕнекесем вуласа, нумай вĕренмелле пулать. Пурăнăç кунран-кун сложнăйланса пырать, çавăнпа та, пурăнăçа юрăхлă çын пулас тесен, тавралăхри пурăнăçа лайăх пĕлсе тăрас пулать.

СССР буржуаллă йĕри-тавралăхра тăрать. Çак буржуаллă йĕри-тавралăх çук пулсан, эпир хамăра, пирĕн çĕршыва, кирлĕ пек хăвăртлăхпа малалла кайнă пулăттăмăр. Анчах эпир буржуаллă йĕри-тавралăхра пурăнатпăр, çавăнпа та çакна пĕлсе тăмалла: эпир пĕтĕм вăйпа малалла хăвăртрах кайма тăрăшмасан, буржуаллă çĕршывсем пире пĕтерсе хурĕç, çĕмĕрсе тăкĕç. Вĕсем Советсен Социализмла Республикисен Союзне тапăнма кирек хăçан та хатĕр тăраççĕ. Пире винтовкăран пеме вĕренсен çитет, унтан, пемессерен тĕле лектерме вĕренсен çитет, противогаз тăхăнса çӳреме вĕренсен çитет, тесе шухăшлани йăнăш пулĕччĕ. Винтовкăран пеме вĕренни, унтан пемессерен тĕле лектерме пĕлни тата вăрçăра ытти пур ĕçсене те пĕлни питех те кирлĕ, анчах пире никам та çĕнтерес çукки эпир пĕр вăрçă ĕçне анчах хатĕрленсе çитнинчен килмест. *„Вăрçă вăл—кашни нацин пĕтĕм экономикăллă тата организацилле вăйĕсене сăнани пулать“*,—тесе çырнă Владимир Ильич.

Паллах, ĕçе эпир начар тусан, кивĕ, тахçан ĕмĕрхи машинăсемпе ĕçлесен, фабрикăсем пирĕн çурри ĕçлемесĕр тăрсан, промышленноçа эпир хальхи техника патне илсе çитермесен, ĕçе

рационализацилемесен, сухапуçпе сухалама пăрахмасан, тĕрлĕ çумкурăкне тырра хупласа илме ирĕк парсан, тыркассене тата саранчана тырра пăсма тата çисе пĕтерме ирĕк парсан, хулана чĕртаварпа тырă, яла кирлĕ таварсем тăратас ĕçе йĕркелемесен, суту-илӳ тăвас ĕçе уйрăм хуçасен аллине парсан,—капитализмла çĕршывсем пире нимсĕрех питех те çăмăллăн çăтса ярĕç. Пирĕн хамăрăн хуçалăхри пĕтĕм пурăнăçа йĕркене кĕртмелле, вăл хуçалăх йĕркелесе çитерне пĕр пĕтĕм хуçалăх пулса тăмалла, хуçалăхри тĕрлĕ ĕçсем хушшинче тачă та тĕрĕс çыхăну пулмалла.

Çакна туса çитерес тесен, пирĕн хамăрăн промышленноçа, ялхуçалăхне, кооперацие питĕ çӳле хăпартмалла.

Промышленноçа, ялхуçалăхне, суту-илĕве çĕнĕрен йĕркелес ĕçе, çитменнине тата хăвăрт тăвас ĕçе, эксплоататорсем, кивĕ йĕркепе ыйткаланлăхран тата массăсен каяюлнăлăхĕнчен усă курса пурăннă çынсем хирĕç тăнисĕр тума пулмасть.

Çавăнпа та ăнсăртран мар ĕнтĕ, халĕ, эпир хамăрăн промышленноçпа ялхуçалăхне тăрăшса, çĕнĕрен йĕркелеме тытăннă чух, Совет влаçĕн пур тăшманĕсем те—нэпмансем, кулаксем, помещик пулнă çынсем, капиталистсем шăлĕсене йĕрме тытăнчĕç. Ăнсăртран мар вĕсем, пирĕн кашни йăнăшпа усă курса, ĕççыннисен ăстăн кĕрсе çитмен, иккĕленсе тăракан сийĕсене совет влаçне хирĕç, партие хирĕç тăратма тăрăшаççĕ. Çавăнпа халĕ массăсем хушшинче пысăк агитаципе пропаганда сарса ямалла, массăсене культура тĕлĕшĕнчен хăпартмалла, вĕсене, совет влаçне курайман çынсем хыççăн каясран хăтарса, социализм строительстви ĕçне хутшăнтармалла. Ахаль мар ĕнтĕ Владимир Ильич массăсем хушшинче, пуринчен ытла хресченсем хушшинче, культура ĕçне питĕ хытă сарса яма кирли çинчен каланă. Владимир Ильич культура ĕçĕ уйрăм пысăк вырăнта тăни çинчен тата вăл ĕç татса паракан пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен темиçе хут та каласа панă.

Вăл вилнĕренпе ĕнтĕ пилĕк çул иртрĕ, çак задача пĕтĕм çивĕчĕшĕпе, пĕтĕм пысăккăшĕпе пирĕн умра тăрать. Советсен нихçанхинчен те ытларах халь ĕнтĕ культура строительстви çине, рабочисене, чухăн хресченсемпе вăтам хресчен массисене, пуринчен ытла хĕрарăм массисене çак ĕçе хутшăнтарасси çине, массăсене хайтĕллĕн ĕçлеме вăратасси çине, çак хайтĕллĕн тумалли ĕçе организацилесси çине уйрăм тимлĕхпе пăхмалла.

Советсене çак ĕçре пурте: парти, комсомол, делегаткăсем, профсоюзсем, коопераци, ирĕклĕ обществăсем пулăшмалла. Çак ĕçре уйрăмах ялсовечĕсем пысăк вырăн йышăнма пултараççĕ. Ялсовечĕсенче культкомиссисем пур, вĕсене хăш чух культсекци теççĕ. Культсекцисем хăйсен ĕçне пĕтĕм ĕççыннисене, чи малтанах халăхăн организациленнĕ пайне хутшăнтармалла. Вĕсем хăйсен вăйне шкул, вулав çурчĕн, библиотека, хĕрлĕ кĕтессен, ликпунктсен, тата ытти çавăн пеккисен ĕçĕсенче питĕ хытă кăтартма тытăнмалла. Вĕсем пĕтĕм ачасене çав хи-

сепрех хĕрачасене те, шкула вĕренме çӳретессине астуса тăмалла, ачисене шкула яман ашшĕ-амăшĕсене ялсоветне чĕнтерсе, мĕншĕн шкула яманнине пĕлмелле, шкула çӳреме чаракан чăрмавсене пĕлмелле тата вĕсене пĕтерме пулăшмалла. Ялта хутла пĕлмен çынсем нумай пулсан, секцисен çак ялта ликпункт организацилемелле, организацилемесĕр хăвармалла мар, ликпункта йĕркеллĕ ĕçлеттермелле. Секцисем хутла пĕлмен çынсене вĕренме пуçтармалла, вулав çуртне ялан лайăх ĕçлеттерме тăрăшмалла, унта çитĕннисем валли те, ачасем валли те вуламалли кĕнекесем пулмалла. Секцисен шкулсенче чухăн çын ачисене çителĕклĕ таран пăхтармалла, тĕрлĕрен кружоксем тата курссем организацилемелле, ача амăшĕсен ача пăхас ĕçне кăшт та пулин çăмăллатас тесе тата вĕсене вĕренме пулăшас тесе, пĕчĕк ачасем валли яслисем тата ача сачĕсем организацилемелле.

Секцисем нумай ĕçсем тума пултарĕç. Вĕсем хаçатсем нумайтарах илтерттерме, хаçатсене чухăн çынсем патне çитерттерме, ялпа хулана радиопа çыхăнтарма, яла кино илсе килме пултарĕç. Секцисем, ялăн культурăлăхне хăпартса, халăха çĕнĕ йĕркесем патне туртăнма, хуçалăха, пурăнăçри йăласене çĕнĕлле организацилеме вăратĕç.

Ялсовет секцийĕсем валли кашни хресчен хĕрарăмне ăнланмалла брошюрăсем кăларас пулать.

Хулара хула совечĕн культурлă секцийĕсем те вăйлă ĕçлемелле. Ĕççыннисем пурăнăç хуçисем пулса тăмалла. Çакна тума культура тĕлĕшпе кая юлнă çынсем, уйрăмах япăх организациленнĕ, сахалтарах ăнланакан çынсем, совет влаçĕ енчен ытларах пулăшу памалласкерсем чăрмантарса тăраççĕ.

Хресчен хĕрарăмĕ тата работница хăйсен йӳçĕ пурăнăçĕн тата таврари пурăнăçĕн опычĕсем тăрăх культурăсăрлăх, тĕттĕмлĕх вĕсен алли-урисене епле тăлласа лартни çинчен никамран та ытларах пĕлеççĕ. Çавăнпа та, работницăпа хресчен хĕрарăмĕ совета лексен, вĕсем унта культурлă секцисен ĕçне çине тăрсах ĕçлĕç, ун çинчен пĕрре те иккĕленмелли çук. Пĕлӳлĕхĕн вăйĕ мĕнле иккенне вĕсем лайăх пĕлеççĕ, ку тĕлĕшпе вĕсене ӳкĕте кĕртсе ĕнентерме те кирлĕ мар.

## ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ХĔРАРĂМСЕН КУНĔ [1]

Ĕç çапла пулчĕ: 12 çул каялла, тĕнче вăрçи хĕрсе пынă вăхăтра, пирĕн тĕттĕм тата кая юлнă çĕршыври рабочисемпе хресченсем патшапа помещиксен тата капиталистсен влаçне çапса сирпĕтрĕç те хăйсен çулĕпе малалла утрĕç. Вăрçă хупăрласа тăнă условисенче, граждан вăрçи, выçлăх тата пур çĕртен те ишĕлсе ана пуçланă условисенче вĕсем пурăнăçа юсама, çĕнĕ йĕркесем тума пуçларĕç.

---

[1] Ку статья 1930 çул çинчен калать.

Октябрь революцийӗ пулман пулсан, помещиксемпе капиталистсен влаҫӗ тата пусмӑрӗ темиҫе хут та ӳснӗ пулӗччӗ, пирӗн ҫӗршыв пӗтӗм тӗнчери капиталистсен колонийӗ пулса тӑнӑ пулӗччӗ.

Халӗ ӗнтӗ эпир ӗлӗкхи „ырӑ“ вӑхӑта: патша-батюшкӑна, земски начальниксене, господа помещиксене манма пуҫларӑмӑр, манма пуҫларӑмӑр эпир хамӑр килте ҫуралнӑ, анчах пӗтӗм тӗнчери капиталистсенчен тӑрӑшса вӗреннӗ фабриксемпе заводсен хуҫисене. Манма пуҫларӑмӑр эпир капитализмла строй илсе килнӗ тӗнче вӑрҫин хӑрушлӑхӗсене те. Манма кирлӗ мар.

Эпир стройкӑсем ҫине пиркеннӗ, хамӑрӑн шалти ӗҫсем ҫине пиркеннӗ, анчах пирӗн капитализмла йӗри-тавралӑх ҫинчен манма юрамасть, капитализмла ҫӗршысенче мӗн пулса иртнине, унта капиталистсемпе вӗсене хӳтлекенсем рабочисемпе хресченсене епле ҫӗнӗлле, фашистла пӑркӑчланине, унта ӗҫсыннисен пурӑнӑҫӗ куллен кун епле чӑтма ҫук йывӑрланса пынине манма юрамасть. Ун ҫинчен хаҫатсенче ҫырнисене тимлӗрех вуласан та чӑрмантармасть.

Кам хаҫат вуласа пырать, ҫавӑ ҫакӑн пек вӑхӑт ҫывхарса килнине пӗлет: капитализмла ҫӗршывсенчи рабочисемпе ӗҫсыннисем капитализм вӗсене пӗтерес патнех илсе пынине ытларах та ытларах туйма пуҫлаҫҫӗ.

Класс кӗрешӗвӗ ҫивӗчленсех пырать. Германине илсе пӑхар хӑть. „Германин виҫӗ миллион ӗҫсӗр юлнӑ халӑхӗ 15 миллион рабочи пӗтесшӗн мар, пӗтмеҫҫӗ те“, тенӗ нумаях пулмасть Тельман, Рур облаҫӗнчи рабочисен съездӗнче.

Нимӗҫ рабочийӗсем революциллӗ кӗрешӗве пуҫларӗҫ ӗнтӗ, вӑл ӳснӗҫемӗн ӳссе пырать. Унта тытӑҫусем пулса иртни рабочисен ҫилли йӳҫсе хӑпарнине, вӑл миллион ҫынна ҫавӑрса илнине кӑтартса парать те ӗнтӗ. Буржуази рабочисен арӑмӗсен пӗлменлӗхӗ, работницӑсен пӗлменлӗхӗ ҫине шанса тӑрать. Анчах вӑл йӑнӑшать. Нимӗҫ работницисем, нимӗҫ рабочисен арӑмӗсем пӗтӗм рабочи класпа пӗрле алла-аллӑн тытӑнса пыраҫҫӗ. Кӗрешӳ чи кая юлнӑ работницӑсен куҫне те йӑлтах уҫать.

Пӗтӗм тӗнчери рабочи класпа капитализмла тӗнче хушшинчи кӗрешӳ ҫулӑмланса пырать. Хӗвеланӑҫӗнче революци хӑҫан хыпса тухасса пӗлме пултараймастпӑр, анчах эпир пӗлетпӗр— рабочи класс ҫапӑҫӑва хатӗрленме пуҫланӑ. Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗнче, мартӑн 8-мӗшӗнче пӗтӗм тӗнчери работницӑсен куҫӗ Совет ҫӗршывӗ ҫинелле пӑхать. Пирӗн ӳсӗмсем пӗтӗм тӗнчери работницӑсене ҫунатлантараҫҫӗ. Пӗтӗм тӗнчери рабочисен ӳссе пыракан кӗрешӗвӗ пирӗн ҫӗршыври работницӑсемпе ютҫӗршыври работницӑсен хушшинчи ҫыхӑнӑва ҫирӗплетет.

Пирӗн ударницӑсен ӗҫӗ, вӗсем ӗҫе ӑнланса туни, вӗсем социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнни, вӗсен ӗҫри ҫӗнтерӗвӗ ытти ҫӗршывсенчи работницӑсене хаваслантарса ярать. Кӑтартуллӑ ӗҫленӗшӗн мастера, директор помощникне лартнӑ пирӗн ҫӗр-

шыври работницӑсем ютҫӗршыври работницӑсене тӗлӗнтереҫҫӗ, савӑнтараҫҫӗ. „Акӑ мӗнле вӗсем, Совет работницисем",—теҫҫӗ ютҫӗршыври работницӑсем.

Колхозшӑн хӗрӳллӗ агитацилекен хресчен хӗрарӑмӗсем, пӗлӳлӗхе кӗрешсе илнӗскерсем, нумаях та пулмасть чухӑн, батрачка пулнӑскерсем тата „колхоз" сӑмаха илтӗнмелле калама хӑранӑскерсем, пупсенчен хӑраса пурӑннӑскерсем, хутла пӗлмен пулнӑскерсем, ытти ҫӗршывсенчи ӑстӑнлӑ работницӑсене тӗлӗнтереҫҫӗ, юраттараҫҫӗ.

Хула тата ялсоветӗсенче ӗҫлекен работницӑсемпе хресчен хӗрарӑмӗсем тӗттӗмлӗхпе, ӗлӗкхи йӑласемпе, чиркӳ ултавӗпе, кулаксемпе тата тӗрлӗ майлӑ эксплоатаципе вӑйлӑн кӗрешекенскерсем, хӑйсен ӗҫӗсемпе пӗтӗм тӗнчери рабочи класӑн кӗрешӳ фронтне ҫирӗплетеҫҫӗ.

Работницӑсемпе хресчен хӗрарӑмӗсем, ӗлӗкхи йӑласенчен тата ӗненӳсенчен ярса тытма пӑрахманскерсем, сӑмах вӗҫҫӗн кӑна пурӑнаканскерсем, кулаксен, пупсен тата Совет влаҫӗн тӑшманӗсен элекӗсене ӗненекенскерсем, ачисене ӗлӗкхи пек пӑхса ӳстерекенскерсем, хӑйсен упӑшкисене колхоза кӗме чарса пыраканскерсем, ытти ҫӗршыври работницӑсен ретне юрӑхсӑр, пӑтранчӑк шухӑш кӗртеҫҫӗ. „Акӑ ӗнтӗ Совет влаҫӗ 12 ҫул пурӑнать, а работницӑсемпе хресчен хӗрарӑмӗсем ӗлӗк мӗнле тӗттӗм пулнӑ, халӗ те ҫаплах юлнӑ, ӗлӗкхи пекех пурӑнаҫҫӗ, Совет влаҫӗ ӗнентерме тата вӗрентме пӗлмест вӗсене",—тесе шухӑшлаҫҫӗ ютҫӗршыври работницӑсем.

Совет Союзӗнчи работницӑсем тата хресчен хӗрарӑмӗсем! Пӗтӗм тӗнчери работницӑсен кунӗнче ҫакна лайӑх пӗлсе тӑрӑр: эпир пӗтӗм тӗнчери помещиксемпе капиталистсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнчи боецсем пулса тӑратпӑр, эпир индустрие вӑйлатас, колхоз юхӑмне йӗркелесе ярас, советсен ӗҫне аванлатас, йӑлана аванлатас тата хамӑрӑн пӗлӳлӗхе ӳстерес ӗҫре куллен кун ӗҫлесе пыни—ку вӑл пирӗн ҫӗршывра социализм тӑвассишӗн ӗҫленӗ ҫӗрти кӑтартуллӑ ӗҫ, рабочи класӑн тӗнчери кӗрешӳ фронтӗнчи боевой ӗҫ пулса тӑрать.

## ОКТЯБРЬ УЯВӖ УМӖН[1]

Эпир октябрь революцийӗ XIII ҫул тултарнине уявлатпӑр. Кашни работница ҫак иртнӗ ҫулсем хушшинче вӑл пачах урӑх ҫын пулса тӑнине сисет. Пуринчен ытла ӑна интереслентерекен тата хумхантаракан ыйтусем анлӑланчӗҫ. Ясли, шкулсем, общественнӑллӑ столовӑйсем, прачечнӑйсем т. ыт. те ӗлӗк ӑна питӗ сахал интереслентернӗ. А халӗ? Акӑ Орехово-Зуево, ӗлӗкхи пир-авӑр центрне илер. Унта работницӑсене яслисемпе ача сачӗсем пур ачана валли те ҫитменни час-часах пӑшӑрхантарать. Вӗсем хӑйсен ачисем ялтан илсе килнӗ нянькӑсем аллинче юлнӑшӑн, ҫавна пула ачисене ҫӗнӗлле воспитани парайманшӑн пӑшӑрханаҫҫӗ.

---

[1] „Работница" журналра 1930 ҫ. октябрӗн 21-мӗшӗнче пичетленнӗ.

Вĕсем нянькăсем хутла вĕренмесĕр юлнăшăн пăшăрханаççĕ, анчах, ача яслисем, ача очагĕсем пачах та çук е вĕсем вăхăтлăха кăна ĕçлеççĕ тата хамăр фабрикăра ĕçлетпĕр пулсан, эпир, нянькăсăр ниепле те пурăнма пултараймастпăр, теççĕ вĕсем. Шкула туса пĕтерейменни ĕлĕкхи вăхăтра хальхи вăхăтри пек пăшăрхантарма пултарнă-и работницăсене? Харпăр-хăй вĕренесси ĕлĕкхи вăхăтра хальхи вăхăтри чухлĕ пăшăрхантарма пултарнă-и? Ĕлĕкхи вăхăтра хальхи вăхăтри пек пăшăрхантарма пултарнă-и, сăмахран, Родникре прачечнăй туса пĕтерме трубасем çукки? Производство ыйтăвĕсене илсен тата? Кунта пуринчен ытла работницăсен ăстăнлăхĕ ӳссе пынине курма пулать. Хальхи вăхăтра завода пырсассăн, ударлă бригадăсем вăйлă ĕçленине куратăн. Куратăн, ĕçри кашни кăлтăка, машина ваннине, чĕртавара вăхăтра тăратманнине, промфинплана тултарма чăрмантараканнисене пурне те работницăсем чĕререн туяççĕ,—сисетĕн, епле работницăсен ăнланăвĕ улшăннă. „Пятилетка 4 çулта“—ĕлĕк мĕнле работница интересленме пултарнă планпа тата вăл вăхăтра пурăнăçланассипе пурăнăçланмасси çинчен?

„Промфинплан...“ Çак сăмаха работницăсенчен илтетĕн те, вĕсен ăстăнлăхĕ епле хăпарнине сисетĕн вара. Тата тепри: работницăсене ĕлĕкхи вăхăтра хальхи вăхăтри пек интереслентерме пултарнă-и çĕршывра пурăнăçа епле йĕркелесе яни, ялсоветсен секцийĕсем епле ĕçлесе пыни, Наркомторг, Наркомфин т. ыт. епле ĕçлесе пыни тата вĕсенче ĕçе епле йĕркелесе яни? Çук-и унта бюрократизм? Тĕрĕс ĕçлесе пыраççĕ-и служащисем хăйсене хушнă ĕçсене? Нумай пулнă-и ĕлĕк выдвиженкăсем работницăсенчен?

Е акă ыйту ял çинчен. Ялпа çыхăну тытнă работницăсем ĕлĕкхи вăхăтра ял çине мĕнле пăхнă-ха?

Вĕсем хăйсен яла юлнă çемьи çинчен, хуçалăхĕ çинчен шухăшланă. А хальхи вăхăтра коллективизаци ыйтăвĕсем, ялăн культурине хăпартас ыйтусем ялпа çыхăну тытакан работницăсене те, ялпа çыхăну тытманнисене те интереслентереççĕ. Работницăсем яла агитацилеме, пулăшма кайса килеççĕ. Пĕтĕм çĕршывăн пурăнăçне организацилес ыйтусем работницăсемшĕн çывăх ыйтусем пулса тăчĕç. Нумай-ши турăш умне чĕркуçленсе ларса вĕри куççулĕпе çук турăран пулăшу тата пысăк та пуян ырăлăх ыйтакан работницăсем? А пĕтĕм тĕнчери рабочи движенийĕн ыйтăвĕсене илсен тата? Вĕсемпе работницăсем ĕлĕкхи вăхăтра хальхи чухлĕ интересленнĕ-и вара? Работницăсен анлă сийĕ парти ĕçĕпе, унăн постановленийĕсемпе ĕлĕк хальхи пек интересленнĕ-и вара? Работницăсен пĕчĕк ушкăнĕ кăна рабочи класăн партийĕ мĕскер иккенне, вăл мĕншĕн кĕрешнине тата мĕнле çул тытнине пĕтĕммĕн кăна пĕлнĕ. Работницăсен сарлака масси ĕлĕк строительствăн йывăрлăхĕсем çинчен, вăл йывăрлăхсене пĕтермелли меслетсем çинчен сӳтсе-явнă-и? А халĕ партин XVI съезчĕн постановленийĕсем çинчен кам илтмесĕр юлнă

пулĕ? Социализм çинчен кам илтмен? Работницăсен пĕтĕм масси вĕренсе ÿсрĕ, хăпарчĕ вĕсен ăстăнлăхĕ, таврари пурăнăçа ăнланса илесси, рабочи класăн пĕтĕм тĕнчери кĕрешĕвĕн задачисене ăнланса илесси.

Çакăнпа пĕрлех работницăсем хамăр пурăнăçри çитменлĕхсене те куракан пулчĕç, çитменлĕхсем халь пирĕн нумай-ха, пĕтереймен-ха вĕсене. Вуншар çул вăл çитменлĕхсемпе килĕшсе пурăннă, палăртман вĕсене, а халĕ? Работницăсем халĕ ĕлĕкхи пек пурăнасшăн мар, анчах вĕсем ăнланаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерме куллен-кун организаторла ĕç туса пырасси кирлĕ. 1920 çулти декабрьте Пĕтĕм Российăри губженотделсен совещанине янă саламĕнче Ленин организаторла ĕçре „хĕрарăмсем малта пымалла, вĕсем, паллах, малта пырĕç те“, - тесе çырнă (*Ленин*, XXV т., 516 стр.).

Октябрь революцин Аслă уявĕнче кашни работница хăйне хăй тĕрĕслемелле—йăлана çĕнĕлле, социализмла тума, пĕтĕм ĕçлеве организацилеме хăй мĕнле пулăшу пама пултарнă таран пулăшнă-и вăл? Октябрь революцин уявĕнче унăн чĕри Октябрьте пуçланă ĕçе вĕçне çитичченех туса çитерессишĕн тата та хытăрах хĕрÿленмелле.

## ЛЕНИН ТАТА ĔÇХĔРАРĂМĔ [1]

Ленин хăйĕн революциллĕ ĕçĕ вăхăтĕнче ĕçхĕрарăмĕсене—работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсене ирĕке кăларас тĕлĕшпе нумай çырнă тата хăйĕн сăмахĕсенче нумай калана. Хĕрарăмсене ирĕке кăларас ĕç вăл, паллах, рабочи ĕçĕшĕн пыракан пĕтĕм кĕрешÿпе, социализмшăн пыракан пĕтĕм кĕрешÿпе ним уйăрăлми çыхăннă. Эпир Ленина вăл ĕççыннисен çулпуçĕ, парти организаторĕ, Совет влаçĕн организаторĕ тетпĕр, эпир ăна борец тата строитель, тетпĕр. Кашни работницăн, кашни колхозницăн Ленин ĕçхĕрарăмĕсен положени çинчен тата ĕçхĕрарăмне ирĕке кăларасси çинчен каланине кăна мар пĕлмелле, вĕсен Ленинăн пĕтĕм ĕçне пĕлмелле. Ĕçхĕрарăмĕсен положенине лайăхлатасси рабочи класăн пĕтĕм кĕрешĕвĕпе ним уйăрăлми çыхăнса тăнăран, шăпах çавăнпа ĕнтĕ, Владимир Ильич хăйĕн сăмаххисенче тата статьисенче çав ыйту çинче час-часах чарăнса тăнă; ун çинче вăл 40 хут ытла чарăнса тăнă,—кашни хут вăл çакăн çинче хăйне çав вăхăтра хумхантаракан тата тăрăштаракан ыйтупа пĕрле çыхăнтарса чарăнса тăнă.

Революциллĕ ĕçре ĕçлеме пуçланă кунранах Ленин работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсен положенийĕ çине, вĕсене рабочисен движенине хутшăнтарасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхнă. Владимир Ильич революционерăн практикăлла ĕçне Питĕрте ĕçлеме пуçланă, унта вăл социал-демократсен группине организациленĕ. Çав группа Питĕрти рабочисем хушшинче пысăк ĕç туса

[1] „Известия ЦИК'а СССР и ВЦИК“ 1932 çулти 67-мĕш №-те 8-мĕш мартра пичетленнĕ.

пынӑ, вӑрттӑн листоксем кӑлармa, вӗсене фабрикӑсемпе заводсем тӑрӑх салатма пуҫланӑ. Листоксем ҫинче яланах рабочисене чӗнсе ҫырнӑ. Ун чухне рабочисем сахалтарах ӑнланнӑ-ха, анчах рабочисем хушшинче чи кая юлнисем—работницӑсем пулнӑ, вӗсене фабрикантсем ӗҫ укҫи ытла та сахал тӳленӗ, вӗсен прависене пӑснӑ. Акӑ мӗншӗн листоксем ҫинче ялан пекех рабочисене кӑна чӗнсе каланӑ пулнӑ (Лаферм фабрикӗнчи папиросницӑсене чӗнсе ҫырнӑ икӗ листока шута илес мар пулсан.) Владимир Ильич Торнтонӑн сукна фабрикӗнчи рабочисем патне листок ҫырса хатӗрленӗ (1895 ҫулта), Торнтон фабрикӗнчи работницӑсем питӗ кая юлнӑскерсем пулнӑ пулсан та, Ленин листока ҫапла пуҫласа ҫырнӑ: „Торнтон фабрикӗнчи рабочисемпе работницӑсем патне“, тенӗ. Ку пӗчӗк япала, анчах характерлӑ япала.

1899 ҫулта, ссылкӑра чухне, Владимир Ильич парти организацие (партин 1-мӗш с'езчӗ 1898 ҫулта пулнӑ) ҫырусем ҫырнӑ, вӑл ҫырусенче Ленин хӑй вӑрттӑн тухса тӑракан пичете ҫырма шутланӑ темӑсем ҫинчен ҫырнӑ. Ҫав темӑсем шутӗнче „Хӗрарӑм тата рабочи ӗҫӗ“ ятлӑ брошюра пулнӑ. Ҫав брошюрӑра Ильич работницӑсемпе хресчен хӗрарӑмӗсен пурӑнӑҫӗ ҫинчен ҫырса кӑтартасшӑн тата хӗрарӑмсен ирӗке тухмалли пӗртен-пӗр ҫулӗ— вӑл революциллӗ движение хутшӑнасси тесе кӑтартасшӑн пулнӑ. Рабочи класӑн ҫӗнтерӗвӗ кӑна работницӑпа хресчен хӗрарӑмне ирӗке кӑларма пултарать.

Работницӑсем Обуховри оборонӑна хутшӑннине тата ҫамрӑк работница Яковлева судра каланисене паллӑ туса 1901 ҫулта Ильич ҫапла ҫырнӑ:

„Тӗрмесенче асаплантарса вӗлернӗ герой-юлташсем ҫинчен асра тытса тӑни ҫӗнӗ борецсен вӑйне вунӑ хут ӳстерет тата вӗсене пулӑшма пин ҫынна явӑҫтарать, вӗсем вара 18 ҫулхи Марфа Яковлева каланӑ пек уҫҫӑн: „эпир пиччесемшӗн тӑратпӑр!“— тейӗҫ. Правительство манифестантсене полиципе, ҫарпа ҫӗмӗрнисӗр пуҫне тата вӗсене восстани тунӑ тесе суд тӑвасшӑн:— эпир ҫакна хирӗҫ пӗтӗм революциллӗ вӑйсене пӗтӗҫтернипе, патша ирӗкӗпе пусмӑрта пурӑнакансене пурне те хамӑр енне ҫавӑрнипе, пӗтӗм халӑхӑн восстанине пӗрмаях хатӗрленсе пынипе ответлетпӗр!“ (*Ленин*, т. IV, стр. 289).

Владимир Ильич хресчен хӗрарӑмӗн, кустаркӑн тата работницӑн пурӑнӑҫӗпе ӗҫне питӗ тимлӗн тӗпчесе вӗреннӗ.

Тӗрмере ларнӑ чухне отчетсем, статистикӑллӑ сводкӑсем тӑрӑх Владимир Ильич хресчен пурӑнӑҫне, вӗсен пурӑнӑҫӗ ҫине кустарла промысласем мӗнле влияни тунине, вӗсем заводла промышленноҫа туртӑннине, вӗсен культурипе йӑли ҫине фабрика епле влияни тунине вӗреннӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл ҫак ыйтусенех хӗрарӑмсен ӗҫӗ тӗлӗшпе те вӗреннӗ. Вӑл хресченсен харпӑрлӑх психологийӗ епле хӗрарӑма кирлӗ мар, киревсӗр ӗҫпе ӗҫлӗ тунине (пысӑк ҫемьесенче кашни ҫемьен хӗрарӑмӗ сӗтелӗн пӗр

пайне, хăйĕн тӳпине çеç çăвать, хăйĕн ачи валли пăтă уйрăм пĕçерет, ачи валли сĕт уйрăм сăвать) кăтартса панă.

Хăйĕн „Развитие капитализма“ ятлă кĕнекинче Ленин выльăх усракан хуçасем хресчен хĕрарăмĕсене епле эксплоатацилени çинчен, хресчен хĕрарăмĕсем хăйсен „кунçулне ĕмĕр ĕнепе иртерни“, вĕсене ĕнесемпе сурăхсем çумне тăлласа лартни çинчен çырса кăтартать, скупщицăсем кустаркăсен-чĕнтĕрçĕсен ĕçлевне епле эксплоатацилени çинчен çырса кăтартать, шултăра промышленность хĕрарăма епле ирĕке кăларнине, фабрикăра ĕçленине пула мĕнле унăн куçĕ уçăлнине, епле вăл хутла пĕлекен пулнине, хăй тĕллĕн пурăнма пуçланине тата епле вăл патриархальнăй çемьерен уйăрăлса пынине çырса кăтартать. Шултра промышленноçа вăйлатнинчен Ленин хĕрарăмсене йăлтах ирĕке кăларма май килессе кĕтнĕ. Ку тĕлĕшпе Владимир Ильичăн „Техникăн пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕри“ [1] ятлă статьи, 1913 çулта çырнăскер, питĕ паллă.

Буржуаллă çĕршывсенчи рабочисен хĕрарăмĕсене арçынсемпе пĕртан праваллă тăвассишĕн кĕрешмелле.

Ссылкăра Ильич парти программине тăвасси çинчен шухăшланă. Ун чухне партин программа пулман-ха. Программа евĕрлĕскер, „Освобождение труда“ группи туса хатĕрленĕскер пулнă. „Пирĕн парти программин проекчĕ“ ятлă статьинче Владимир Ильич çав „Освобождение труда“ группи туса хатĕрленĕ программине сӳтсе-явса, çав программăн 9-мĕш пункчĕн практикла ĕç тĕлĕшпе çырнă пайĕнче „пирĕн уголовлă тата гражданствăллă законодательствăна, сословисене пайланса тăрассине тата наказани парассине, çыннăн тивĕçĕпе ниепле те килĕшсе тăманскерне, тепĕр хут пăхса тухма“ ыйтаканскер çумне „*хĕрарăма арçынпа пĕртан права парассине те*“ *хушса çырмалла тенĕ*“. (*Ленин.* т. II, стр. 517. Курсив манăн –Н. К.).

1903 çулта, парти программине йышăннă чухне, унта çавăн йышши пункт кĕртнĕ пулнă.

1907 çулта, Штутгартри пĕтĕм тĕнчери конгресăн ĕçĕсем çинчен отчет тунă чухне, Ленин конгресс Австрири социал-демократсен оппортунистла практикине, арçынсене суйлав прави парассишĕн кĕрешӳ пуçласа ярса, хĕрарăмсене суйлав прави парассишĕн кĕрешĕве „кайрана“ хăварнă практикăна сивленине кăмăлласа паллă тунă.

Совет влаçĕ, паллă ĕнтĕ, хĕрарăма арçынпа пĕртан праваллă турĕ.

„Пирĕн Российăра çавăн пек чи начарри, мăшкăлли тата тискерри—хĕрарăмсене нимле правасăр е тулли правасăр хăвараканни, çакă крепостничествăпа вăтам ĕмĕрсен кӳренмелле юлашкийĕ, пĕтĕм çĕр чăмăрĕнчи хăйĕншĕн çеç тăрăшакан буржуазипе мăка та хăравçă вак буржуази çĕнетнĕскерсĕр, урăх çук ĕнтĕ“,— тенĕ Владимир Ильич Октябрь революцийĕ 4 çул тултарнине уявланă чухне (*Ленин*, т. XXVII, стр. 26).

---

[1] Ленинăн XVI т. 368—369 стр. пăхăр.

1913 çулта буржуаллă демократин формисене тĕпчесе вĕренсе, буржуазин ултавлă сăн-сăпатне уçса палăртса Ленин проституци ыйтăвĕ çинче те чарăнса тăрать. Буржуази хĕрарăмсем хăйсен ўт-пĕвĕпе сутă тунине кăмăлласа пырать, колонири хўтĕлĕхсĕр пурăнакан подросткăсене—хĕрачасене ирĕксĕрлет, çав вăхăтрах хăй проституципе кĕрешем пекки туса пырать, тесе палăртать Ленин.

Çав ыйтăва Владимир Ильич 1919 çулти декабрьте тепĕр хут тапратать, вăл ун чухне епле вăл „ирĕклĕ, культурăллă" Америка хăй çавăрса илнĕ çĕршывсенче аскăн çурчĕсем валли хĕрарăмсем сутăн илнине паллă тăвать[1].

Çак ыйтупа пĕрле çыхăнтарса Владимир Ильич ача пăхса ўстерес ыйту çинчен те сăмах тапратать, вăл хăшпĕр интеллигентсем рабочисене—ача кирлĕ мар, вăл вĕсене çуклăха, тĕрлĕ инкеке кĕртсе ярать, тесĕ чĕннишĕн тарăхать. Ку вакбуржуаллă шухăш. Рабочисем çакăн çине урăхла пăхаççĕ. Ачасем вĕсем—пирĕн малашнехи пуласлăх. Çуклăха т. ыт. илес пулсан—вăл пĕтерме пултармалла япала. Эпир капитализма хирĕç кĕрешетпĕр: çĕнтерсессĕн, эпир хамăр ачасем валли çутă пуласлăх тăватпăр.

1916 çулта пацифизма хирĕç кĕрешсе, унăн тĕрĕсмарлăхне уçса палăртса, рабочи класа хĕçпăшаллă кĕрешў кирли çине кăтартса Владимир Ильич работницăсене, вĕсен хăйсен ачисене пăшала алла тытса буржуазие хирĕç кĕрешме, пăшала алла тытса рабочи класăн ĕçне хўтĕлеме вĕрентмелле, тесе чĕннĕ.

Тата, юлашкинчен, 1916—1917 çулсенче, социализмлă революци çывхарнине сиссе, социализм строительстви мĕнле пулмалли çинчен тата çав строительствăна массăна епле хутшăнтармалли çинчен шухăшласа ларса Владимир Ильич хĕрарăмсене общеставăллă ĕçе хутшăнтарасси çине уйрăмах пысăк тимлĕх хурса пăхать, хĕрарăмсене пурне те общеставăллă ĕçе явăçтарма кирли çинчен çырать. Ку ыйтăва вăл çав тапхăрти *сакăр* статьяра çутатса парать. Унăн çав ыйтăвĕ социализмра пĕтĕм общеставăллă пурăнăçа çĕнĕлле организацилес ыйтусемпе çыхăнать. Унăн çав ыйтăвĕ массăна общеставăллă ĕçĕн процесĕнче воспитани парса хĕрарăмсен чи кая юлнă сийне государствăпа ертсе пыма хутшăнтарас ыйтупа çыхăнать.

Общеставăллă ĕç—ертсе пырас ĕçе ĕçлеме вĕрентет.

„Эпир утопистсем мар,—çырнă Октябрь умĕн Ильич.—Эпир пĕлетпĕр, хăть те хăш чернорабочи те, хăть те хăш кухарка та государствăпа ертсе пыма халех пултараймаççĕ-ха. Ку тĕлĕшпе эпир кадетсемпе те, Брешковскаяпа та, Церетеллипе те килĕшетпĕр. Анчах çак гражданесенчен эпир ак çакăнпа уйăрăлса тăратпăр: эпир государствăпа *ертсе пыма*, ертсе пырассин яланхи, кулленхи ĕçне туса пыма пуянсемпе пуянсен çемьисенчен тух-

[1] *Ленинăн* XXIV т., 546 стр. çине пăхăр.

нă чиновниксем кăна тума пултараççĕ текен шухăшран пĕтĕмпех уйăрăлма хушатпăр. Государствăпа ертсе пыма *вĕрентес* ĕçе ăстăнлă рабочисемпе салтаксен туса пымалла, çав ĕçе халех тапратса ямалла, урăхла каласан, çав вĕрентĕве пĕтĕм ĕççыннине, пĕтĕм чухăна хутшăнтарма халех *тытăнмалла*, тетпĕр эпир". (*Ленин*, XXI т., 266 стр.).

Эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ, хресчен хĕрарăмĕсене, колхозницăсене, работницăсене ертсе пырас ĕçе хутшăнтарма Совет влаçĕ мĕн кирлине пурне те турĕ. Эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ, ку фронтра епле пысăк ÿсĕмсем тунине.

Граждан вăрçи хыççăн, мирлĕ строительство ыйтăвĕсем чи мала тухса тăнă вăхăтра, Сталин патне çырнă çырăвĕсенче тата губженотделсенче ĕçлекенсен совещанине саламласа Владимир Ильич: мирлĕ строительствăра хĕрарăмсем чи малти вырăнсенче пулмалла, вĕсене пурне те РКИ ĕçне, контроль тăвас ĕçе хутшăнтармалла, тесе çырать.

Хĕвелтухăçри хĕрарăмсем вăраннине Владимир Ильич хĕрÿллĕ саламлать. Царизм тата капитализм пусмăрĕнче пурăннă вак халăхсене çĕклес ыйтăва Ильич уйрăмах пысăк вырăна хунă. Паллă та ĕнтĕ, мĕншĕн вăл Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен советла облаçĕсемпе республикисен представительницисен совещанине çав тери хĕрÿллĕ салам янă.

Коммунистла Интернационалăн II-мĕш конгресĕн ÿсĕмĕсем çинчен каланă чухне Ильич çакна паллă тăвать:

„Пĕтĕм тĕнчери работницăсен конференцине конгреспа пĕр вăхăтрах организацилепине пула, конгресс хĕрарăмсен коммунистла движенийĕпе çыхăнса тăрассине çирĕплетет", (*Ленин*, XXV т., 371 стр.).

Халĕ, партин XVII-мĕш конференцин резолюцийĕсем ĕççыннисен сарлака массине коммунизмла воспитани пама кирли çинчен уйрăмах паллă тунă чухне, капитализм юлашкисемпе кĕрешес ĕçе пур фронтпа та сарса пырасси çинчен калаçнă чухне, пĕтĕм тимлĕхе культурăллă ĕçе анлăн туса пырасси çине, техникăна алла илесси çине, нацилле облаçсемпе республикăсен культурине çÿлти пусăма хăпартасси çине янă чухне, халĕ, пирĕн социализмлă промышленность питĕ пысăк ÿсĕмсем тунă, хĕрарăмсен çĕнĕ йышлă кадрĕсем промышленноçа хутшăнсах пынă чухне, ялхуçалăхĕ механизациленсе пынă, колхозсемпе совхозсем ялхуçалăхĕн тĕп формисем пулса тăнă чухне,—халĕ ĕнтĕ хĕрарăмсене ирĕке кăларас ĕçе вĕçне çитерме пулать, халĕ ĕнтĕ Ленин ку тĕлĕшпе каласа хăварнисене пурне те пурнăçлама пулать.

## „ХĔРАРĂМ СССР-чи СОЦИАЛИЗМ СТРОИТЕЛЬСТВИНЧЕ" ЯТЛĂ БРОШЮРĂН УМСĂМАХĔ

„Работница" журнал тухма пуçлани 10 çул тултарнă ячĕпе саламласа Сталин юлташ ăна „хĕрарăмсен пролетарилле массине социализм çĕнтерессишĕн кĕрешес шухăшлă воспитани парас

ёçре тата пирĕн учитель—Ленин каласа хăварнисене пурнăçлас шухăшлă тăвас ёçре ўсĕмсем тума“ сĕннĕ. Çак директива ЦИК-па ВЦИК сессийĕсенче пулнă хĕрарăмсен совещанине те хавхалантарнă. Вăл совещани 1933 çулхи январьте пулнă, унта хĕрарăмсем хушшинчи ёçе вăйлатас ыйтăва сўтсе-явнă.

Çак совещани умĕн пулса иртнĕ ЦК-па ЦКК-н пĕрлешўллĕ пленумĕнче парти хальхи лару-тăрува хак панă. Пленумра тăвата çулта тултарнă пĕрремĕш пятилеткăри ўсĕмсен итогне тунă. Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче çак ўсĕмсен удельнăй виçине, унăн пĕтĕм тĕнчери пĕлтерĕшне питĕ уççăн палăртнă, вăл, пятилетка планне тăвата çулта тултарни—Ленин хушса хăварнине, кучухнехи шултра промышленноçăн социализм строительствинчи ролĕ çинчен каланăскерне, пурнăçлани пулать, тесе каланă. Шăпах йывăр индустрие, ытти промышленноççене ўстерме пулăшаканскерне, аталантарасси çинчен каланă Ленин. Индустри аталанăвĕн хăвăртлăхĕсем çак çулсенче питĕ пысăк пулчĕç, вăл хăвăртлăхсем энтузиазма пула, ёççыннисен миллионĕсем ударлă ёçленине пула çеç пулма пултарнă. Социализмра кăна çавăн пек хăвăртлăхсем пулма пултараççĕ. Анчах ёç пĕтмен-ха, стройка малалла пĕр чарăнмасăр пырать. Пĕрремĕш пятилетка шултра индустри аталаннипе кăна мар паллă. Вăл çавăн пекех пĕтĕм ялхуçалăхне социализмлă хуçалăх çине куçарнипе те паллă. Хресченсен вак хуçалăхĕсене коллективизацилени, вĕсене шултăра хуçалăхсене пĕрлештерни, унта, çĕр ёçне, наука ўсĕмĕсен никĕсĕ çинче лайăхлатнă ялхуçалăх машинĕсемпе ёçлеççĕ,—çакă каллех Ильич хушса хăварни пулса тăрать. Хамăрăн Совет çĕршывĕн оборонине тĕреклетме хушса хăварнă пире Ленин. Ку енĕпе те çак пятилеткăра эпир пысăк ўсĕмсем турăмăр.

Пленумра тухса сăмах калакан юлташсем çак ўсĕмсем çинчен питĕ уççăн кăтартса, вĕсен çулĕ çинче пысăк йывăрлăхсем тăни çинчен, çапах та çав йывăрлăхсене вĕсем çĕнтерни çинчен каларĕç.

Пленумра ўсĕмсем çинчен анчах мар калаçу пулнă. Пленумра хальхи лару-тăру задачисене те çутатса панă: хальхи вăхăтра ял çине пысăк тимлĕх хурса пăхмалла, хальхи вăхăтра класс кĕрешĕвĕн центрĕ ялта, класс тăшманĕ унта вăйлăрах ёçлет, хăй вăйне вăл унта пухнă, вăл ял каяюлнăлăхĕпе тата ёлĕкхи вак харпăрлăх психологийĕн юлашкийĕсемпе усă курать, вăл колхозсене аркатма тăрăшать, тесе палăртнă унта. Коллективизацишĕн кĕрешесси вăл—колхозниксен ёçĕ кăна мар, вăл—пĕтĕм çĕршывăн, пуринчен малтан рабочи класăн, унăн малти отрячĕн—коммунистсен партин ёçĕ. Колхозсене класс тăшманĕпе—кулаксемпе, ёлĕкхи офицерсемпе, урăх тĕсленнĕ белогвардеецсемпе кĕрешме пулăшас пулать. Партин те, рабочи класăн та колхозсене пулăшу парас пулать.

„Колхоз вăл, советсем *политикăллă* организацин социализмлă форми пулса тăнă пекех, *хуçалăхла* организацин соци-

ализмлă формн пулса тăрать. Колхозсем те, советсем те, пирĕн революцин питех те пысăк çĕнтерĕвĕ, рабочи класăн питех те пысăк çĕнтерĕвĕ пулса тăраççĕ. Анчах колхозсемпе советсем организацин *формийĕ*, чăн та, социализмла форма пулин те, çапах та организацин *форми* кăна пулса тăраççĕ. Кунта пурте çак форма ăшне мĕнле *содержани* кĕртсе вырнаçтарнинчен килет... Ĕç, пуринчен малтан, советсен ĕçĕн содержанийĕнче, советсен ĕçĕн характерĕнче, ĕç кунта советсене кам,—революционерсем е контрреволюционерсем ертсе пынинче...

Колхозсем çинчен те çавнах калас пулать. Хуçалăх организацин социализмлă форми пулса тăракан колхозсем, пуçĕнче революционерсем, большевиксем, коммунистсем тăраççĕ пулсан, вĕсем хуçалăх строительствинче тĕлĕнмелле ĕçсем тума пултараççĕ. Тепĕр майлă та—колхозсенче эсерсем, меньшевиксем, Петлюра офицерĕсем тата ытти белогвардеецсем, деникинецсемпе колчаковецсем ĕçе çавăрттарса тăраççĕ пулсан,—колхозсем вара пĕр вăхăтлăха тĕрлĕрен контрреволюциллĕ ĕçсене хӳтĕлесе тăракансем пулма пултараççĕ" (*Сталин*, Вопросы ленинизма, 519—520 стр. 10-е издание).

Парти вара яла тата колхозсене пулăшма класс кĕрешĕвĕн опорнăй пунктне—МТС çумĕнчи политотделсене туса хурать, унта вăл хăйĕн чи лайăх работникĕсене, лайăх революционер-большевиксене ярать.

ЦК-па ЦКК пленумĕн решенийĕсем пленум хыççăн пулнă ВЦИК-па ЦИК сессийĕсен тимлĕхне пĕтĕçтернĕ ыйтăвĕсене палăртнă. Сессисенче те, ЦК-па ЦКК пленумĕнчи пекех, вăя пухасси пынă. Кашни ăстăнлă совет работникĕ, унăн кĕрешĕве хатĕр тăмалла иккенне пĕлсе тăнă, çакна ЦИК-па ВЦИК сессийĕсенче пулнă хĕрарăмсем те туйнă. Вĕсенчен нумайăшĕсем—парти çулйĕрĕшĕн, Ленин хушса хăварнине пурнăçлассишĕн активлă кĕрешекенĕсем, халĕ ĕнтĕ тата та тачăрах пĕтĕçме кирли çинчен, ӳлĕмхи кĕрешӳ валли тата та лайăхрах хĕçпăшалланма кирли çинчен йăлтах ăнланса илчĕç.

Çак кĕрешĕве хатĕр пулнин ялавĕ айĕнче пулса иртнĕ те сессисенче пулнă хĕрарăмсен пухăвĕ, ЦК-н агитмассăллă отделĕ пухнăскер.

Çак совещанире тĕп ыйту—хĕрарăмсем хушшинчи ĕçе хальхи лару-тăрувăн задачисем хушнă пек çĕнетсе урăхлатасси пулнă. Советсенче ĕçлекен хĕрарăмсем хушшинче туса пыракан ĕçе вăйлатма кирлĕ, советсем тавра хĕрарăмсен сарлака массине пĕтĕçтермелле.

Хале ĕнтĕ пур крайсемпе облисполкомсенче те хĕрарăмсем хушшинче ĕçлекен секторсене организацилевĕ. Хула совечĕсен орготделĕсем çумĕнче женсекторсем тунă. Орготделсем çук çĕрте хула совечĕсемпе район совечĕсенче хĕрарăмсем хушшинче ĕçлеме инструкторсем уйăрнă.

Çак решенин пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Эпир пĕлетпĕр, хĕра-

рамсен обществалла ĕçне Ленин мĕнле пысăк вырăна хунă. Обществăллă ĕç вăл çынна çĕнĕлле воспитани парать, ăна коллективист тăвать, коллективлăха туякан çын вара пĕтĕмĕшле интереса малти вырăна хурать, вăл вара хăйĕн пурăнăçне коллектив пурăнăçĕпе пĕрлештерет. Эпир пĕлетпĕр, обществăллă ĕçре хутшăнса ĕçлесси работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсен йăлине кĕчĕ. Хĕрарăмсен масси çав ĕçре епле çитĕнсе пынине эпир пĕлетпĕр.

Анчах та обществăллă ĕçпе обществăллă ĕç уйрăм. Обществăллă ĕçĕн содержанийĕ, унăн калăпăшĕ паха. Хĕрарăмсен обществăллă ĕçĕ вĕсен ĕçлев условине, пурăнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшни çинче çеç чарăнса тăмалла мар, хĕрарăмсен интересĕсемшĕн çеç ан пултăр, пулмалла та мар. Çакăн пек характерлă обществăллă ĕç работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсен ăнланăвне анлăлатман пулĕччĕ, вĕсенчен социализмшăн кĕрешекен борецсем тăвайман пулĕччĕ.

Эпир пĕлетпĕр, Владимир Ильич хĕрарăма шăпах çавăн пек хĕсĕк, çемье интересĕсенчен çалса кăларасси çине кăтартса панă, вăл пĕтĕм пурăнăça социализмлă урăхлатса çĕнетес çĕрте хĕрарăмсене анлăн хутшăнтарасшăн пулнă. Хĕрарăмăн государствăна ертсе пыма вĕренмелле, унăн çак ĕçре ÿсмелле, кил хушшинче ĕçлекен хĕрарăмсенчен—хĕрарăм-общественница пулмалла.

Хĕрарăмсен миллионлă массине коммунизм шухăшлĕ тăвас задача пирĕн умра халĕ те, Владимир Ильич пурăннă вăхăтри пекех, пĕтĕм пысăкăшĕпе тата нихăçанхинчен çивĕчрех тăрать. Задача çавах, анчах ĕçĕн формине тарăнлатас пулать, вăл пирĕн социализмла строительствăн аталанăвĕпе пĕр саслă янратăр.

Халĕ çеç пулса иртнĕ ЦК-па ЦКК пленумĕнче пятилеткăн итогĕсене тунă терĕмĕр, унтах халăх хуçалăхне малалла социализмла реконструкцилесе пырас задачăсене те çутатса панă; пленум социализм çĕнтерессишĕн кĕрешсе пымалли çула çутатса панă. Ĕçе мĕнле майпа лайăхрах организацилесси, ăна мĕнле çирĕплетесси, çак çĕнсе илнĕ çитĕнÿсен никĕсĕ çинче ăна малалла мĕнле çирĕппĕн сарса ярасси,—халĕ çак ыйту ĕçĕн пур облаçĕ умĕнче те тăрать. Вăл хĕрарăмсен нумай миллионлă масси хушшинчи ĕçсен умĕнче те тăрать. ВЦИК президиумĕн 1932 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнче пулнă решенийĕ çак ыйту çине: работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсен советсен ĕçне хутшăнса ĕçлессине вăйлатас пулать, вăл ĕçе çÿлти пусăма хăпартмалла, хĕрарăмсен хушшинчи актива советсем тавра пĕтĕçтермелле, тесе ответлет. Çакă ĕнтĕ Ленин хушса хăварнисене пурнăçламалли çул пулать.

Советсен ĕçĕ халĕ совет влаçĕ пуçланнă чухнехи пек мар, вăл сложнăйрах, йывăртарах, пысăк сознанилĕ пулма ыйтать, вăл ĕçе организацилессине вăйлăн пĕлме ыйтать. Çак çулсенче работницăсемпе колхозницăсем те çитĕнчĕç ĕнтĕ. Çакна ЦИК-па ВЦИК-ăн январьти сессисенче хĕрарăмсем сăмах тухса калани-

сенчен те лайăх куртăмăр. Колхозсен ĕçне, предприятисен ĕçне хĕрарăмсене массăллăн хутшăнтарса пыни хĕрарăмсене социализмлă стройкăра социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлеме май парать, вĕсен ăстăнне вăратать. Хĕрарăмсем—работницăсемпе колхозницăсем халĕ советсене, малтанхи пек мар, калăпăр, вăрçăллă коммунизм е нэп вăхăтĕнчипе танлаштарсан, пачах урăх çын пулса пыраççĕ.

Çак ӳсĕмсене эпир хăш чухне хаклама та пĕлместпĕр. Çак ӳсĕмсене ЦИК-па ВЦИК членĕсен, хĕрарăмсен хушшинче ĕçлес ыйтупа пухăннă совещанинче пулнăскерсен, сăмахĕсенчен лайăх куртăмăр.

Хула совечĕсенче, ялсовечĕсенче, район совечĕсенче хĕрарăмсем хушшинче ĕçлес ĕçсем хĕрарăмсен интересĕсем майлă çеç ан пулччăр. Женсекторсен задачи—секционеркăсене вĕсем хăть те хăш секцинче ĕçлеççĕ пулсан та, пулăшу парасси; çав пулăшăва секционеркăсем хытă кĕтеççĕ. Хĕрарăмсен каяюлнăлăхне эпир тĕппех пĕтереймен-ха. Советсен çумĕнчи женсекторсен задачи—секционеркăсене пулăшу пама инженерсене, техниксене, агрономсене т. ыт. ытларах хутшăнтарасси пулать. Парти ертсе пынипе, унăн çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пынипе работницăсемпе колхозницăсем чăн-чăн большевикла ĕçе анлăн сарса пырĕç.

## КОЛХОЗСЕН ХĔРАРĂМСЕНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАС ĔÇРИ РОЛĔ[1]

Совет влаçĕ хăйĕн малтанхи утăмĕсенчех хĕрарăма арçынпа пĕртан правалла турĕ. Пĕтĕм Российăри работницăсен пĕрремĕш с'ездĕнче (1918 ç., ноябрĕн 19-мĕшĕнче) Ленин çапла пallă тунă: „Капитализмла государствăсенче пĕринче те, чи ирĕклĕ республикăсенче те, хĕрарăмсен пĕртан правалăхĕ çук... Пирĕн закон историре пирвайхи хут хĕрарăмсене правасăр тăвакансене пурне те чĕрсе пăрахрĕ. Анчах та ĕç закон çинче мар... Хĕрарăмсен положенийĕ ку таранччен çапла, чуралăхра тесе каламалла; хĕрарăм хăйĕн кил хуçалăхĕпе пусмăрланнă, çакăнтан ăна социализм, вак хуçалăхран шултра хуçалăха куçса, çĕре пĕрле ĕçлеме пуçласан çеç, çăлма пултарать“ (*Ленин*, XXIII т., 285—286 стр.).

1919 çулти сентябрĕн 23-мĕшĕнче, Мускав хулинчи партире тăман хĕрарăмсен-работницăсен IV-мĕш конференцинче Ильич çапла каланă: „Çĕрпе усă курас çĕрте харпăрлăха пĕтерсе, çавăн пекех фабрикăсемпе тата заводсемпе усă курас çĕрте те харпăрлăха пĕтĕмпех пĕтерес патне çитерсе, Совет влаçĕ пĕтĕм ĕçсыннине, партире тăраканнисене кăна мар, партире тăманнисене те, арçынсене кăна мар, хĕрарăмсене те хуçалăх строительствине хутшăнтарма тăрăшать. Пĕтĕм Российĕпе çĕршер хĕрарăм вырăнне миллион-миллион хĕрарăм хутшăнсан çеç çак Совет влаçĕ пуçарнă ĕçе малалла туса пыма пулать. Ун чухне вара, эпир

[1] Хаçатсенче 1933 çулти февральре пичетленнĕ тата „Заветы Ленина о раскрепощении женщины“ сборникре пичетленнĕ.

шанатпăр, социализм строительствин ĕçĕ çирĕпленет. Ун чухне вара ĕççыннисем помещиксемсĕр, капиталистсемсĕр пурăнма тата хуçалăха ертсе пыма пултарнине ĕнентерĕç. Ун чухне вара социализм строительстви çав тери çирĕп тăрĕ, Совет Республикĕшĕн вара ютçĕршывri тăшмансем те, хамăр Российăри тăшмансем те хăрушă пулмĕç" (*Ленин*, XXIV т., 472 стр.).

1920 çулти февральте, Мускав советне суйланă май Ильич çапла каланă: „Помещиксемпе капиталистсем, купцасем пур çĕршывсенче закон тăрăх та хĕрарăмсемпе арçынсен хушшинче пĕртанлăх пулма пултараймасть.

Помещиксемпе капиталистсем тата купцасем çук çĕрте, ĕççыннисен влаçĕ çав эксплоататорсемсĕрех çĕнĕ пурăнăç тунă çĕрте закон тăрăх хĕрарăмсемпе арçынсен хушшинче пĕртанлăх пур.

Анчах ку сахал-ха.

Закон тăрăх пĕртан праваллă туни—пурăнăçра тан пулнине пĕлтермест-ха.

Пире хĕрарăм-работница закон тăрăх кăна мар, пурăнăçра та арçын-работникпе пĕртан пулни кирлĕ. Çавă пултăр тесен, хĕрарăм-работницăсен обществăллă предприятисене тата государствăна ертсе пырас ĕçе ытларах та ытларах хутшăнса пырас пулать.

Ертсе пырса хĕрарăмсем хăвăрт вĕренеççĕ тата арçынсене те хуса çитеççĕ" (*Ленин*, XXV т., 40 стр.).

1920 çулти декабрьте Пĕтĕм Российăри губженотделсен совещанине саламласа Владимир Ильич çапла çырнă: „Шăпах халĕ, вăрçă çук чухне, мирлĕ организаторла ĕç, шанатăп, нумайлăха малти плана тухса тăнă чухне хĕрарăмсем парти тата совет ĕçне хутшăнса ĕçлени питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать, çав ĕçре хĕрарăмсем малти вырăнта пулмалла, вĕсем, паллах, пулаççĕ те" (*Ленин*, XXV т., 516 стр.).

Эпир пĕлетпĕр, хресченсен вак хуçалăхĕсене пĕрлештерсе, çĕре пĕрлешсе ĕçлемелле тăвассине Ленин мĕнле пысăк вырăна хунине. Эпир пĕлетпĕр, çак ыйту унăн пуçĕнчен нихăçан та тухман. Çакăнта пулнă унăн эсерсемпе килĕшменнин тымарĕ, çак ыйтăва вăл 1918 çулта ялти чухăнсемпе сӳтсе-явнă, 1919 çулта унта-кунта пуçăннă коммунăсемпе ялхуçалăх эртелĕсен представителĕсемпе те сӳтсе-явнă, çакăн çинченех вăл хăйĕн юлашки статьисенче те çырнă. Вăл, коллективизаци анлăн сарăлса кайтăр тесен, йывăр промышленнăçа аталантармалла, ялхуçалăх машинисене хатĕрлемелле, ялăн культурлăхне тата пĕлĕве хăпартмалла, тесе шутланă.

1919 çулти декабрьте, çĕр ĕçлекен коммунăсен тата ялхуçалăх эртелĕсен пĕрремĕш с'езчĕ тĕлне, пурĕ те 2 пин коммуна тата 4 пин ялхуçалăх эртелĕ çеç пулнă. Çав с'ездра Ильича: кулак вăл— коллективизацин тăшманĕ, вăл помещиксенчен туртса илнĕ çĕрпе

машинăсене хăй аллине çавăрса илесшĕн, кунта кĕрешӳ кирлĕ, хуçалăха çĕнĕлле организацилес пулать, ĕçе ăнланса илсе тумалла, хастарлă, коллективлă ĕç кирлĕ, тесе ăнлантарса пама тивнĕ-ха.

Граждан вăрçи, 1921 çулхи выçлăх, хуçалăх строительствин йывăрлăхĕсем коллективизацие чарса тăнă. Хуçалăх ĕçĕ вăйлăн сарăлсан, шултра индустрие тусан, яла ялхуçалăх машинĕсем, тракторсем парсан, халăхăн пĕтĕм культури хăпарсан çеç коллективизаци малалла шурĕ. Ялăн сăнĕ йăлтах улшăнчĕ. Анчах халĕ ялта класс кĕрешĕвĕ çивĕч пырать-ха. Çак кĕрешӳре колхозсене пулăшу пама парти хăйĕн чи лайăх работникĕсене 15 пин çынна МТС çумĕнчи политотделсене ĕçлеме ячĕ.

1933 çулти февралĕн çурринче пулса иртнĕ колхозниксен-ударниксен с'езчĕ çĕре пĕрле ĕçлесси мĕнле сарăлса пыни çинчен уççăнах кăтартса пачĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн 6 пин колхоз мар, 200 пин колхоз. Сăмах унта колхозсенчи ĕçсене мĕнле организацилесси çинчен пычĕ. С'ездра колхозницăсем нумай пулчĕç. Колхоз строительствине хутшăнса хресчен хĕрарăмĕ ӳсет, ертсе пыма вĕренет, кулаксемпе, класс тăшманĕсемпе вирлĕ кĕрешет. Ахальтен мар ĕнтĕ çак с'ездра хăйĕн сăмахĕнче, пирĕн малашнехи пур ĕçре те пысăк влияни параканнинче Сталин юлташ çапла каланă:

„Ĕç пуринчен малтан, ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме колхоз движенийĕ питех те лайăх, пултаруллă хĕрарăмсене чылай кăларса тăратнинче пулать. Пăхăр-ха с'езд çине, унăн составĕ çине, вара эсир хĕрарăмсем тахçанах ĕнтĕ кая юлнисен шутĕнчен малта пыракансен ретне куçнине курăр. Колхозсенче хĕрарăмсем—пысăк вăй. Çак вăя ĕçе ямасăр тăни вăл айăплă ĕç туни пулать. Пирĕн обязанность—колхозсенче хĕрарăмсене малалла кăларасси, вăл вăя ĕçе ярасси пулать...

Колхозницăсене хăйсене илес пулсан,—тет малалла Сталин юлташ,—вĕсен вара колхозсем хĕрарăмсемшĕн мĕнле вăй тата мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулса тăнине асра тытас пулать, вĕсем колхозра кăна арçынпа пĕртан пулма пултарнине асра тытас пулать. Колхозсемсĕр—танмарлăх, колхозсенче—правăсен пĕртанлăхĕ. Колхозница юлташсем çакна асра тытчăр тата колхоз йĕркине вĕсем куç шăрçине сыхланă пекех сыхлаччăр" (Сталин, Вопросы ленинизма, II чăвашла издани, 404 стр.).

## 1934 ÇУЛТИ МАРТĂН 8-МĔШĔ [1]

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ вăл—пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхлĕх кунĕ. Вăл темле специальнăй „хĕрарăмсен" кунĕ мар, вăл хĕрарăмсем пуçтарăнса хăйсене тивнĕ хăрăк ӳпе çинчен: „Доля ты горькая, долюшка женская, вряд ли труднее сыскать" тесе макăрса лармалли кун мар.

Работницăсем кăна мар, пĕтĕм пролетариат хĕрарăмсене чуралăх сăнчăрĕнчен, крепостла тата капитализмла строй сăнчă-

[1] 1933 ç. декабрĕн 20-мĕшĕнче „Кочегарка" журналта пичетленнĕ.

рĕнчен, вак харпăрлăх уклачĕн сăнчăрĕнчен хăтарса ирĕке кăларассишĕн кĕрешсе пынă чухне, хĕрарăма вучах умĕнче, хăйĕн хуçалăхĕнче тата ачи-пăчисем патĕнче çыхса усранă чухне, хĕрарăм политикăллă тата обществăллă ĕçрен татăлса пуранни чухне тата вăл ирсĕр сăмахсен тата тĕн сĕрĕмĕн влаçĕнче пуранна чухне пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ—*кĕрешў* кунĕ пулса тăрать.

Хĕрарăмсене пачах ирĕке кăлармасăр, вĕсене арçынсемпе формально кăна мар, ĕçре, пурăнăçра пĕртан тумасăр пролетариат çĕнтерме, социализмлă строй, тутă, çутă, культурăллă, сывлăхлă пурăнăç тума пултараймасть. Ахальтен мар ĕнтĕ Маркс, Энгельс, Ленин тата Сталин ĕçхĕрарăмĕсене ирĕке кăларма пĕтĕм пролетариатăн кĕрешме кирли çинчен яланах çапла каласа асăрхаттарнă.

Политикăллă влаçшăн, пролетариат çĕнтерессишĕн пынă кĕрешўре работницăсем рабочисемпе алла-аллăн тытăнса пынă, вĕсем хăйсен кунçулне те шеллемен, баррикадăсенче вилнĕ, граждан вăрçи фронтĕнче пуçĕсене хунă. Эпир вĕсен ятне асăнса чыслатпăр. Эпир Клара Цеткин ятне асăнса чыслатпăр. Вăл пĕтĕм тĕнчери пролетариат умне ĕçхĕрарăмĕсене ирĕке кăларас ыйтăва пĕтĕм пысăккăшĕпе кăларса тăратас тата хĕрарăмсене ирĕке кăларассишĕн пыракан кĕрешĕве пролетариатăн кĕрешĕвĕпе çыхăнтарас тесе питĕ нумай ĕçленĕ. Эпир çапăçура вилнĕ хамăр коммунистка юлташсене асăнса чыслатпăр. Эпир Австри работницисем, Вена урамĕсенче тата Австрин ытти хулисенче геройла çапăçса вилнĕскерсем çинчен юратса шухăшлатпăр. Эпир Франци работницисене саламлатпăр. Китай, Япони ĕçхĕрарăмĕсене, пĕтĕм тĕнчери работницăсемпе ĕçхĕрарăмĕсене салам яратпăр. Эпир пĕлсех тăратпăр—пĕтĕм тĕнчери социализмла революцире ĕçхĕрарăмĕ кирлĕ вырăн йышăнса тăрĕ.

1934 çулти мартăн 8-мĕшĕ пĕтĕм тĕнчери лару-тăрувăн хĕрўллĕ тапхăрĕнче пулса иртет. Вăл лару-тăру—юлашки, татăклă çапăçăва вăй пухни пулать. Вăй пухаççĕ, хатĕрленеççĕ ĕççыннисен массисем, вăй пухать капитализм та.

Ленин пире пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхе çирĕплетме хушса хăварчĕ. Сталин юлташ хăйĕн партин XVII с'ездĕнче каланă сăмахне çапла каласа пĕтерне:

„... эпир мĕнпур çĕршывсенчи пролетарисен ударлă бригадин хисеплĕ ятне хамăрăн ĕçпе тўрре кăларма тивĕçлине пĕлтерет. Çакă пире хамăр çĕршывра социализм татăклăнах çĕнтерессишĕн, социализм пур çĕршывсенче те çĕнтерессишĕн лайăхрах ĕçлеме, лайăхрах кĕрешме хушать.

Çакăнтан... çапла вывод тумалла: *пролетариллĕ интернационализм ĕçне, мĕнпур çĕршывсенчи пролетарисен тăванлă союзĕн ĕçне вĕçне çитиех тĕрĕс тытса пымалла...*

Сывă пултăр Марксăн, Энгельсăн, Ленинăн аслă та никам çĕнтерейми ялавĕ! (*Сталин*, Вопр. ленинизма, 467 стр., II-мĕш чăв. изд).

Хамӑр çулпуçӑн çак чӗнӗвне эпир мартӑн 8-мӗш кунӗнче, хӗрарӑмсене ирӗке кӑларас кӗрешӳри пӗтӗм тӗнчери пӗрлӗхлӗх кунӗнче, тепӗр хут аса илетпӗр. Пирӗн Совет Союзӗ капитализмла йӗри-тавралӑхра пурӑнать. Çакӑ пирӗн ӗçе питӗ йывӑрлатать. Анчах та çак йывӑр условисенче те эпир çӗнтертӗмӗр. Партин XVII с'езчӗ çав çӗнтерӗве паллӑ турӗ. Çак çӗнтерӳ ялхуçалӑхӗн никӗсне çӗнетсе урӑхлатнинче, ялта ӗнтӗ коллективла хуçалӑх пуçпулса тӑракан форма пулса тӑнинче пуринчен уççӑн палӑрчӗ. Çакӑ ӗнтӗ вак харпӑрлӑхлӑ психологи çине юпа çапса лартнине пӗлтерет.

Халӗ, кашнин хӑйӗншӗн тӑмалла, пӗр турӑ çеç пуриншӗн те тӑрать, текен халлап тӗп пулчӗ. Культурӑна вӑйлӑн хӑпартса пымалли йӑлана йӑлтах тепӗр май тумалли, хулапа яла таччӑн çыхӑнтармалли çул тап-такӑрах. Анчах кунта вӑй нумай хурас пулать-ха. Совет çӗршывӗнчи хӗрарӑмсен—работницӑсемпе колхозницӑсен—тӳпине пысӑк та ответлӑ ӗç лекет.

Унӑн çакна кӑна вӗçне çитиччен ӑнланса илмелле: планран ытлашши тӗртсе кӑларнӑ кашни метр пир-авӑр, заводра якатса кӑларнӑ кашни кустӑрма, вӑл тӑрӑшса ӳстернӗ пӑру, хальхи тапхӑрта вӑл çураки валли кӑтартуллӑ хатӗрленӗ кашни участок—çакӑ вӑл пӗтӗм тӗнче фронтӗнчи кӗрешӗвӗн пайӗ пулса тӑрать. Унӑн çакна вӗçне çитиччен ӑнланса илмелле: пӗлӳлӗхе алла илни, унпа пурӑнӑçра усӑ курма пӗлни вӑл—тӗнче фронтӗнчи кӗрешӳ валли хӗçпӑшалланни пулать.

Работницӑсемпе, колхозницӑсемпе, ялсовет председательницисемпе, ЦИК членӗсемпе калаçса пӑхӑр-ха, эсир совет влаçӗ вӑхӑтӗнче хӗрарӑмсен масси епле хытӑ çитӗннине, халӑх масси хушшинчен çӗнӗ пурӑнӑç организаторӗсем, социализм строительствин ӑстӑнлӑ, пултаруллӑ работницисем шӑтса ӳснине куратӑр. Кашни ӗçхӗрарӑмӗ ырми-канми вӗренет. Вӑл ӑнланать ӗнтӗ, унӑн татах нумай пӗлмелле, вӗренмелле.

Пирӗн аслӑ стройкӑра пур ӑрусем те таччӑн пӗрлешеççӗ. Пионеркӑсемпе комсомолкӑсем хӑйсен нумаймиллионлӑ речӗсемпе амӑшӗсене пулӑшма пыраççӗ, амӑшӗсене вӗсем хӑйсен çамрӑк хастарлӑхӗпе хавхалантараççӗ. Вӗренсе, кӗрешсе, ӗçлесе работницӑсемпе колхозницӑсем хӑвӑрт ӳсеççӗ.

Мартӑн 8-шӗнче эпир хамӑр Совет çӗршывӗнче Димитров юлташӑн амӑшӗпе тӗл пулма хавас. „Эпӗ Димитров юлташӑн амӑшне, вӑл çавӑн пек ывӑла пӑхса çитӗнтернӗшӗн салам яма сӗнетӗп“, тенӗ пӗр пионер февралӗн 28-мӗшӗнче, виçӗ ӑру пӗрле пухӑннӑ çӗрте. „Тата вӑл хӑй те лайӑх, çавӑнпа“,—хушса каланӑ тепӗр пионерки. Эпир пӗлетпӗр, епле йывӑр условисенче кӗрешнӗ Димитров. Амӑшӗ пулӑшса пурӑнна ӑна. Парижре, фашистсем вӗлернӗ Вильмен ятлӑ франци рабочине 200 пин рабочисемпе работницӑсем пытарнӑ чухне, Вильмен амӑшӗ кӗрешме чӗннӗ: „Эпӗ макӑрмастӑп, эпӗ хытӑ тарӑхатӑп“,—тенӗ вӑл. Пи-

рĕн те Павлик Морозовăн (ăна кулаксем вĕлернĕ) амăшĕ хăйĕн икĕ ывăлĕпе Мускава килсен, кĕçĕн ывăлĕ çинчен савăнăçлăн: „çитĕнсен коммунист пулать“, тенĕ.

Горькийĕн „Амăшне“, Ильичăн амăшне тата ытти юлташсен амăшĕсене, хăйсен ывăлĕ-хĕрĕсем патне тĕрмене çӳренĕскерсене, хăйсен ывăлĕ-хĕрĕсене пулăшса пынăскерсене, аса илсен, çакна калас килет: чăнах, аннем вăл—пысăк вăй.

Мартăн 8-мĕшĕнче—Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕнче иртнĕ кунçулсем çинчен аса илер, пролетариллĕ чăтăмлăхпа хĕçпăшалланар, Коммунистла Интернационал ертсе пынипе çирĕп пĕтĕçер, Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавĕ никам çĕнтерейми ялав пулса тăнине асра тытар.

## КОЛХОЗНИК-УДАРНИКСЕН II-МĔШ С'ЕЗДĔНЧЕ 1935 ÇУЛТИ ФЕВРАЛĔН 14-МĔШĔНЧЕ КАЛАНĂ САМАХ

Колхозниксемпе колхозницăсем! Мана большевикла салам калама ирĕк парсамăр. (*Алă çупаççĕ.*)

Юлташсем, нимĕç коммунистки Клара Цеткина Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен конференцинче, 1910 çулта, Копенгагенра пулса иртнĕскерĕнче, сĕнӳ пани 25 çул тултарать. Вăл унта, мартăн 8-мĕшне—хĕрарăмсене ирĕке кăларассишĕн пĕтĕм тĕнчери кĕрешӳ фрончĕн ӳсĕмĕсене пăхса тухмалли кун тăвас пулать, тесе сĕннĕ.

Помещиксемпе капиталистсем пуçпулса тăнă вăхăтра, хуçалăхăн ĕлĕкхи укладĕнче хĕрарăм чура пулса пурăннă. Акă ĕнтĕ çав кĕрешӳ 25 çул хушши пырать. Ленин çав кĕрешĕве мĕнле пысăк вырăна хунине эсир пĕлетĕр ĕнтĕ. Вăл тухса каланă сăмахсенче те, хăйĕн статьисенче те хĕрарăмсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешме кирлине пăллă тунă. Совет влаçĕ хăйĕн малтанхи утăмĕсенчех хĕрарăма арçынпа пĕртан правăллă турĕ. Анчах Владимир Ильич хĕрарăмсене пачах ирĕке кăларма социализмра кăна пулать тесе, пĕрре çеç мар каланă.

Акă, юлташсем, хăвăрах куратăр, çак уявра, Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ 25 çул тултарнă кунĕнче, эпир çапла калама пултаратпăр: хамăр Совет çĕршывĕнче парти ертсе пынипе, Сталин юлташ ертсе пынипе эпир хĕрарăмсене ирĕке кăларас фронтра та çĕнтертĕмĕр, эпир çĕнтернĕ пек çĕнтерӳ нихăш çĕршывра та çук-ха. (*Алă çупаççĕ.*)

Юлташсем, Владимир Ильич мĕн виличченех, пирĕн советсен çĕршывĕнче колхоз стройĕ çĕнтеретех, тесе çирĕп шаннă, вăл ун çинчен пĕр самантлăха та иккĕленсе тăман. Анчах вăл çав çул çинчи мĕнпур йывăрлăхсене те курнă. Йывăрлăхсем пысăк пулнă. Вăл йывăрлăхсене пурте эсир чăтса иртнĕ, чăтса иртнĕ те пĕлнĕ, епле кашни утăма кĕрешӳпе çĕнсе илме лекнине.

Парти руководствисĕр, кĕрешӳсĕр колхоз стройне нихăçан та çĕнсе илмен пулăттăмăр. Владимир Ильич вилсен, парти утăм хыççăн утăм Ленин çулĕпе пычĕ, çакă вара партие пирĕн çĕршывра социализм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерчĕ.

Кунта, юлташсем, Сталин юлташӑн уҫӑмлӑ шухӑшӗ, унӑн Ленин хушса хӑварнисене пурнӑҫлас ҫӗрти ҫирӗплӗхӗ уйрӑмах палӑрчӗ (*алӑ ҫупаҫҫӗ*). Малалла пыма, халӗ мӗншӗн кӗрешмелли ҫинчен вӑл яланах кӑтартса пычӗ. Ҫавӑнпа ӑна парти, рабочи класс тата колхозниксем ҫав тери юратаҫҫӗ, хисеплеҫҫӗ. (*Алӑ ҫупаҫҫӗ.*)

Сталин юлташ колхозниксен-ударниксен Пӗрремӗш с'ездӗнче каланӑ сӑмахне пурте астӑваҫҫӗ, пурте пӗлеҫҫӗ. Кунта тухса калакан хӗрарӑмсем пурте Сталин юлташӑн сӑмахне асӑнаҫҫӗ. Унӑн сӑмахӗ питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Ҫакӑ икӗ ҫул хушшинче с'езд иртнӗрен вара ялӑн пурӑнӑҫӗ йӑлтах улшӑнчӗ. Ялта мӗн тӑваҫҫӗ, хулара та ҫавна тӑваҫҫӗ. Колхоз стройӗ ҫирӗпленсе пынӑҫемӗн пирӗн пӗтӗм социализмлӑ строй, пирӗн Советсен ҫӗршывӗнче социализм ҫирӗпленсе пырать.

Анчах та, юлташсем, эпир хамӑр умра тӑракан задачӑсене курмӑш пулса тӑма пултараймастпӑр, юрамасть те. Тата та пысӑк ӗҫ тумалла пирӗн. Ленин хӑйӗн юлашки статьисенче культура фронтӗнче ӗҫлеме кирли ҫинчен паллӑ тунӑ, уйрӑмах ҫак ӗҫ ялта пысӑк вырӑн йышӑнса тӑмалла, тенӗ вӑл. Культурӑллӑ строительствӑн ӗҫне массӑсем хӑйсем ӗҫлеме пуҫӑнмалла, тенӗ вӑл. Ҫапла вара, юлташсем, эпӗ ҫакӑн ҫинчен уйрӑмӑнах чарӑнса тӑрасшӑн.

Тухса сӑмах калакан делегатсем вулав ҫурчӗсем, клубсем, культура ҫурчӗсем лартаҫҫӗ, тесе каларӗҫ. Ку, паллах, питӗ паха. Ҫавӑн пекех паха, вӗсем мӗнле ӗҫлесе пынине пӑхни те.

Ман шутпала, культурӑллӑ строительство ыйтӑвӗсене колхозниксен пухувӗсенче час-часах лартмалла.

Хӑв ӗҫлесе пыракан ӗҫрен уйӑрӑлма йывӑртарах. Ӗҫленӗ вӑхӑтрах вӗренме май туса парас пулать, анчах ҫакна тума культурӑллӑ ӗҫе хальхинчен темиҫе хут ытла тарӑнӑн та анлӑн туса пымалла.

Халӗ ентӗ колхозсем ҫав тери организованно, колхозниксем ӗнтӗ хӑйсен культурӑллӑ потребноҫне те шута илме пултараҫҫӗ. Колхозра миҫе ҫын хут вӗренмесӗр юлнӑ, сахал пӗлекенсем миҫе— ҫаксене шута илме пултараҫҫӗ вӗсем. Вӗсем тата малалла вӗренес текенсене те, ҫитӗннисем валли мӗнле шкул—пуҫламӗш шкул, общеобразовательнӑй е повышеннӑй шкул организацилеме, мӗнле курс уҫма тата мӗнле лекцисем туса ирттерме кирлине те пӗлме пултараҫҫӗ.

Халӗ ӗнтӗ пирӗн колхозла интеллигенци ӳсе пырать. Ӗнер эпир агроном юлташ сӑмаххине итлерӗмӗр. Вӑл ӳсентӑрансен пурӑнӑҫӗ ҫинчен, вӗсене ӳстересси ҫинчен каларӗ. Вырӑнсенче хӑйсен пӗлӳне колхозниксене пама пултаракан тата тӑрӑшакан ҫавӑн пек агрономсем, учительсем нумай. Колхозла интеллигенци колхозниксен пӗлӗвне хӑпартма пулӑшать, ун ҫине тимлӗн пӑхас пулать.

Культурӑллӑ ӗҫе колхозниксен ӑнланӑвне анлӑлатма пултармалла организацилес пулать.

Мана, юлташсем, 1917 çул аса килчӗ. *Ун* чухне мана Ленинград хулинчи малта пыракан Выборгски районӗнче ӗçлеме лекрӗ. Ыйту шкулсем çинчен тăчӗ. Рабочисем хăйсемех хутла пӗлмен çынсене шута илме тытăнчӗç, пӗр эрне те иртмерӗ пулӗ, хутла пӗлменнисене заводсем тăрăх шута илсе те тухрӗç, пӳлӗмсем çинчен те тăрăшрӗç. Кашни преподавателӗн занятисене рабочисем хăйсемех тӗрӗслетчӗç.

Халӗ ӗнтӗ, юлташсем, рабочисем кăна мар культурăланчӗç, колхозниксем те культурăланчӗç, вӗсем культурăллă потребноçа шута илессине организацилеме, ăçта, хăш вырăнта мӗн тумаллине палăртма, библиотекăра, клубра, культура çуртӗнче ӗçе йӗркелесе яма пултараççӗ ӗнтӗ.

Эпӗ, юлташсем, тепӗр ӗç çинче чарăнса тăратăп. Советсен VII-мӗш с'ездӗнче Молотов юлташ тунă докладран эсир ӗнтӗ пирӗн Конституцие мӗнле улшăнусем кӗртесси çинчен пӗлетӗр. Конституци çине ограниченисем кӗртсе çырнă чухне Владимир Ильич: Совет влаçӗн мероприятисене тăшманла элементсем хирӗçлесе пынăран çавнашкал ограниченисем тумалла пулнă, тенине те пӗлетӗр. Халӗ çавнашкал ограниченисем кирлӗ мар пулчӗç ӗнтӗ.

Хӗрарăмсене валли обществăллă ӗçе хутшăнса ӗçлемелли çул татах та анлăланать. Анчах та, юлташсем, çак ӗç те пӗлӗве хăпартассипе тачăрах çыхăнса тăмалла пултăр.

Халӗ ыйту çынсем çинчен. Библиотекăсенче, вулав çурчӗсенче, культура çурчӗсенче ӗçлеме час-часах ăнсăртран тупăннă ытти ӗçсенче юрăхсăр çынсене лартаççӗ. Çынсене суйласа илес ыйту вăл—питӗ пысăк та паха ыйту. Эпир куртăмăр ӗнтӗ, çынсене политотделсенче ӗçлеме илес ыйту епле пысăк вырăнта тăчӗ, парти унта хăйӗн чи лайăх работникӗсене суйласа илсе ячӗ. Çынсене культура фронтӗнче ӗçлеме суйласа илес ыйту та питӗ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Кашни культурăллă учреждени çумӗнчех лайăх актив пухса, ăна пăхса çитӗнтересси çине те тимлӗн пăхас пулать.

Ачасем енӗпе. Колхозсенче çакăн пеккисем те пулаççӗ: ача учрежденисем валли укçа-тенкӗсене салатмасăр перекетлеççӗ, ку кайран тумалли ӗç-ха, хуçалăха кирлӗреххисене маларах тăвас пулать, тесе шутлаççӗ. Ачасемшӗн, ачасене кирлӗ тăкаксемшӗн перекетлӗ пулма кирлӗ мар. Унтан тата, юлташсем, ача сачӗсемпе яслисем епле ӗçлесе пынине те асăрхас пулать. Мана пӗлтӗр колхозсенчи ача яслисене курма тӗл килчӗ. Вӗсемшӗн нумай тăкакланă ӗнтӗ, анчах ачисем унта питӗрӗнсе ларнă, кичемленнӗ, урама кăларман вӗсене. Ачасене пăхакан çамрăк хӗрачасем ним тума аптăраççӗ. „Мускавран вылямалли теттесем ярса памаççӗ", теççӗ,—а йӗри-тавра йӗкелсем темӗн чул, унтах строительство пырать, унта ачасем валли мӗн чухлӗ каска-пукан, хăма татки, турпас, чечексем те пур—пурте пур, анчах çаксене никам та илсе пымасть, ачасене уçăлса çӳреме илсе кай-

малли çула никам та тасатса памасть. Ясли валли тăкакне нумай туна, анчах ĕçĕ начар.

Унтан тата шкул ыйтăвĕсем çинчен калам. Паллах, халĕ ĕнтĕ шкул çине питĕ пысăк тимлĕх хуна тес пулать. Мана кунта ялсовет председателĕсемпе, шкула лайăхрах тăвас шутпа социализмлă ăмăртăва хутшăннăскерсемпе, калаçма тĕл килчĕ. Вĕсем мана шкул ĕçне хăйсем куллен-кун тĕрĕслесе тăни çинчен каласа кăтартрĕç. Эпĕ кунта делегаткăсенчен: халĕ ĕнтĕ хĕрачасене шкула яраççĕ-и?—тесе ыйтрăм. Вĕсем ман çине пăхрĕç те—епле вăл, халĕ мĕн тунине пĕлмест пулать: мĕнле амăшĕ вăл, халĕ хăй хĕрне вĕренме ямаскер. Шкул тулашĕнче те ачасене воспитани парассишĕн тăрăшмалла. Вак харпăрлăхлă строй пуçпулса тăна чухне, ашшĕ-амăшĕсем ачисене мĕнле воспитани пана-ха? Хăвăн килшĕн тăрăш, ыттисемшĕн нимĕн те ан шухăшла, тесе вĕрентнĕ вĕсене. Çапла вĕрентнĕ ун чухне. А халĕ ĕнтĕ, халăх урăхланчĕ. Ĕç патне хутшăнасси те, обществăллă харпăрлăх патне хутшăнасси те, пĕтĕм обществăллă ĕçе хутшăнасси те урăхланни курăнать. Тухса калакансенчен нумайăшĕсен хăйсен колхозĕсемшĕн кăна мар тăрăшни, вĕсем юлса пыракан колхозсене малти рете кăларасшăн тăрăшни çинчен каларĕç. Ĕçе тĕрĕс организацилессишĕн, обществăллă пурлăхшăн, колхозла движенишĕн тăрăшни ĕлĕкхи вак харпăрлăхлă—„кашни çын хăйĕншĕн, пĕр турă çеç пуриншĕн те тăрăшать“ текен шухăш ĕмĕрлĕхех пăрахăçа тухнине кăтартса парать.

Культурăллă фронтра мĕн-мĕн тумалли çинчен вакласа чарăнса тăрасшăн мар эпĕ, юлташсем. Кашни уйрăм колхозра, кашни облаçре, республикăра вак ĕçсене пурне те пĕлсе тăрас пулать, çак вак ĕçсене ăнланса илме пĕлес пулать, пĕтĕм пурăнăçа вара çапла тумалла: вăл чăн-чăнах культурăллă пултăр.

Çакăнпа пĕтеретĕп эпĕ, юлташсем. Пирĕн парти ертсе пынипе, Сталин юлташ ертсе пынипе, эпир, пирĕн çине пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн ударлă бригадин ячĕ хуракан обязанноçсене культурăллă фронтра та, хĕрарăмсене ирĕке кăларас фронтра та пурнăçлатпăр, тесе шанатăп.

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери революци!

## ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ РАБОТНИЦĂСЕН КУНĔ 25 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ТĔЛЕ ТУНĂ ПИРĔН ŸСĔМСЕМ

Пирĕн работницăсем, хресчен хĕрарăмĕсем, Клара Цеткина, нимĕç коммунисткине, лайăх пĕлеççĕ. Унăн вилнĕ ÿчĕн кĕлне Кремль стенине Маркслăн—Энгельсăн—Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçĕшĕн çапăçса вилнĕ çынсен ÿчĕсен кĕлĕсемпе юнашар пытарнă. Вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче пĕтĕм тĕнчери хĕрарăм-работницăсене, хресчен хĕрарăмĕсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен борец пулса ĕçленĕ. Вăл хăйĕн ăстăнĕпе те, чĕрипе те пирĕн коммунистсен партийĕпе, пирĕн аслă тăван çĕршыври ĕççыннисемпе пĕрле пулнă.

25 çул каялла, 1910 çулта, Копенгагенра II Интернационалăн конгресĕ пулса иртрĕ. (Ун чухне большевиксем II Интернационалта тăнă-ха). Копенгагенри конгресра Ленин та пулнă. Конгреспа пĕрлех социалистла хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери II конференцийĕ те пухăннă пулнă. Цеткин хĕрарăмсене-работницăсене яланах рабочи класăн кĕрешĕвне хутшăнтарма, вĕсене активлатма, вĕсен сознанине вăратма тăрăшнă. Çав шутпа вăл Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен иккĕмĕш конференцинче: Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне мартăн 8-мĕшĕнче уявласа ирттермелле тăвас пулать, тесе сĕнӳ панă.

Çавăнтан вара мартăн 8-мĕшĕ—Пĕтĕм çĕршыври ĕççыннисен пĕрлĕхлĕ кунĕ пулса тăчĕ.

Пирĕн работницăсем Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен социалистла движенине вирлĕн хутшăнчĕç. Пурте пĕлеççĕ Ленин тата парти çак движение епле пулăшса тăнине. Вăл движени рабочисен движенийĕпе питĕ тачă çыхăнса тăнă. Работницăсем Совет влаçĕшĕн рабочисемпе пĕрле алла-аллăн тытăнса кĕрешнĕ.

„Пĕр тан право,—çырнă Ленин,—пĕр государство та, вăл шутрах чи прогрессивлă, демократиллĕ, республикăллă, буржуаллă государство та паман.

А Российăри Советла республика хĕрарăмсене ирĕке тухма чаракан законлăх йĕрне *пурне те пĕр хăвармасăр* шăлса пăрахрĕ, хĕрарăма часах закон тăрăх пĕртан правallă турĕ“ (*Ленин*, XXV т., 63 стр.). Эпир пĕлетпĕр, халĕ те, 1935 çулта, нумай çĕршывсенче—Францире, Италире, Германире хĕрарăмăн арçынпа пĕртан суйлав прави çук.

Хĕрарăмсен пĕртанлăх прави, Октябрь революцинче кĕрешсе илнĕскер, вăл—малтанхи утăм кăна пулнă.

Иккĕмĕш пысăк утăм вăл—хĕрарăмсене-работницăсене, чухăн хĕрарăмĕсене, вăтам хресчен хĕрарăмĕсене пĕтĕм рабочи класпа, пĕтĕм ĕççыннисемпе пĕрле помещиксемпе капиталистсен влаçĕнчен ирĕке кăларни пулать. Совет влаçне тĕреклетсе пыни, граждан вăрçинче çĕнтерни ĕçхĕрарăмне хуть те хăш эксплоатацинчен те хăтарас тĕлĕшпе пыракан кĕрешĕве сарса янине пĕлтерчĕ.

Совет влаçĕ пирĕн çĕршыври пĕтĕм пурăнăç укладне улăштарса çĕнĕ социализмлă пурăнăç уклачĕ тăвассишĕн вĕçĕмсĕр кĕрешсе пынă.

Колхоз стройне çирĕплетни вăл—хĕрарăмсене ирĕке кăларассин виççĕмĕш утăмĕ пулать.

Колхозник-ударниксен иккĕмĕш с‘езчĕ ял пурăнăçĕ мĕнле улшăнса пынине, колхозсенче хĕрарăмсене ирĕке кăларасси мĕнле хăвăрт утăмсемпе пынине уççăн кăтартса паракан̆ĕ пулчĕ. Çакăнта Сталин юлташ колхозник-ударниксен Пĕрремĕш с‘ездĕнче каланă сăмах татса паракан вырăн йышăнчĕ.

Эпĕ аса илетĕп, колхозниксен Пĕрремĕш с‘езчĕ çинчен, Сталин юлташ сăмахĕ çинчен каласа кăтартнă чухне Клара Цет-

кинăн куçĕсем епле çутăлса кайрĕç, епле вăл,—вилĕм патне çитнĕскер, чи тĕттĕм вырăнсене, Ватам Азири колхозсене кайса курма ĕмĕтленчĕ. Колхоз уклачĕн çĕнтерĕвĕ мĕне пĕлтернине вăл ăнланнă та, пĕлнĕ те.

Советсен Пĕтĕм Российăри XVI тата Пĕтĕм Союзри VII съезчĕсем колхозник-ударниксен Иккĕмĕш съезчĕ умĕн пулса иртнĕскерсем, ĕçхĕрарăмĕсен ăстăнлăхĕ ўсни çинчен тата ĕçхĕрарăмсем социализм строительствинче активлă ĕçлени çинчен лайăх картинласа пачĕç.

Çапла ĕнтĕ, мартăн 8-мĕш кунне уявлама решени йышăннăранпа 25 çул çитнĕ тĕле пирĕн Совет çĕршывĕнчи работницăсемпе колхозницăсем ĕçхĕрарăмĕсене ирĕке кăларас ĕçре чылаях пысăк ўсĕмсем турĕç.

Пĕтĕм вăя пухса, империалистсем крепостла йĕркесене каялла тавăрса килесшĕн, вĕсем ĕçхĕрарăмĕсенчен пăхăнакан чурасем тăвасшăн. Çук, ку ĕç тухмасть. СССР примерĕ пĕтĕм çĕршыври работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсен кĕрешĕвĕн çулне çутатса тăрать. Пĕтĕм çĕршыври работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсем рабочи класпа пĕрле капитализмла стройпа кĕрешмелли ялава çўлĕрен те çўле çĕклесе пырĕç.

Пĕтĕм тĕнчери революци çĕнтерессине шансах тăмалла.

## ÇИРĔМ ПИЛĔК ÇУЛ [1]

Хĕрарăмсене-работницăсене ирĕке кăларас ĕç çине Ленин мĕнле пысăк тимлĕх хурса пăхнине тата вăл хĕрарăмсен рабочилле движенине мĕнле пулăшса пынине пурте пĕлеççĕ. Анчах вăл хĕрарăмсен рабочилле движенийĕ умĕнче тăракан задачăсене пĕтĕм рабочи класс умĕнче тăракан задачăсенчен нихăçан та уйăрман, вăл: ĕçхĕрарăмĕсене пачах ирĕке кăларма социализм çĕнтерсен кăна пулать, тесе шутланă. Тепĕр енчен, вăл: хĕрарăмсем революциллĕ кĕрешĕве тата социализм строительствине питĕ активлăн хутшăнсан çеç рабочи класс çĕнтерме пултарать, социализм тума пулать, тесе шутланă.

„Ирĕке тухассишĕн пыракан мĕнпур движенисен опытĕнчен çакна асăрханă,—çырнă Ленин,—революцин ăнăçлăхĕ унта хĕрарăмсем мĕн чухлĕ хутшăннинчен килет“ (*Ленин*, XXIII т., 286 стр.).

1899 çулта, ссылкăра чухне-ха вăл, пирĕн парти программин проектне çырнă вăхăтра Владимир Ильич: программăна *хĕрарăмсене арçынсемпе пĕртан право парасси çинчен пункт кĕртмеллех,* тенĕ. Çав пункта парти программи çине 1903 çултах кĕртнĕ, анчах ăна 1917 çулта работницăсем активлăн хутшăнса рабочисем влаçа хăйсен аллине илсен çеç пурăнăçлама май килчĕ. Совет влаçĕ, пурте пĕлеççĕ, хĕрарăма арçынпа тан правăллă турĕ.

[1] „Ленинградская правда“ хаçатра 1935 çулта мартăн 8-мĕшĕнче пичетленнĕ.

*„Пирĕн Российăра çавăн пек чи начарри, мăшкăлли тата тискерри—хĕрарăмсене нимĕнле правасăр е тулли правасăр хăваракканни, çакă крепостничествăпа вăтам ĕмĕрсен кӳренмелле юлашкийĕ, çакă пĕтĕм çĕрчăмăрĕнчи хăйĕншĕн çеç тăрăшакан буржуазипе мăка та хăравçă вак буржуази çĕнетнĕскер, урăх çук ĕнтĕ*"[1],—тенĕ Владимир Ильич Октябрь революцийĕ 4 çул тултарнине уявланă чухне. (Курсив манăн—Н.К.).

Анчах хĕрарăмсене арçынсемпе тан права пани вăл хĕрарăмсене ирĕке кăларас ĕçĕн малтанхи утăмĕ çеç пулать, тесе шутланă Ленин. Пирĕн партин Центральный Комитечĕ 1918 çулти ноябрĕн 18-мĕшĕнче работницăсен пĕрремĕш съездне пухрĕ. Çак съездра Ленин çапла каланă:

„Хĕрарăмсен положенийĕ ку таранччен çапла, чуралăхра юлнă тесе каламалла, хĕрарăм хăйĕн кил хуçалăхĕпе пусмăрланнă, çакăнтан ăна социализм çеç, вак хуçалăхран шултра хуçалăха куçса çĕре пĕрле ĕçлеме пуçласан çеç, çăлма пултарать.

Çавăн чухне çеç хĕрарăмсене пачах ирĕке кăларма пулать". (*Ленин*, XXIII т., 286 стр.).

Ун чухне Ильичăн çак сăмахĕсем съезд делегаткисен хăлхисене сахалтарах кĕнĕ. Вĕсемшĕн Ильич: хĕрарăмсене государствона ертсе пырас ĕçе хутшăнтармалла, тесе каланă сăмахĕсем лайăххрах ăнланмалла пулнă. Халĕ ĕнтĕ, колхоз стройĕ çĕнтернĕ чухне, Ильичăн çав сăмаххисем кашни работницăшăн, кашни колхозницăшăн çывăх та ăнланмалла.

1923 çулта, Ильич йывăр чирленĕ вăхăтра, Сталин юлташ „Коммунистка" журналăн 11-мĕш номерĕнче „Работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсен пĕрремĕш съезчĕ 5 çул тултарнă тĕле" ятлă статья çырнă.

„Çав съезд пирĕн парти валли хĕрарăмсен хушшинчи ĕçе туса пыма маяк лартса пачĕ. Унăн нимпе те виçме çук пысăк тивĕçĕ çакăнта: вăл пирĕн республикăри работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсене политика тĕлĕшĕнчен çутта кăларас ĕçе организацилесе яма никĕс хывса хăварчĕ",—тесе çырнă вăл çав статьяра.

Малалла Сталин юлташ: 140 миллион халăхран çурри—хĕрарăмсем, пуринчен ытла работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсем, тĕттĕм пурăнаççĕ, сахал ăстăнла, тесе çырнă. Вăл: хĕрарăмсем çапла тĕттĕмре пурăнни, вĕсем çапла сахал ăстăнлă пулни промышленноçа та, ялхуçалăхне те, кооперацие те, советсен ĕçĕнче те пысăк сиен кӳме пултарать, тенĕ. Уйрăмах вăл ӳссе пыракан ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе хĕрарăмсем мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен чарăнса тăнă. „*Юлашкинчен,*—тесе çырнă вăл,—*пирĕн работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсем—амăшĕсем çамрăксене—пирĕн çĕршывăн пуласлăхне—пăхса çитĕнтерекенсем пулса тăраççĕ. Вĕсем, кайра пырса, пуп, кулак, буржуази хыççăн кайнине пула, ачан чунне пăсма пултараççĕ, е вĕсем Совет стройне юратнине пула, пире çирĕп чунлă,*

[1] Ленин, XXVII т., 26 стр.

*пирĕн çĕршыва малалла илсе кайма пултаракан çамрăксем пама пултараççĕ*". (Курсив манăн—Н. К.)

Сталин юлташ хресчен хĕрарăмĕсем хушшинчи ĕçе уйрăмах палăртса, „Коммунистка" журналта çапла çырнă:

„Халĕ ĕнтĕ парти умĕнче тăракан задача вăл—миллион хресчен хĕрарăмĕсене советла пурăнăç тунă çĕре хутшăнтарасси пулать. Пилĕк çул хушшинчи ĕç ĕнтĕ хресчен хĕрарăмĕсем хушшинчен нумай руководительницăсем ӳстерчĕ. Шансах тăратпăр, хресчен хĕрарăмĕсен-руководительницăсен ретне ăстăнлă хресчен хĕрарăмĕсем çĕнĕрен хутшăнса пырĕç. Шансах тăратпăр, пирĕн парти çак задачăсене те пурнăçлĕ".

10 çул иртрĕ. 1933 çулти январьте Сталин юлташ „Работница" журнал 10 çул тултарнă ячĕпе саламласа:

„Ăна хĕрарăмсен пролетарилле массине социализм яланлăхах çĕнтерессишĕн, *пирĕн учителĕн—Ленинăн аслă хушăвĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешес шухăшлă тăвас ĕçре ӳсĕмсем тума сĕнетĕп*", тенĕ. (Курсив манăн—Н. К.)

1933 çулти февралĕн çурринче малта пыракан колхозсенчи колхозниксен-ударниксен Пĕтĕм Союзри Пĕрремĕш с'езчĕ пулса иртрĕ. Сталин юлташ çав с'ездра калană сăмаха пурте пĕлеççĕ. Пĕрремĕш с'езд та, уйрăмах иккĕмĕш с'езд, хресчен хĕрарăмĕсем хушшинчи ĕç малалла шуни çине кăтартса пачĕç.

Кăçалхи çул эпир Пĕтĕм тĕнчери работницăсен кунĕ 25 çул тултарнине уявлатпăр. Ирĕке тухассишĕн кĕрешекен пур движенин опычĕ тăрăх, хамăрăн революциллĕ кĕрешĕвĕн опычĕ тăрăх хĕрарăмсем унта хутшăнни епле пысăк вырăн йышăнса тăнине эпир пĕлетпĕр.

*Ленин кăтартса пană* çулпа пырса, эпир хĕрарăмсене ирĕке кăларас тĕлĕшпе, Пĕтĕм тĕнчери работницăсен кунĕн 25-мĕш уявне мĕнпе кĕтсе илтĕмĕр?

Эпир ĕçхĕрарăмĕсен ăстăнĕ тата активлăхĕ хытă ӳснипе кĕтсе илтĕмĕр. Çакна юлашки суйлав умĕнхи кампани уйрăмах лайăх кăтартса пачĕ.

Хуласенче хĕрарăмсем—профсоюз членĕсем суйлава арçынсем пекех 93 проц. хутшăнчĕç, организациленмен хĕрарăмсене те шута кĕртсен вара—89,4 проц., 1926 çулта хĕрарăмсенчен суйлава пĕтĕмпе те 43 проц. кăна хутшăннă. Тата çакна илтрĕмĕр суйлавра: работницăсем епле хĕрӳллĕ сăмах калареç, епле вĕсем лайăх калаçрĕç, епле вĕсем ĕçлĕ сĕнӳсем пачĕç.

Уйрăмах эпир ӳсĕмсене ялта куратпăр. 1926 çулта ялти вырăнсенчен хĕрарăмсем суйлава пурĕ те 28 проц. çеç пынă пулсан, хальхи суйлав кампанинче хĕрарăмсенчен 80 проц. суйлава пычĕ. Вăтам Азири республикăсенче хĕрарамсем суйлава хутшăннине кăтартакан цифрсем тата та кăтартуллă. 1926 çулта Узбек республикĕнче ялсенчи вырăнсенчен хĕрарамсем мĕн пурĕ те 7,8 проц. кăна суйлава кайнă, юлашки суйлавсенче хĕрарăмсенчен 72 проц. суйлава пынă. Туркмен республикĕнче 1926 çулта — 2,5 проц. хутшăннă, юлашки суйлавсенче 73 процент.

Çак цифрсем ĕнтĕ ĕçхĕрарăмĕсен каяюлнăлăхĕпе тĕттĕмлĕхĕ Сталин юлташ вĕсем çинчен 1923 çулта каланă, халĕ инçете юлчĕç.

Çапах та пирĕн хуçалăха урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе тунă çĕнтерÿсем вĕсем пуçламăшĕсем çеç пулса тăраççĕ. Промышленноçпа ялхуçалăхĕнче пирĕн тата та пысăк ĕçсем тумалла, йăлана çĕнĕлле тунă çĕрте вăйлă ĕçлемелле, культурăллă фронтра та унтан кая мар ĕçлемелле. Ÿссе пыракан çамрăк ăрăва воспитани парас çĕрте хĕрарăмсен активлăн хутшăнас пулать. Аялтан контроль туса тăрассине организацилеме, пирĕн Советла Конституцинче тума палăртнă улшăнусем тапратса яракан советла демократизма тата советла общественноçа организацилеме вăйлăн ĕçлес пулать.

Çак задачăсене татса пама халăхăн пĕтĕм культурине палăрмаллах хăпартас пулать. Пирĕн çĕршыв питĕ тăрăшса, çине тăрсах вĕренет. Ĕççынnисем умĕнче пĕлÿлĕх илмелли алăксем яриех уçă. Партипе правительство çак фронт çине питĕ тимлĕн пăхаççĕ. Анчах та хĕрарăмсен пĕлÿлĕхне хăпартас тĕлĕшпе ĕç мĕнле тăни çине пăхсассăн, эпир çак фронтра ĕç чылай кая юлса пынине куратпăр.

Профсоюзсем шута илнĕ тăрăх, 1934 ç. ноябрĕн 1-шне электромашиностроенинче, центрпа çурçĕр районĕсенчи обувнойпа швейнăй промышленноçĕнче ĕçлекенсем тата трамвай работникĕсем хушшинче хутла пĕлмен хĕрарăмсем 3 процентран та кая. Анчах сĕт совхозĕсенче, сысна, мамăк, тирлĕ кайăксене, чăх-чĕпсене ĕрчетекен совхозсенче, кирпĕч тăвакан промышленноçра, вăрман юхтарнă çĕрте, торф кăларнă çĕрте, сезонлă ĕçре ĕçленĕ çĕрте хутла пĕлмен хĕрарăмсен хисепĕ 10—15 проц. таран.

Хĕрарăмсен хутла пĕлменлĕхне тата хутла сахал пĕлнине иккĕмĕш пятилеткăра пĕтермелле. Çак ĕçре хытăрах ĕçлеме пуçламалла. Анчах ку та сахал-ха. Хĕрарăмсен общеобразовательнăй пĕлÿлĕхне хăпартасси кирлĕ. Хĕрарăмсене пирĕн ответлă вырăнсене лартаççĕ: профсоюзсен Центральный Комитечĕн председателĕсем—18, профсоюзсен ЦК секретарĕсем—12, нумай хĕрарăмсем—завод директорĕсем, инженерсем, фабзавком председателĕсем, ялсовет председателĕсем, колхоз правлени председателĕсем т. ыт. те. Анчах пĕтĕм хĕрарăмсен массине шута илестĕк эпир çапла калама пултаратпăр: хĕрарăмсен сознательноçĕпе организациллĕ пултарулăхĕсемпе тата общеобразовательнăй пĕлÿлĕхĕпе, вĕсен пĕтĕм аталанăвĕ хушшинче пысăк хушă—„хачă" пур. Ĕçĕн хуть те мĕнле облаçне илсе пăхар эпир, пур çĕрте те хĕрарăма малалла кайма çав „хачă" чăрмантарса пынине куратпăр. Заводра халĕ ĕнтĕ техминимум ыйтаççĕ. Пысăкрах разрядри техникăна алла илме математикăна, физикăна тата химие пĕлес пулать. Кунта та пĕлÿ сахалли хĕрарăма епле хытă чăрмантарнине куратпăр. Советсене илер. Кунта ответлă ĕçе лартнă хĕрарăмсем чылай ĕçе пăраха-пăраха кайнине куратпăр.

Çак ĕçре мĕн тумалла-ха пирĕн?

Чи малтан работница-ударницăсене, колхозница-ударницăсене, хĕрарăм ялсовет председателĕсене, колхоз правленисен председателĕсене т. ыт. те культура тĕлĕшпе кашнине уйрăмăн пулăшу парассине организацилес пулать. Ку пулăшу вĕсене кĕнекесем, хаçатсем ыттисенчен маларах парса тăнинче, кирлĕ материалсене пухса хатĕрленинче, вуласа парассине организацилессинче, кирлех пулсан, вĕсене пулăшма культармеецсене хушмаллисенче пулмалла.

Работницăсемпе хресчен хĕрарăмĕсене çитĕннĕ çынсем вĕренмелли тĕрлĕ шкулсенче вĕрентес пулать, занятисене вĕсен пурăнăç условийĕсемпе майлашса иртермелле тăвас пулать.

Хĕрарăмсене радио итлеттерессине лайăхлатмалла тата радиоаудиторинче хĕрарăмсем валли консультацисем организацилес пулать.

Халĕ культурăллă ĕçе *хирте ĕçлекенсем хушшинче* лайăхрах туса пыма тăрăшас пулать. Ку çĕнĕ ĕç-ха, çапах та ку ĕçре аван тĕслĕхсем сахал мар.

Культурăллă ĕçе епле пулсан та лайăхрах туса пыма тăрăшас пулать, уйрăмах ĕçхĕрарăмĕсене культурăллă ĕçе явăçтарма тăрăшасси кирлĕ.

Хĕрарăмсен пĕлӳке хăпартасси халĕ ĕнтĕ çивĕч задача пулса тăчĕ.

Пирĕн социализм строительствин мĕнпур фронтĕнчи ӳсĕмĕсем пире çак задачăна çывăх вăхăтрах пурнăçлама пулăшĕç.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ 25 çул тултарнă кун эпир çапла калатпăр: хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери движенине тĕреклететпĕр, ĕçхĕрарăмĕсен ăстăнĕпе активлăхне хăпартса пыратпăр, тетпĕр. Çакă пире ĕçхĕрарăмĕсене пĕтĕмпех ирĕке кăларма, пĕтĕм тĕнчипе социализм çĕнтермешкăн майсем тума кирлĕ.

## АВАН ÇАКĂН ПЕК ЭПОХĂРА ПУРĂНМА! [1]

Хĕрарăмсене обществăллă ĕçе хутшăнтарассине Владимир Ильич мĕнле пысăк вырăна хуни çинчен сиртен, паллах, юлташсем, кашнинех пĕлеççĕ. Вăл хĕрарăмсене ирĕке кăлармалла тесе çеç мар калана, вăл хĕрарăмсен социализм строительствинчи тата обществăллă пурăнăçа урăхлатса çĕнетес çĕрти ролĕ çинчен яланах паллă тунă.

Вăл хĕрарăм-нацменкăсене, ĕлĕк нихăшисенчен те ытларах пусмăрланнăскерсене, обществăллă ĕçе хутшăнтарса пырасси çине уйрăмах тимлĕн пăхнă.

Эпĕ пухусенче Вăтам Азинчен тата Кавказран килнĕ хĕрарăм юлташсем тухса каланисене итлетĕп те, кашни хут мана çакăн пек факт аса килет. Коминтернăн иккĕмĕш конгресĕ ĕçленĕ вăхăтра хĕрарăмсен совещанийĕ те пулчĕ. Хĕрарăмсем унта Узбе-

[1] Хĕрарăмсен Пĕтĕм Союзри совещанинче каланă сăмах, „Комсомольская правда" хаçатра 1935 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнче пичетленнĕ.

кистанран, Туркменинчен тата инçетри крайсенчен пынăччĕ. Вĕсем паранджапа çӳреме пăрахнă пулнă, анчах вĕсен общежитине арçынсенчен кам та пулин кĕрсен, вĕсем кроватьсем çинелле ыткăнатчĕç,—ĕлĕкхи йăла çирĕп ларнă-ха вĕсенче.

Пĕрре эпир Владимир Ильичпа союзсен çуртĕнчен Кремль патнелле утса пыратпăр. Çул çинче эпир конференци делегаткă-нацменкăсене тĕл пултăмăр. Вĕсем Владимир Ильича курчĕç те питĕ хытă хумханчĕç. Пĕри хыçалтан пычĕ те Ильича ыталарĕ. Вĕсем кашни харпăр-хăй чĕлхипе калаçса илчĕç те макăрчĕç. Владимир Ильич хăй те питĕ хытă хумханчĕ. Унтан, вĕсенчен уйăрăлса пăртак утсан, Владимир Ильич мана: „Чи кая юлнă халăхсем çĕкленчĕç, халĕ ĕнтĕ пирĕн çĕршывра социализм çĕнтерме пултарать“, терĕ. Çакă ĕнтĕ Владимир Ильич хĕрарăмсене обществăллă ĕçе тата парти ĕçне хутшăнтарассине мĕнле пысăк вырăна хунине кăтартса парать.

Владимир Ильич губженотделсен совещанине (1920 çулти декабрьте) çырнă çыру аса килет. Вăл унта:

„Шăпах халĕ, вăрçă çук чухне, мирлĕ организаторла ĕç, шанатăп, нумайлăха малти плана тухса тăнă чухне, хĕрарăмсем парти тата совет ĕçне хутшăнса ĕçлени питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать, çав ĕçре хĕрарăмсем малти вырăнта пулмалла, вĕсем, паллах, пулаççĕ те“, тесе çырнă (*Ленин*, XXV т., 516 стр.).

Акă ĕнтĕ халĕ урăхлатса çĕнетнĕ пурăнăç çине пăхатăн та куратăн, хĕрарăмсем хăйсен умĕнче тăракан тĕллев патне епле хастарлăхпа пыраççĕ, тата хăйсен прависемпĕн епле хытă тăраççĕ.

Колхозник-ударниксен Иккĕмĕш с‘езчĕ аса килчĕ. Унта колхозницăсем хăйсен мĕн калас килнине, хăйсем мĕн чăтса ирттернине пĕр шиксĕр тӳрех каларĕç.

Революци пулнă хыççăн малтанхи кунсенче те, кайран та хĕрарăмсен пухăвĕсенче тĕп тĕлĕшпе мĕн чухлĕ халлап тапратнă эпир! Ун чухне тĕне пысăк вырăна хуракан хĕрарăмсем, работницăсем те, питĕ нумайччĕ. Халĕ ĕнтĕ колхозница Мускава килсен пĕр-пĕр ватă карчăк сăх-сăхнине курса: сирĕн темле кунта халăх ăстăнлă мар, ялта ĕнтĕ халĕ вăл иртнĕ ĕмĕрсене тухса пырать, тет.

Колхозник-ударниксен Иккĕмĕш с‘ездĕнче пĕр ватă колхозница (унăн хушаматне астумастăп халь, вăл лайăх каларĕ) ман пата пычĕ те:

—Эпĕ санпа калаçасшăнччĕ.

—Мĕн çинчен калаçăпăр?

—Эсĕ мĕнле шухăшлатăн, акă ĕнтĕ эпĕ ватă карчăк, партие кĕме юрать-и мана е юрамасть?

Авă мĕн çинчен шухăшлать ватă карчăк!

—Парти мĕншĕн кĕрешнине эсĕ пĕлетĕн вĕт. Эсĕ парти шухăшлă пулсан, ма кĕрес мар-ха вара сан унта?,— тетĕп эпĕ ăна.

—Эпĕ вĕт ватă, парти çинчен сахал пĕлетĕп.

—Унта кӗрсен сана каласа кӑтартаççӗ. Çырӑн сочувствующине, унтан сана кандидата куçарӗç, унтан парти членӗ пулӑн. Пире сан пеккисем кирлӗ те,—терӗм эпӗ.

Халӗ ӗнтӗ колхозниксен с'езчӗ пек, сирӗн совещани пек пухусенче çакна туятӑп: халӗ пирӗн ачасем амӑшӗн кӑкрин сӗчӗпе пӗрлех Маркс, Энгельс, Ленин хӑйсен ӗмри тӑршшӗнче кӗрешнӗ идейӑна, Сталин юлташ, пӗтӗм парти кӗрешнине тата малалла та кӗрешсе пыракан идейӑна ӑнланса пыраççӗ.

Пире, ваттисене, ӗлӗкхипе хальхи питӗ уçӑмлӑн курӑнса тӑрать. Пире уйрӑмах ўсӗм курӑнса тӑрать. Çамрӑксем час-часах асӑрхаманнине эпир асӑрхатпӑр.

90-мӗш çулсенче мапа вырсарникунхи каçхи шкулсенче вӗрентме тӗл килчӗ. Вӗренекенсем 20—25 çулхискерсемччӗ. Нумаях та пулмасть эпӗ хамӑн ученикпе тӗл пултӑм. Вӑл мапа, халӗ ӗнтӗ пурӑнӑç йӑлтах урӑхланчӗ: „Халӗ манӑн ывӑл—инженер, хӗрӗм—вуз пӗтерет, эпир пурте коммунистсем“, тет. Унтан тата çапла калать: „Пӗлетӗн вӗт, эпир санпа ӗлӗк мӗн çинчен калаçрӑмӑр, халӗ çавӑ йӑлтах пурӑнӑçа кӗрсе пырать“, тет.

Пирӗн умра халӗ ӗлӗк тӗрӗссӗн тавçӑрса илме пултарайманнисем пулса пыраççӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсен пухӑвӗсем, метро, физкультурниксен парачӗ—çаксем çинчен тавçӑрса илме пултарнӑ-и ӗлӗк эпир? Эсир ак ўлӗм халӗ тавçӑрса илме пултармалла мар çутӑ та лайӑх пурӑнӑç куратӑр. Аван çакӑн пек эпохӑра пурӑнма!

Хӑйне тӗллӗн нимӗн те килмест. Çакна сиртен кашниех пӗлет ӗнтӗ. Хама ӗçлеме тӗл килнӗ политпросвет ӗçӗнче ӗçлекенсене эпӗ яланах çапла калатӑп: эпир вӑл е ку пулмасть тесе калаçатпӑр, апла калаçма кирлӗ мар, хӑвӑр мӗн тума тытӑннине çине тӑрсах туса пӗтерӗр, тетӗп.

Пирӗн хӗрарӑмсен чаплӑ активӗ пур. Анчах вӑл пурӗ те актив анчах-çке, пирӗншӗн хӗрарӑмсен пӗтӗм çамрӑк ӑрӑвӗ, пӗтӗм хӗрарӑм çӗнӗлле пурӑнма вӗренни паха. Ўсӗмсем пирӗн пысӑк, анчах ӗлӗкхи пурӑнӑç юлашки те, уйрӑмах йӑлара, нумай-ха.

Кунта ӗлӗкхи пурӑнӑçран юлнӑ юлашки çинчен нумай калаçӗç. Çавӑн пек юлашкисенчен пӗрийӗ вӑл—хӗрарӑмсем хутла пӗлес тӗлӗшпе, пӗлў илессипе кая юлса пыни пулать.

Хутла пӗлменлӗхе пӗтерни 15 çул тултарнине уявланӑ чухне Мускаври Киров районӗнче хутла вӗренекеннисем—пӗтӗмпе пекех хӗрарӑмсем, кил хушшинче ӗçлекен хӗрарӑмсем, предприятисенче ӗçлекен çамрӑк хӗрачасем пухӑнчӗç. Лайӑх çынсем, анчах вӗсене ӗçе хутшӑнтарайман-ха, нумайӑшне ӑнланаймаççӗ-ха, анчах вӗсен вӗренме кӑмӑл пур.

—Мӗншӗн ликбезра вӗренместӗр?,—тесе ыйтатӑп.

—Мӗнле эпир унта вӗренме çўрӗпӗр, намӑс,—теççӗ.

Кунта пире вӑйлӑрах ӗçлеме лекет.

Çитӗннисене вӗрентмелли шкулсем тӑвассишӗн, унта çамрӑк хӗрарӑмсене вӗрентессишӗн тӑрӑшас пулать.

Çитĕннисем, шкул ачисем пек мар, занятисене сиктерсе çӳреççĕ. Упăшки чирлет-и, ачи-и, çын вара занятисене çӳреймест, кайран ăна ыттисене çитме йывăр. Кунта шкулти ĕçе килте пулăшу парассипе çыхăнтарас пулать.

Хĕрарăмсене—ялсовет председателĕсене, райĕçтăвком членĕсене культура тĕлĕшĕнчен пулăшу памаççĕ, вăл пулăшу вĕсене питĕ кирлĕ, тесе нумай калаçнă партин XVI-мĕшпе XVII-мĕш с'езчĕсенче. Хĕрарăма пулăшма хутла лайăх пĕлекен комсомолкăна хушас пулать те, вăл вара ăна ĕç хучĕ çырма, кирлĕ материалсене хатĕрлеме тата вĕренме пулăшать. Хĕвеланăç облаçĕнче —унта çавна тума питĕ йывăр пулсан та, мĕншĕн тесен, унта хуторла хуçалăх пулнă тата ĕлĕкхи йăлан юлашкийĕсем питĕ вăйлă пулнă—çакна тунă-тунах. Кашни хĕрарăма—ялсовет председателĕсене, райĕçтăвком членĕсене пулăшма, вĕсен пĕлӳне хăпартма килĕшекен хĕрарăмсене е учительницăсене укçа тӳлемелле тунă. Çак ĕç çине пирĕн питĕ тимлĕн пăхас пулать.

Кунта хĕрарăмсене ертсе пыракан вырăнсене лартса пырасси çинчен калаçрĕç. Ку тĕрĕс. Ертсе пыракан вырăнсенче хĕрарăмсем сахал-ха. Хĕрарăмсен пухăвĕсенче пуху председателĕ ялан пекех арçын пулать. Правило пекех, хĕрарăмсене ертсе пыракан вырăнсене сахалтарах лартаççĕ.

Мĕншĕн апла? Мĕншĕн тесен хĕрарăмсен пĕлĕвĕ сахал. Пĕлӳ илессишĕн тăрăшас пулать. Хĕрарăм, паллах, вĕренет ĕнтĕ, анчах акă мĕн сларĕ Мускав облаçĕнчен килнĕ пĕр работница: „Калама пуçлатăп та, вăтанса каятăп". Çакă та ĕлĕкхи пурăнăçăн юлашкийĕ, унтан хăшпĕр комсомолкăсем те хăтăлайман-ха. Хăюллăрах пулас пулать, хăв умăнта тăракан ĕçе çине тăрсах тăвас пулать.

Кунта, профсоюзсем хĕрарăмсен хутне çителĕксĕр кĕреççĕ, терĕç. Ку тĕрĕс. Акă çавăн пек кил хушшинче ĕçлекен хĕрарăмсен профсоюзĕ пур, вăл хĕрсен-профсоюз членĕсен правине мĕнле сыхлать-ши, вăл вĕсене вĕрентес тата пухусене çӳретес тĕлĕшпе мĕн тăвать-ши?

Комсомол советсен секцийĕсенче сахалтарах ĕçлет пек туйăнать мана. Секцисен пысăк ĕç тумалла. Кунта тухса калакансем пурте çемье ыйтăвĕсем çинче чарăна-чарăна тăчĕç. Хăш чухне ман пата ютçĕршывсенчен килнĕ çынсем кĕрсе тухаççĕ, пуринчен ытла вĕсене акă мĕн пăтратать: пысăк ӳсĕмсене, ăстăнлăхпа культурăлăх ӳссе пынине курнипе пĕрлех,—вĕсем çаксене курмасăр тăма пултараймаççĕ ĕнтĕ,—вĕсем час-часах йăлара ĕлĕкхи пурăнăçăн юлашкисене, культурăсăрлăха кураççĕ. Чăн та, вĕсем йăлана çĕнетсе урăхлатас тĕлĕшпе хамăр патăмăрта туса пыракан ĕçе те кураççĕ. Ача сачĕсене, яслисене илсе пăхăр хуть.

Ютçĕршывран килнĕ пĕр турист тĕлĕнсе: амăшĕсем хăйсен ачисене яслисене яма епле килĕшеççĕ вара?—тесе ыйтать манран. Эпĕ ăна çапла каларăм: яслисем пирĕн ачасене амăшĕсенчен

уйăрмаççĕ, терĕм. Пирĕн патра ачасене обществăллă воспитани парассине килте воспитани парассипе çыхăнтарса пыраççĕ. Обществăллă воспитани пани килте воспитани парассине анлăлатать, ăна тĕрĕс организацилеме пулăшать. Пĕчĕк ачана марксист тума çук, анчах та ачара пĕчĕкренех пĕр паллă интересмем, хăнăхусем çирĕпленсе пыни питĕ кирлĕ. Кунта комсомолкăсем, сăмахпа мар, теорипе хĕçпăшалланнăскерсем, Маркс, Энгельс, Ленин тата Сталин ачасем çинчен, вĕсене воспитани парасси çинчен тата çемье çинчен мĕн каланине пĕлекенскерсем, ачана пĕчĕкренех вара пулас этем валли кирлĕ хăнăхусем пама пултараççĕ.

Ача амăшĕ пулни хĕрарăма хытă хĕпĕртеттерет. Ача амăшĕ вăл—пысăк вăй тесе шутлатпăр эпир, анчах тепĕр енчен хĕрарăм ачасемпе кăна ан лартăр, тетпĕр. Эпир ăна обществăллă пурнăçран уйăрмастпăр. Акă мартăн 8-мĕшĕнче пичетленнĕ „За индустриализацию" хаçатра Сталин юлташăн паха сăмахĕсене илсе кăтартнă. Унта акă мĕн каланă: амăшĕ хăй ачине мĕнле пăхса ÿстерет, çапла юрать теместпĕр эпир. Пире акă мĕн кирлĕ: хĕрарăм-работница вăл вĕрентĕр, ачине пирĕн шухăшлă тутăр.

Çемье çинчен ыйту çивĕч тăрать. Ку тĕлĕшпе пирĕн тĕрĕс мар калаçусем сахал мар. Çемье çинчен çырнă ĕлĕкхи законсем, çемье çине ĕлĕк пăхна шухăшсем, витĕрех суяпа тулса ларнăскерсем, пулнă. Çакăнпа кĕрешнĕ пирĕн парти. Пирĕн патра ĕнтĕ: качча тухрăн-тăк упăшкун чурийĕ пулас пулать, тесе калаççĕ, анчах çапах та ĕлĕкхин юлашкийĕ нумай юлнă-ха.

Пĕрре империализм вăрçи вăхăтĕнче Петроградра эпир пĕр работницăпа калаçма пуçларăмăр. Эпĕ ун чухне Выборг районĕнче ĕçлеттĕм. „Упăшка акă вăрçăра, чĕре йăлт ыратса пĕтрĕ, чĕрĕ-ши, вилчĕ-ши, тесе шухăшлатăп", терĕ вăл. Упăшкине хытă юратнă курăнать. „Акă мĕн çинчен час-часах шухăшлатăп",—терĕ вăл малалла. —„Эпĕ большевичка пултăм ĕнтĕ; партие кĕнисĕр, большевичка пек ĕçленисĕр пуçне хамăн пурнăçа урăхла шутлама пултараймастăп эпĕ. Упăшка вăрçăран таврăнĕ, анчах епле пулĕ унăн шухăшĕ? Тен вăл большевиксен тăшманĕ? Ун чухне вара пирĕн çемьеллĕ пурнăç пĕтет. Эпĕ большевиксем майлă, вăл—хирĕç, пĕрле ăçтан пурăнăн. Уйăрăлмах лекет вара".

Çак работницăн сăмахĕ тĕрĕс çула кăтартса парать: юратуюратăвах пултăр, а пĕрле пурăнас тесен пĕр шухăшлă пулма кирлĕ. Унсăрăн чăн-чăн телейлĕ çемье тума пулмасть.

Астăватăп, эпĕ пĕрре ĕççыннисен Хĕвелтухăçĕнчи Коммунистла Университетĕнче сăмах тухса каларăм. Унта эпĕ херарăмсене ирĕке кăларма кирли çинчен чарăнса тăтăм. Пĕр студент сăмах илчĕ те, хĕрарăмсене ирĕке кăларасси вăл—хĕрарăмăн ĕçĕ, терĕ. Эпĕ ăна вара çапла каларăм: хĕрарăмсене ирĕке ка-

ларас ĕç вăл—хĕрарăмсен ĕçĕ кăна мар. Вăл пирĕн пĕр пĕтĕм ĕç пулса тăмалла, терĕм.

Эсир çамрăк ăру, питĕ пысăк ӳсĕмсем тунă ăру, ытти çамрăксене пурне те активлă пурăнăçа хутшăнтарма тăрăшăр.

Ирĕк парсамăр мана, сире çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тума хĕрӳлĕн сĕнме.

## МАРТĂН 8-МĔШĔ [1]

Пирĕн телейлĕ социализмлă çĕршывра хĕрарăмсем валли çул уçă, ӳсеççĕ те çирĕпленеççĕ коммунизмлă обществăна тăвакан кадрсем, вĕсемпе пĕрлех—хĕрарăмсем. Сарăлать те çирĕпленет çăмăл промышленноçĕнчи стахановла движени. Кунта хĕрарăмсен ролĕ ытла та пысăк, мĕншĕн тесен кунта хĕрарăмсем ытларах ĕçлеççĕ. Виноградовăсем, Одинцова, Илларионова хыççăн кунта пин стахановкăсем хăйсен паха ĕçĕсемпе çăмăл промышленноçа çĕнĕ пусăма, çӳлĕ пусăма хăпартаççĕ, ăна халăх хуçалăхĕн малта пыракан отраслисемпе пĕр шайра пыракан тăваççĕ. Хамăрăн социализм строителĕсене, хамăрăн аслă тăван çĕршыв гражданĕсене капăр та юрăхлă кĕпе-тумтир тăхăнтарасси, çĕршыва паха пир-авăр, кĕпе-тумтир, атă-пушмак çителĕклĕ таран парасси—çакă вара хисеплĕ задача мар-и-ха? Ак çакă çеç кирлĕ: пиншер стахановкăн паха ĕçĕсем çăмăл промышленноçĕнчи пĕтĕм работницăсен ĕçĕсем пулса тăччăр. Производствăн паллă участкисене чи лайăх стахановкăсене хăюллăн лартса тухас пулать.

Мартăн 8-мĕшĕ вăл—пĕтĕм тĕнчери праçник. Вăл кун эпир капитализмлă çĕршывсенчи ĕçхĕрарăмĕсене, вăтам ĕмĕрти тискерлĕхпе, террорпа çыхăннă тата массăна ытла та тискеррĕн эксплоатацилекен империализм пусмăрĕнчискерсене пурăнса антăхакансене, саламлатпăр.

Имперализм халăха çĕнĕрен вăрçа туртса кĕртме хăтланать, вăл пирĕн совет çĕршывне, миллион ĕççыннисем хăйсен чĕрисемпе шухăшĕсемпе туйса тăракан çĕршыва хирĕç крестовой поход тума хăтланать. Анчах массăсен пуçĕнче капитализма штурмлас шухăш вăйланнăçем вăйланса пырать. Ĕççыннисем империалистсем юнлă вăрçă пуçарнине хирĕçлесе çапла калĕç: „Пĕтĕм влаç советсене! Коммунизмшăн, пролетари диктатуришĕн тăрар!“

## СОВЕТЛА ÇИРĔП ÇЕМЬЕ [2]

„Аборт тума чарасси, ача çуратнисене паракан пулăшăва ӳстересси, пысăк çемьеллĕ çынсене государство енчен пулăшу парасси, ача çуратмалли çуртсене, ача сачĕсене, яслисене нумайлатасси, алимент тӳлеменнисене хытăрах айăпламалла тăвасси тата

[1] „Легкая индустрия“ хаçатра, 1936 çулти мартăн 8-че тухнă номерĕнче пичетленнĕ.

[2] „Новый закон о матери и детях“ ятлă брошюрăн умсăмахĕ. 1936 çулта ОГИЗ кăларнă.

развод çинчен кăларнă законра хăшпĕр улшăнусем тăвасси" çинчен кăларнă постановлении проектне ĕççыннисен пухăвĕсенче тата пичетре анлăн сӳтсе-явнă хыççăн, хăшпĕр тĕлте тӳрлетсе тата хушусем туса СССР Совнаркомĕпе ЦИК-ĕ çирĕплетрĕç.

Çак закона пурнăçласси Совет государстви енчен питĕ пысăк тăкак тăвассипе çыхăнать. Анчах пирĕн Совет Союзĕ çав тери вăйлă та пуян, çавăнпа та çав тăкаксене хăй çине илме пултарать.

Мĕншĕн пирĕн правительство çавăн пек пысăк тăкак тăвать? Мĕншĕн тесен çав декрет тăрăх тумалли ĕççем йăлана çĕнетсе урăхлатма, ĕçхĕрарăмĕсене чăннипе пурăнăçра ирĕке кăларма, çемье пурăнăçне тĕрĕс йĕркелесе яма кирлĕскерсем, тесе шутлать.

Çав закон пысăк вырăн йышăнса тăнине кура, шăпах çавăнпа, çирĕплетиччен малтан, ăна ĕççыннисене сӳтсе-явтарма, шутланă.

Çапла сӳтсе-явни питĕ пысăк вырăн йышăнать. Пĕрремĕшĕнчен, декрет проектне пĕтĕм халăх сӳтсе-явни халăхăн тимлĕхне ун çине пĕтĕçтерчĕ, декрет çинчен халăхăн сарлака масси пĕлет ĕнтĕ. Ун çинчен кашни харпăр-хăй шухăшне каларĕ. Паллах, декрета хăшпĕр сĕнӳсене, чи пахисене, чи кирлисене çеç кĕртме май пулнă.

Анчах та декрета сӳтсе-явнă чухне питĕ паха ыйтусем сике-сике тухрĕç, вĕсене татса пани декрета тĕрĕс пурнăçлама пулăшать.

Наркомюст, Наркомздрав тата Наркомпрос работникĕсен çак закона чăнахах советла, Ленин шутланă пек, Сталин ыйтнă пек пурăнăçлама ĕççыннисем панă сĕнӳсене темиçе хут та вуласа тухас пулать.

Декрета çапла пĕтĕм халăхпа сӳтсе-явни, ăна тĕрĕс пурăнăçа кĕртме май парать. *Декрета çапла пĕтĕм халăхпа сӳтсе-явни обществăллă сыхăлăха мобилизацилет, çак ĕçе пурăнăçлас тĕлĕшпе обществăллă контроле йĕркелесе яма пулăшать.*

*Декрета çапла пĕтĕм халăхпа сӳтсе-явни массăна ертсе пырас ĕçе вĕрентет.* Ертсе пырас тесен, *ĕçе пĕлес пулать.* Декрета сӳтсе-явни çав пĕлĕве илме пулăшать, декрета чĕрĕ, конкретлă содержанилĕ тăвать. Декрета сӳтсе-явни ĕççыннисен пурăнăçĕсемпе йăлисем çинчен нумай тата конкретлă материалсем пухма май пачĕ. Халĕ ĕнтĕ Советсен секцийĕсем, секцисен бюроне шанса лармасăрах, йăлана çĕнетсе урăхлатас ĕçе тытăнма пултараççĕ. Советсенчи секцисен ĕçĕсем ĕнтĕ йăлана çĕнетсе урăхлатас тĕлĕшпе анлăрах та тарăнтарах пулса пыма пуçлĕç.

Декретпа татса панă ыйтусем кашни çемьене питĕ çывăх пырса тивеççĕ, уйрăмах хĕрарăмсене хытă хумхантараççĕ.

Декрета сӳтсе-явнă çĕрте хĕрарăмсем уйрăмах активлăн хутшăнчĕç, çакă ĕнтĕ, паллах, питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пурте пĕлеççĕ, хĕрарăма ирĕке кăларас ĕçе, унăн ăстăнне хă-

партассине, ăна общественлă ĕçе хутшăнтарса пырассине Ленин мĕнле пысăк вырăна хунă.

Çав енĕпе яланах пысăк ĕç туса пынă.

Вунă çул каялла государство ача çурчĕсем, яслисем, ача сачĕсем валли хальхи чухлĕ тăкак тумл пултарнă-и? Вунă çул каялла декрета хальхи пек анлăн сӳтсе-явма тата сӳтсе-явнă çĕре яла хутшăнтарма май килнĕ-и, ун чухне хресчен хĕрарăмĕн сасси хальхи пек хытă янтрама пултараччĕ-и?

Уйрăмăнах абортсем çинчен çырнă пункт тăрăх хĕрӳллĕ сӳтсе-яврĕç.

Абортсем тума 1920 çулта ирĕк панă пулнă. Хамăн ĕлĕк çырнă статьясене пăхса тухнă май, эпĕ вĕсем хушшинчен аборт ыйтăвĕсем çинчен çырнă пĕр статья тупрăм. Вăл статьяна 1920 çулта „Коммунистка“ журналăн 1—2 №-че пичетленĕ пулнă. Ăна эпĕ: „Война и деторождение“ тесе ят панăччĕ.

„Вăрçă,—тесе çырнă эпĕ унта,—çĕршыва пĕтĕмпех чухăнлатрĕ, çаратрĕ. *Чухăнлăх вăл, правила пекех, çынсен хутшăнăвĕсене пытармалли масар пекех пулса тăрать.* Чухăнлăх вăл сутăнма ирĕксĕрлет, хăйĕн ӳт-пĕвĕпе суту-илӳ тăвакан проституткăна мар, а çемье амăшне час-часах хăйĕн ачисемшĕн, вата амăшĕшĕн сутăнма ирĕксĕрлет“.

Совет законĕ арлă-арăмлă пурăнăçăн характерне улăштарчĕ. Анчах граждан вăрçи вăхăчĕ, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçкаласа çӳрени, ĕмĕр тăрпшипе çирĕпленсе пынă пурăнăç йĕркине ватни—çаксем пурте арлă-арăмлă пурăнăçа çирĕп мар тунă.

Арлă-арăмлă пурăнăç çирĕп марри тата йывăр пурăнăç: граждан вăрçи, апат-çимĕç çителĕксĕр пулни, çĕршыв ишĕлни çакăн патне илсе пынă: нумай чухне ачана пăхса ӳстерес йывăрлăха амăшĕн кăна тӳсмелле пулнă.

„Ача çуратса, ăна пăхса, тăрантарса нушаланакан хĕрарăма мĕнпе пулăшмалла?—тесе çырнăччĕ эпĕ çав статьяра.—Ответ уçăмлă,—государство хăй çине амăшĕпе ачине сыхлама кăна мар илме кирлĕ, вăл хĕрарăмсемшĕн йывăр çын вăхăтра, çуратас умĕн тата çуратнă хыççăн çеç тăрăшмалла мар, унăн ачасем валли ача яслисем, ача сачĕсем, ача колонийĕсем тата ача общежитийĕсем вуншар пин тумалла, ачасем унта вара лайăх апат çисе пурăнччăр, пăхса усраччăр, вĕрентчĕр вĕсене. Вĕсем унта чи тăрăшакан амăшĕ хăйне тĕллĕн тăрăшса пăхса тăрантарса усранинчен вунă хут лайăх пурăнччăр“.

Ĕлĕкхи ача çурчĕсене, ачана амăшĕнчен ĕмĕрлĕхех уйăраканскерсене, Совет влаçĕ пĕтерчĕ, вăл революциччен пулнă „ангелсен фабрикисене“, чăннипе каласан, ачасене вăрттăн вĕлерсе пурăнаканскерсене тĕп турĕ, çаксем вырăнне вăл ача çурчĕсем, ача сачĕсем, ача яслисем уçрĕ; çапах çаксем вĕсем ун чухне тинĕсри тумлам пек кăна пулнă-ха.

Ялта уйрăмах йывăр пулнă, унта кулаксем яслине хирĕç вăйлă агитациленĕ. 1919 çулта эпир хĕрессемпе алă пуснă ыйтусем те илнĕ, унта вара вĕсем: ачасене яслине ан илĕр, вĕсене аш-

шĕ-амăшĕсенчен ĕмĕрлĕхех ан уйăрăр, тесе ыйтнă. Ун чухне ача çурчĕсем час-часах çаван пек учрежденисем пулса кайнă: вĕсенче ачасем хăйсемех „воспитательсем“ пулнă, анчах „воспитательсем“ педагогика, ачасене воспитани парас тата вĕрентес тĕлĕшпе нимĕн чухлĕ те пĕлмен.

Çапла вара 1920 çулта абортсем çинчен ыйту çивĕч тухса тăнă. Унччен закон тăрăх аборт тунăшăн айăплатнă. Анчах та айăпласса аборт тума ирĕксĕрлекенсене мар, вăрттăн гигиенăна пăхăнмасăр, хĕрарăмсене нумай вăхăтлăха халсăр хăваракан майсемпе аборт тутаракансене мар, аборт тăвакан хĕрарăма хăйне айăпланă. Эпĕ ун чухне çапла çырнă:

„Абортсемпе абортсем тăвакан амăшĕсене, вилĕм хăрушлăхне пĕлетăркачах абортсем тума килĕшекенскерсене, айăпланипе мар кĕрешмелле, хĕрарăмсене абортсем тума ирĕксĕрлекен социальнăй сăлтавсене пĕтерес енĕпе кĕрешсе пымалла.

...Паллах, аборт тунăшăн айăпламалла мар туни, хĕрарăмăн аборт хыççăнхи йывăр шухăшне сирсе яма пултараймасть. Хĕрарăмăн пĕтĕм организмĕ ача çуратма майлашăннă тес пулать, унăн организмĕ ĕнтĕ çири ачана тăрантарса усрама майлашăнма пуçланă, çак процеса аборт туса вăхăтсăр пĕтерсен, паллах, хĕрарăм айăп тунине хăех туять.

Хĕрарăма аборт туса ирĕке тухма мĕн тери хаклă ларнине ăнланас тесен, аборт тунă хĕрарăм çине пăхăр çеç, эсир вара вăл хытă куляннине тата час-часах хумханнине сисетĕр.

Работницăпа унăн лайăх мар пурăнăçĕ çеç ачасăр пулма ирĕксĕрлет.

Пурăнăçăн пĕтĕмĕш условийĕсене, уйрăмах амăшĕсемпе ачисене упраса усрассине тата ачасене обществăллă воспитани парассине лайăхлатни çакă тĕп сăлтава, хальхи минутра хĕрарăма аборт туса хăйĕн естествăллă инстинктне хĕсĕрлеме хĕтĕртекенскерне, пĕтерсе хурать.

Кам çак ачасене вĕлерни, абортсем туни тата хырăм юласран сыхланмалли япаласем çинчен тăракан киревсĕр ыйтусем кун йĕркинчен чăн-чăнах тухса ӳкчĕр тет, унăн çĕнĕ пурăнăç тунă çĕрте ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле, унта вара материнство хăйне кирлĕ пек вырăн йышăнĕ“.

Çак статьяна çырни 15 çул иртрĕ. Халĕ ĕнтĕ абортсем çинчен ыйту çĕнĕллс тăрать. Çĕршыв пирĕн пуянланчĕ, вăйланчĕ. Халăхсен культурипе ăстăнĕ хăпарчĕ. Хĕрарăм колхозра вăй пулса тăчĕ, вăл общественница пулчĕ. Хĕрарăмсем хушшинче стахановкăсем нумайланчĕç, вĕсем çине тăрсах вĕренеççĕ.

Партипе правительство ачасене обществăллă ĕçре ĕçлеме май туса палăççĕ, вĕсене валли телейлĕ ачалăх туса панă. Ахальтен мар ĕнтĕ миллионлă ĕçхĕрарăмĕ Сталина çав тери хытă юратать—кураççĕ вĕсем Сталин ĕçхĕрарăмĕшĕн тăрăшнине.

Çĕнĕ пурăнăçра çемье çинчен те, абортсем çинчен те ыйту çĕнĕлле тухса тăчĕ. Халĕ кăларнă декрет йăла условисене çĕнет-

се урăхлатас çĕрте ытла пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Декрета пурăнăçлас тĕлĕшпе ĕçе анлăрах сарса ярас пулать, ача сачĕсен, яслисен, ача çуратмалли çуртсен ĕçĕсене пахалăхлă туса пырассишĕн кĕрешес пулать.

Комсомол умĕнче ытти паллă задачăсемпе пĕрлех ак çакăн пек задача та тăрать, вăл—хĕрарăмсене ирĕке кăларас ĕçе, пирĕн коммунистсен партийĕ çав тери тăрăшса туса пыраканскере, вĕçне çитиччenех туса çитересси пулать.

Хĕрарăмсене ирĕке кăларас енĕпе тунă ўсĕмсем çинчен тата хĕрарăмсен ăстăнне хăпартас тĕлĕшпе тунă ўсĕмсем çинчен чарăнса тăма та кирлĕ мар. Вĕсем пурне те паллă.

Ку статьяра эпĕ хăшпĕр конкретлă задачăсем, комсомол умĕнче, çавăн пекех комсомолкăсен активĕ умĕнче те тăракан задачăсем çинче чарăнса тăрасшăн.

Комсомолкăсен активĕн хулари тата ялти хĕрачасене хăйĕн хыççăн илсе пымалла: çакна унăн пĕр минутлăха та манса каймалла юрамасть. Пирĕн комсомолкăсен активĕ питĕ паха, анчах хĕрачасен массине пĕтĕмĕшпе илсе пăхсан, пурăнăçра тата йăлара ĕлĕкхи пурăнăçран юлнă юлашкисене нумай куратпăр. Кунта пирĕн ĕçлемелле.

Ĕлĕкхи пурăнăçăн юлашкийĕсенчен пĕрийĕ вăл—хĕрарăмсем культура фронтĕнче кая юлни. Çакă хĕрарăма, хĕрачана вĕсен пурăнăçĕнче, обществăллă ĕçĕнче питĕ хытă чăрмантарать.

Обязательнăй йĕркепе пурне те хутла вĕрентмелле туни, кунта питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакă епле пурăнăçа кĕрсе пынине астăвас пулать: тĕрлĕ сăлтавсем тупса хĕрачасене вĕренме кайма ан чарччăр, килте нумай ĕç хушса урока хатĕрленме ан кансĕрлеччĕр т. ыт. те.

Анчах ыйту кунта хĕрачасем çинчен çеç мар тăрать,—вĕсем ĕлĕкхипе танлаштарсан тем тери лайăх условисенче пурăнаççĕ ĕнтĕ.

Ыйту кунта çамрăк хĕрарăмсене, уйрăмах ялти хĕрарăмсене вĕрентес тĕлĕшпе çивĕч тăрать.

Ильичăн: пурин те государствăна ертсе пыма пĕлмелле, тенĕ сăмахĕсене кашни хĕрача пĕлет, анчах государствăна ертсе пыма пĕлес тесен, вĕренес тата пултарас пулать вĕт, ĕлĕкхинчен нумай пĕлекен пулас пулать.

Хутла пĕлменлĕхе тĕп тăвас пулать. Çапах та çырма, вулăма пĕлни çеç массăсен кăмăлне тултарма пултараймасть ĕнтĕ. Пирĕн Совет çĕршывĕнчи хуçалăхлă тата обществăллă пурăнăç çакăн пек шайра тăнă чухне массăсене çавăн пек пĕлў, харпăрхăй тĕллĕн ĕçлеме тата квалификацие хăпартма çул уçса паракан пĕлў кирлĕ.

Социализмлă шултра производство, ялхуçалăхне коллективизацилени тата государствăн планла хуçалăхĕ ĕççыннисене пысăк культурăллă пулма хушаççĕ, миллион ĕççыннисене—социализм строительствине активлă хутшăнса ĕçлекенсене—нумай пĕлекен

пулма хушаççĕ. Халĕ ĕнтĕ хутла сахал пĕлнине анлăн ăнланмалла. Кам географие, этемлĕх аталанăвĕн тĕп этапĕсене пĕлмест, природăри явленисене тавçăрса илеймест, таврари пурăнăç синчен шухăшласа пăхса ăнланса илме пĕлмест, ĕçлеве тата йăлана çĕнетсе урăхлатас çĕрте наукăпа епле усă курмаллине ăнланса илмест тата хăйне кирлĕ пĕлĕве епле тата ăçтан илмеллине пĕлмест çавă—хутла сахал пĕлекен çын шутланать.

Комсомолăн çитĕннисен шкул системине нумайлатассишĕн кĕрешмелле. Комсомолăн: çитĕннисен шкулĕсем пĕтĕм çамрăка вĕрентчĕр тесе тăрăшмалла.

Уйрăмах пачах хутла пĕлмен е сахал пĕлекен çамрăксене вĕрентме тăрăшмалла. Пĕтĕм çамрăкăн, уйрăмах хĕрачасемпе колхоз çамрăкĕсен пĕлĕвĕ 7 çул хушши вĕреннĕ чухлĕ пулмалла. Ĕç пысăк та сер'езнăй.

Шкула вăхăтра лекеймен подросткăсене вĕрентме тăрăшмалла. Переросткăсемпе ĕçлесси çине те тимлĕн пăхмалла. Ун пеккисем хĕрсем хушшинче нумай. Вĕсем хушшинче ĕçлесси питĕ кирлĕ.

Çĕнелсе урăхланса пыракан пурăнăç çемье çинчен те, арăмĕпе упăшки, ашшĕ-амăшĕсемпе ачисем хушшинчи çыхăнăвĕсем çинчен те, çитĕнсе пыракан ăрăва воспитани парасси çинчен те пирĕн ума пысăк ыйту кăларса тăратрĕ.

Ку ыйтăва коммунистла моралĕн никĕсĕ çинче кăна тĕрĕс татса пама пулать. Кунта пысăк йывăрлăхсем пур, чи йывăрри—ĕлĕкхи кивĕ шухăшсем çĕнĕ, модăллă тумтирсем тăхăнни. Кунта пысăк сыхăлăх кирлĕ. Пуринчен ытла вакхарпăрлăхлă моральпе, çемье çине тата ачасене воспитани парасси çине вакхарпăрлăхлă шухăшпа пăхнине хирĕç кĕрешсе пымалла.

Маркспа Энгельс çапла çырнă: пролетариат хушшинче кăна арлă-арăмлă пурăнăçăн çĕнĕ формисем шăтса тухма пултараççĕ, арлă-арăмлă пурăнăç вара расчет çинче мар, пĕр-пĕрне юратса килĕштернĕ, пĕр-пĕрне шаннă, пĕр пек шухăшлă пулнă никĕс çинче тăракан пулать, тенĕ.

Совет çĕршывĕнче çапла хĕрарăмсене ĕлĕкхи йывăр арлă-арăмлă пурăнăçран хăтаракан условисене туса хунă.

Анчах çапах та кивĕ йăласен юлашкисем пур-ха. Вакхарпăрлăхлă психологи тĕрлĕ шăтăк-çурăкран час-часах кĕрсе кайма хăтланать.

Ялти обществăллă пурăнăçран татăлса харпăр-хăй тĕллĕн пурăнакан вакхарпăрлăхлă пĕччен хуçалăхсем пуçпулса тăнă чухне ĕлĕкхи кивĕ йăлан юлашкийĕсем нумайччен тытăнса тăнă, питĕ вăрах пĕтсе пынă вĕсем. Ялхуçалăхне коллективизацилени тата ĕçлеве организацилесси улшăнни хĕрарăмсене ирĕке кăларчĕ. Хĕрарăм колхозра вăй пулса тăчĕ, çакă вара арăмĕпе упăшки хушшинчи çыхăнăва та урăхлатрĕ; çемьеллĕ пурăнăç тĕпренех улшăнма пуçларĕ.

Пирĕн çĕршывра социализм тунă ĕнтĕ, ĕççыннисен ăстăнĕ кунпа мар, сехетпе ÿссе пырать. Парти, комсомол, профсоюзсем, советсем пĕтĕм халăхăн культурине хăпартасшăн тăрăшаççĕ. Пурăнăçа çĕнетсе йăла укладне урăхлатма кирлисене пурне те туса çитернĕ: пурăнмалли условисем лайăхланса пыраççĕ, столовăйсен, яслисен, ача сачĕсен, клубсен, культурăпа кану паркĕсен т. ыт. хисепĕ ÿссех пырать.

Çавăнпа та çĕнĕ çемье формисем, пĕр-пĕрне шанса пурăнас, юратса пурăнас, шухăш енчен пĕр-пĕрне çывăх тăрас никĕс çинче тăраканскерсем, куллен кун çирĕпленсе пыраççĕ.

Юлашкинчен тата воспитани парас ыйту.

Хĕрарăм вăл—хальхи е пулас амăшĕ. Унра амăшĕн инстинкчĕсем вăйлă. Çав амăшĕн инстинкчĕсем те—пысăк вăй, вĕсем амăшне хытă хаваслантараççĕ.

Амăшĕ вăл— яланхи воспитательница. Амăшĕ вăл хăйĕн ачисене, уйрăмах пĕчĕккисене пысăк влияни парать. Эпир пĕлетпĕр, малтанхи кунçулсем пулас этемĕн пĕтĕм характерĕнче, унăн аталанăвĕнче паллă пулса юлаççĕ. Пĕтĕм ыйту кунта—ачана мĕнле воспитани парассинче.

Марксизм основоположникĕсенчен пĕрийĕ, Маркс тусĕ тата единомышленникĕ—Фридрих Энгельс çапла çырнă: эпир, çĕнĕ вăхăтăн ачисем, кĕрешекен идейăсем чăн-чăнскерсем пулсан, çак вăхăт çитесси ĕнтĕ инçех те юлман: ун чухне вара хĕрарăмсен чĕрисем ун чухнехи шухăшăн идеалĕшĕн, халь ашшĕсен тĕнĕшĕн тапнă пекех, хĕрÿллĕ тапĕç,— çавăн чухне çеç çĕннийĕ çĕнтерĕ, ун чухне вара çамрăк ăру çав çĕннине амăш сĕчĕпе пĕрле ăнланса илсе пырĕ, тенĕ.

Халĕ пирĕн работницăсем тата пирĕн колхозницăсем çине пăхатăн та куратăн: вĕсен чĕрисем социализмшăн, Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕсене пурăнăçлассишĕн епле хĕрÿллĕ тапаççĕ, çакă ĕнтĕ çитĕнекен ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Маркс та, Энгельс та, Ленин та, Сталин та воспитани парас ыйтусем çине питĕ тимлĕ пăхнă. Пирĕн шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсем, пирĕн совет шкулĕ ачасенчен çĕнĕ çынсем—социализм строителĕсем тума мĕнлерех воспитани памалли çинчен амăшĕсене тĕслĕх кăтартса паракансем пулмалла. Ачасене шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсемпе шкулсем паракан обществăллă воспитанине çемьере амăшĕн чĕри социализмшăн хĕрÿллĕ тапнă чухне паракан воспитанипе пĕрле çыхăнтарни этемĕн чаплă аруке тăвать. Пĕтĕм комсомол пекех, комсомолри хĕрарăмсен те, çак енĕпе ĕçе анлăн туса пырасси пулать.

## СТАЛИНЛА КОНСТИТУЦИ ЯЛАВĔ АЙĔНЧЕ[1]

Социализмшăн кĕрешсе тунă çитĕнусем Карл Маркс вĕрентĕвне кашни утăмрах çирĕплетсе тăраççĕ.

[1]) „Комсомальская правда" хаçатра 1937ç. мартăн 8-мĕшĕнче пичетленее тухнă.

Çулӑмлӑ коммунистка Клара Цеткин, хăйĕн пурӑнӑçне рабочи класс ĕçĕшĕн панӑскер, хĕрарӑмсен движенине аталантарасси-шĕн çав тери нумай ĕçленĕскер, „Хĕрарӑмсен движенийĕ Карл Маркса мĕнпе обязано“ ятлӑ статья çырнӑ. Çавӑнта вӑл, Маркс хĕрарӑмсен „пролетарилле движенине рабочисен социализмлӑ движенипе, пролетариатӑн революцилле класлӑ кĕрешĕвĕпе таччӑн çыхӑнтарнӑ“,—тесе çырнӑ. „Çакӑнпа вӑл пирĕн кĕрешĕве уçӑмлӑ, аслӑ тĕл кӑтартса панӑ. „Капиталра“ эпир хĕрарӑмсен ĕçлевне, ĕçлеве законпа сыхласси тата работницӑсен положенийĕ çинчен кӑтартса панисене, сведенисене тата фактсене тем чул тĕл пулатпӑр. Çакӑ вӑл пирĕн аслӑ тĕллевшĕн—социализмшӑн пыракан кĕрешӳ валли илсе пĕтермелле мар пуянлӑх пулса тӑрать. Маркс пире кулленхи пĕчĕк ĕçсене, тем пекех кирлĕскерсене, вĕсемсĕр пролетаркӑсен кĕрешӳри пултарулӑхне хӑпартма пултармалла марскерсене, тĕрĕс ӑнланса илме, тĕрĕс хак пама вĕрентет“.

Клара Цеткин çырнӑ статьясене вуласассӑн çакна питĕ хытӑ туятӑн: унӑн çулӑмлӑ чĕри капитализма каялла тавӑрса килме тĕллев лартакансене, троцкистла-бухаринла бандӑсене, шпионсене, диверсантсене, вредительсене, рабочисен юнне сутса капитализма каялла илсе килме шутланӑскерсене, пирĕн тӑван çĕршыва таткаласа тӑкса тӑшман аллине пама пулнӑскерсене, ĕçхĕрарӑмĕсене çĕнĕрен пусмӑр айне кĕртме шутлаканскерсене тарӑхса, курайманлӑхпа тулса ларнӑ пулĕччĕ. Тата Владимир Ильич пурӑнӑçĕн юлашки кунĕнчи каç аса килчĕ: хĕвеланӑçĕ енчен килекен çутӑра кантӑк умĕнче ларатtӑмӑр, вӑл хушнӑ тӑрӑх эпĕ ӑна çак сӑмахсемпе вĕçленекен сӑвва вуласа патӑм: „Нихӑçан та, нихӑçан та коммунарсем пулмаççĕ чурасем“.

Тĕнчери империализмӑн троцкистла-бухаринла агенчĕсем вӑрçӑ тапратасшӑн. Урса кайнӑ империализма халӑх çирĕп отпор пама пултарнине геройла Испанин примерĕ лайӑх кӑтартса парать. Çирĕп те вӑйлӑ пирĕн Совет Союзĕ. Çирĕп СССР-чи халӑхсен тӑванлӑхĕ, çирĕп вĕсен капиталистла строя курайманлӑхĕ, пирĕн аслӑ тӑван çĕршыв ĕнтĕ культурӑллӑ та организованнӑй пулса тӑчĕ. Капитализм варварсене вӑл, кирлĕ пулсан, çирĕп отпор пама пултарать.

Маркспа Энгельс ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне Ленин никĕс хыврĕ, ĕççыннисен нумай миллионлӑ масси кĕрешнийĕ ĕнтĕ халĕ чӑнахах пурнӑçланчĕ: шултра йывӑр промышленность аталанчĕ, коллективизаци никĕсĕ çинче ял пурӑнӑçĕ йӑлтах çĕнелсе урӑхланчĕ, çĕнĕ культурӑллӑ вӑйсем ӳссе пыраççĕ, этемсен хутшӑнӑвĕ çĕнелсе урӑхланса пырать. 1884 çулта Энгельс „Происхождение семьи, частной собственности и государства“ ятлӑ кĕнеке çырнӑ. Унта вӑл этем обществи аталанӑвĕн историне пӑхса тухса, çемье формисем, çемьери хĕрарӑмсен положенийĕ пур обществӑллӑ укладпа тата государствӑн политикла устройствипе таччӑн çыхӑнса тӑнине кӑтартнӑ. Акӑ ĕнтĕ халĕ социализм пурӑнӑçа кĕнĕ факт пулса тӑнӑ чухне, общество енчен амӑшĕпе ачащӑн тӑрӑшасси

те ӳсре—яслисем, ача сачӗсем, ача ҫуратмалли ҫуртсем нумай ланса пыраҫҫӗ, пысӑк ҫемьеллисене пулӑшу параҫҫӗ.

Мартӑн 8-мӗшӗнче, Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗнче, эпир савӑнса ҫапла калама пултаратпӑр: пирӗн ҫӗршывра Марксӑн—Энгельсӑн—Ленинӑн—Сталинӑн ӗҫӗ ҫӗнтерчӗ. Ҫакна Сталинла Конституци ҫине ҫырса ҫирӗплетнӗ. Эпир пӗлсех тӑратпӑр: нумай ӗҫлемелле-ха пирӗн малалла, туса ҫитерреймен ӗҫсем нумай-ха. Пирӗн социализмлӑ тӑван ҫӗршыва малалла аталанма тата ҫирӗпленсе пыма Сталинла Конституци лайӑх услови туса парать. Парти ертсе пынипе, сарлака халӑх массисем юратакан ҫулпуҫӗ Сталин юлташ ертсе пынипе эпир малалла коммунизм патне тата та тачӑрах пӗрлешсе тата та ҫирӗп утӑмсемпе пыратпӑр.

## СОЦИАЛИЗМ ҪӖРШЫВӖНЧИ ХӖРАРӐМ[1]

Пирӗн халӑх СССР Верховный Советне—государство влаҫӗн аслӑ органне суйлама хатӗрленет. Государство влаҫӗн аслӑ органӗ вара пирӗн тӑван ҫӗршывӑн кунҫулӗ пирки тӑракан чи кирлӗ ыйтусене татса парать. Халӗ СССР Верховный Советне суйлама тӑратнӑ кандидатсен ячӗсемпе вӗсен сӑн ӳкерчӗкӗсене хаҫатсем ҫинче темӗн чухлех курма пулать, ҫавӑн пекех вӗсем мӗнле ҫынсем иккенне ҫутатса параҫҫӗ, вӗсен паха ӗҫӗсем ҫинчен те, мӗншӗн вӗсем суйлавҫӑсемшӗн шанчӑклӑ ҫынсем пулса тӑма пултарнине те ҫыраҫҫӗ.

Ҫакӑн пек ҫынсем вӗсем политикла ҫулпуҫӗсем, наукӑпа искусство деятелӗсем, академиксем, писательсем, паллӑ летчиксем, моряксем, ҫар ҫыннисем кӑна мар, пирӗн ҫӗршыври обществӑпа политика, культура тата хуҫалӑх пурӑнӑҫӗн паллӑ руководителӗсемпе организаторӗсем кӑна мар,—ҫаксен ячӗсем пурне те паллӑ ӗнтӗ. Кандидатсем хушшинче ҫӗнӗ ҫынсем, куллен-кунхи практикла ӗҫре хӑйсен организаторла пултарулӑхне, паттӑрлӑхне палӑртнӑскерсем, социализм строительствин задачисене ӑнланса илнӗскерсем, политикӑна вӗренсе пиҫӗхнӗскерсем нумай.

Кандидатсем хушшинче хӗрарӑмсем те нумай, вӗсем—фабрикӑсемпе заводсенче ӗҫлекен работницӑсем, колхозницӑсем, трактористкӑсем, учительницӑсем, стахановкӑсем, орденоноскӑсем, общественницӑсем тата тӗрлӗ наци хӗрарӑмӗсем. Вӗсен биографине вулатӑн та, вӗсем кӗрешӳре епле ҫитӗнсе ҫирӗпленнине пӗлетӗн.

Сталинла Конституцин 122-мӗш статьи ҫапла калать: „ССР Союзӗнче хӗрарӑма пӗтӗм хуҫалӑх, государство, культура тата обществӑпа политика пурӑнӑҫӗнче арҫынпа пӗртан правӑсем панӑ".

Хӗрарӑмсене пӗртан правӑллӑ тӑвассишӗн марксизм основоположникӗсем—Карл Маркс тата Фридрих Энгельс кӗрешнӗ, Ленин кӗрешнӗ, Сталин кӗрешнӗ тата кӗрешет те, кӗрешет пирӗн пӗтӗм парти. Граждансемпе гражданкӑсене пурне те тивӗҫ,

---
[1] 1937 ҫулхи декабрӗн 5-мӗшӗнче „Правда" хаҫатра пичетленнӗ.

пӗртан тата тӳрех суйламалла право памалла тавасси çинчен партин программи çине, партин иккӗмӗш съездӗнче 1903 çулта йышӑннӑскерӗнче, кӗртнӗ пулнӑ.

Буржуаллӑ çӗршывсенче хӗрарӑмсене закон тӑрӑх та хуть право паман. Японире, Швейцарире, Францире тата Бельгире хӗрарӑмсене суйлав прависӗр хӑварнӑ.

Российӑра царизма сирпӗтсе антарсанах Совет влаçӗ хӗрарӑма арçынпа пӗртан правасем пачӗ. Пирвайхи Советла Конституцине пӗтӗм Российӑри Советсен Пиллӗкмӗш съездӗнче 1918 çулти июлӗн 10-мӗшӗнче йышӑннӑ пулнӑ, унта хӗрарӑмсене суйлав прави ним ограниченисӗрех памалла тунӑ.

1918 çулти ноябрьте партин Центральный Комитечӗ работницӑсен Пӗрремӗш съездне пухнӑ.

Çав съездра Ленин самах тухса каланӑ. Ĕçхӗрарӑмсен пысӑк пайӗ хутшӑнмасӑр социализмла переворот пулма пултараймасть, социализмла уклад кӑна хӗрарӑма пурӑнӑçра (законпа кӑна мар) пӗртан правалла тума пултарать, тенӗ Ленин.

„Хӗрарӑмсен положенийӗ ку таранччинех çапла, чуралӑхра пурӑнать тесе каламалла; хӗрарӑм хӑйӗн хуçалӑхӗпе пусмӑрланнӑ, çакӑнтан ӑна социализм, вак хуçалӑхран шултра хуçалӑха куçса çӗре пӗрле ӗçлеме пуçласан çеç, çӑлма пултарать.

Çавӑн чухне çеç хӗрарӑмсене пачах ирӗке кӑларма пулать“ (*Ленин*, XXIII т., 286 стр.).

Граждан вӑрçи çулӗсем работницӑсен сарлака сийне кӑна мар, хресчен хӗрарӑмӗсен куçӗсене те уçрӗç: кам тӑшман, кам тус иккенне уйӑрса илме пуçларӗç. Граждан вӑрçинче хресчен хӗрарӑмӗсем шуррисене хирӗç хӑйсен ашшӗсемпе, упӑшкисемпе, пиччӗшӗ-шӑлнӗсемпе пӗрле çапӑçнӑ.

Колхоз движенийӗ сарӑлса кайсан, колхозницӑсен вӗренес шухӑшӗ вӑйланчӗ. Вӗсем хӑйсен хутла пӗлменлӗхне пӗтерме тытӑнчӗç. Пӳртсенче алари пӗчӗк ачисемпе пухӑнса ларсах вӗсем букварь çине тинкерчӗç. 1928 çултан пуçласа миллион хресчен хӗрарӑмӗ хут вӗренчӗ.

Акӑ хӗрарӑмсем—ялсовет членӗсем депутатсен хушшинче миçе процент йышӑнса тӑнине кӑтартса паракан таблица:

| | 1926 ç. | 1927 ç. | 1929 ç. | 1931 ç. | 1934 ç. |
|---|---|---|---|---|---|
| Хула совечӗн членӗсем | 18,2 | 19,6 | 21,6 | 25,9 | 30,4 |
| Ялсовет членӗсем | 9,9 | 11,2 | 18,8 | 21,0 | 26,2 |

Куратпӑр ӗнтӗ, хресчен хӗрарӑмӗн правӑсем пулнӑ пулсан та, вӗсемпе вӑл 1926 çулта çителӗксӗр усӑ курнӑ. Колхоз движенийӗ сарӑлса пынӑçемӗн вӑл хулари работницӑсене хуса çитме пуçларӗ.

„Колхозницӑсене хӑйсене илес пулсан,—тет Сталин юлташ,— вӗсен вара колхозсем хӗрарӑмсемшӗн мӗнле вӑй тата мӗнле пӗлтерӗшлӗ пулса тӑнине асра тытас пулать, вӗсем колхозра кӑна арçынпа пӗртан пулма пултарнине асра тытас пулать.

Колхозсемсĕр—танмарлăх, колхозсенче—правасен пĕртанлăхĕ. Колхозница юлташсем çакна асра тытчăр тата колхоз йĕркине вĕсем куç шăрçине сыхланă пекех сыхлаччăр" (Сталин, Вопросы ленинизма, II-мĕш чăвашла издани, 404 стр.).

Колхозницăсем Сталин юлташăн çак сăмаххине лайăх пĕлсе тăраççĕ. Вĕсем колхоз стройне куç шăрçине сыхланă пек сыхлаççĕ.

„Хĕрарăмсен çав прависем пурнăçа кĕресси—хĕрарăма ĕçлев, ĕçукçи тӳлевĕ, канăç, социаллă страховани, вĕренӳ тĕлĕшсемпе арçынпа пĕртан права панипе, амăшĕпе ача интересне государство сыхласа тăнипе, хĕрарăм йывăр çын чухне ĕçукçи тӳлесех отпуск панипе, ача çуратмалли çуртсем, ача яслисемпе садсем нумай уçнипе—пулса пырать" (СССР Конституцин 122-мĕш статьинчен).

122-мĕш статья Сталинла Конституцин содержанипе таччăн сыхăннă. Вăл 118-мĕш статьяпа, социализм çĕнтернĕ çĕршыври гражданcен ĕçлев правийĕ çинчен калаканскерпе, таччăн сыхăннă.

Стахановка-работница, стахановка-колхозница ĕçлев çине укçа ĕçлесе илмелли çăлкуçĕ çине пăхнă пек кăна мар пăхаççĕ, вĕсем ун çине общество пуянлăхне ӳстермелли средство çине пăхнă пек пăхаççĕ.

Социализмлă ăмăрту,—унăн пĕлтерĕшĕ çинчен Ленин Совет влаçĕн малтанхи уйăхĕсенчех çырнă,—юлашки çулсенче анлăн сарăлса кайрĕ. Вăл фабрикăсемпе заводсенче анлăн сарăлчĕ, вăл работницăсенчен социализмла ĕçлевĕн паллă героинисене çуратса кăларать,—вĕсен ĕçне пирĕн чысласçĕ.

Верховный Совета суйланнă работницăсем социализмла хуçалăхшăн хуça пек пулса тăрăшĕç.

Чăн-чăн хуçа пулас тесен, ĕçе пĕлес пулать, ăна ăнланса илес пулать. Пĕлнинче вăй. Эпир совет хĕрарăмĕ вĕренĕве туртăннине куратпăр. Сталинла Конституцин 122-мĕш статьи гражданcен вĕренӳ правийĕ çинчен калакан 121-мĕш статьипе таччăн сыхăнса тăнине вăл ăнланать. Вăл тăрăшсах вĕренет.

Кунсăр пуçне тата вăл—амăшĕ; вăл хăйĕн ачисене вĕрентме те çул уçă пултăр, тет. Кунта вăл парăнас çук. Верховный Совета суйлама пирĕн тăван çĕршывăн пур кĕтессисенче те пĕлĕве тата культурăна çӳлерех те çӳлерех çĕклентерсе пыма пĕтĕм вăйне паракан учительницăсене кандидата тăратнă.

Техникумсенче вĕренекен хĕрарăмсен хисепĕ ӳссех пырать, уйрăмах çак юлашки çулсенче. 1928 çулта техникумсенче пĕтĕмпе те 73,3 пин хĕрарăм çеç вĕреннĕ, 1936 çулта 289 пине çитнĕ. Хĕрачасем медицина, педагогика тата художество техникумĕсенче кăна мар вĕренеççĕ, вĕсенче 1928 çулта та хĕрарăмсем ытларах вĕреннĕ, вĕсем социально-экономически, ялхуçалăх техникумĕсене вĕренме кĕреççĕ, промышленнăй, транспортнăй тата строительнăй техникумсене вĕренме кĕреççĕ, çаксенче 1928 çулта 4,4 пин хĕрарăм вĕреннĕ пулсан, 1936 çулта 59,3 пин вĕреннĕ. 1928 çулта вузсенче 48 пин хĕрарăм вĕреннĕ, 1936 çулта 198,5 пине çитнĕ.

122-мӗш статьяна канӑҫ прави ҫинчен калакан 119-мӗш статьяпа ҫыхӑнтарнӑ. Заводра, колхозра, службӑра ӗҫленисӗр пуҫне хӗрарӑм яланах килте ӗҫленӗ, ҫакӑ вара унӑн вӑхӑтне тата тимлӗхне тултарса лартать. Яслисем тата ача сачӗсем уҫни хӗрарӑмсен ӗҫне ҫӑмӑллатать.

1914 ҫулта ача садне темиҫе пин ача кӑна ҫӳренӗ, 1936 ҫулта —4271 пин. Совет влаҫӗ ҫеҫ хӗрарӑмсене куллен-кунхи вак-тӗвек ӗҫсенчен амӑшӗн савӑнӑҫне пӗтермесӗрех хӑтарма пултарать. Хӑйӗн ачисене тӗрӗс воспитани пама вӗрентес тесен, хӗрарӑмӑн ӗҫлеме кӑна мар, канма та пӗлес пулать.

122-мӗш статья 126-мӗш статьяпа, обществӑллӑ ӗҫсем ҫинчен, СССР гражданӗсен пултарулӑхне анлӑн организацилесси ҫинчен, парти ролӗ ҫинчен калаканскерпе, таччӑн ҫыхӑнса тӑрать. СССР-че совет хӗрарӑмӗ общественница пулса тӑрать, ҫав ӗҫре вӑл ӳсет.

Кучухнехи хӗрарӑмсем ҫӗнӗ пурӑнӑҫ строительствине епле анлӑн хутшӑнса пынине инженерла-техникла работниксен тата начсоставсен арӑмӗсен движенийӗ лайӑх кӑтартса парать.

Мускав Советне суйланӑ май 1920 ҫулти февраль уйӑхӗнче Ленин ҫапла каланӑ:

„Пире хӗрарӑм-работница закон тӑрӑх кӑна мар, пурӑнӑҫра та арҫын-работникпе пӗртан пулни кирлӗ. Ҫавӑ пултӑр тесен хӗрарӑм-работницӑсен обществӑллӑ предприятисемпе тата государствӑпа ертсе пыма ытларах та ытларах хутшӑнса пырас пулать.

Ертсе пырса хӗрарӑмсем хӑвӑрт вӗренеҫҫӗ тата арҫынсене те хуса ҫитеҫҫӗ.

Хӗрарӑм-работницӑсене: коммунисткӑсене те, партире тӑманнисене те совета ытларах суйлӑр. Тӳрӗ, ӗҫе ырӑ кӑмӑлпа, йӗркеллӗ туса пыма пӗлекен работница ҫеҫ пултӑр, партире тӑмасть пулсан та,—суйлӑр ӑна Мускав Советне!

Мускав Советӗнче хӗрарӑмсем-работницӑсем ытларах пулччӑр! Мускав пролетариачӗ ҫакна кӑтартса патӑр: вӑл мӗн ҫӗнтеричченех кӗрешме, ӗлӗкхи танмарлӑхпа, хӗрарӑмсене буржуазилле ним вырӑнне хуманнине хирӗҫ кӗрешме хатӗр тӑрать тата кӗрешет те.

Хӗрарӑмсене ирӗке йӑлтах кӑлармасӑр, пролетариат ирӗклӗхе йӑлтах ҫӗнсе илме пултараймасть“ (*Ленин*, XXV т., 40—41 стр.).

СССР Верховный Советне суйланнӑ совет халӑхӗн лайӑх хӗрӗсем эпир кӗрешсе илнисене лайӑх сыхласа тӑрӗҫ, ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне аталанма, социализмлӑ уклада аталанассине чарса лартма хӑтланакансене хирӗҫ хӗрӳллӗ кӗрешсе пырӗҫ, эксплоататорла строя тата помещиксемпе капиталистсен влаҫне каялла тавӑрса килме тӗллев лартакан троцкистла-бухаринла ирсӗрсене хирӗҫ вӑйлӑ кӗрешсе пырӗҫ.

Пирӗн тӑван ҫӗршыв хӗрарӑмӗ помещиксемпе тата капиталистсемпе кӗрешнӗ, кӗрешнӗ вӑл граждан вӑрҫи фрончӗсенче те, хуҫалӑх тата культура фронтӗнче те. Вӑл пирӗн ӳсӗмсене Верховный Советра та сыхласа тӑма пултарӗ, унта та вӑл коммунизм ялавне ҫӳлӗрен ҫӳле ҫӗклесе пырӗ.

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

Социализм строительствин çулĕсем . . . . . . . . . . . . 4
Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ . . . . . . . . . . . . . . 8
Мартăн 8-мĕш кунĕ тĕлне . . . . . . . . . . . . . . . . 10
Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ . . . . . . . . . . . . . 13
Октябрь уявĕ умĕн . . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Ленин тата ĕçхĕрарăмĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 17
„Хĕрарăм СССР-чи социализм строительствинче“ ятлă брошюрăн умсăмахĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
Колхозсен хĕрарăмсене ирĕке кăларас ĕçри ролĕ . . . . 25
1934 çулхи мартăн 8-мĕшĕ . . . . . . . . . . . . . . . 27
Колхозник-ударниксен II с‘ездĕнче 1935 çулти февралĕн 14-мĕшĕнче калана сăмах . . . . . . . . . . . . . . 30
Пĕтĕм тĕнчери работницăсен кунĕ 25 çул тултарнă тĕле тунă пирĕн ўсĕмсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 33
Çирĕм пилĕк çул . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 35
Аван çакăн пек эпохăра пурăнма . . . . . . . . . . . . 39
Мартăн 8-мĕшĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44
Советла çирĕп çемье . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Сталинла Конституцин ялавĕ айĕнче . . . . . . . . . . 50
Социализм çĕршывĕнчи хĕрарăм . . . . . . . . . . . . . 52

Редактор *В. К. Емелькин.*

Подписано к печати 18/I-1941 г.
НТ 2378. Тираж 2500. Печатных листов 3,5, уч. авт. л. 4,5, кол. зн. в п/л 54000.
г. Чебоксары, „Чувашпромполиграф“. Заказ 653.

Кане 75 пус.